К 8С(Чув)
С 30
20312-чув.

Ю. С. СЕМЕНОВ



# ҪӖРШЫВӐН ХАСТАР АЧИСЕМ

КОНТРОЛЬНЫЙ ЛИСТОК
СРОКОВ ВОЗВРАТА

КНИГА ДОЛЖНА БЫТЬ
ВОЗВРАЩЕНА НЕ ПОЗЖЕ
УКАЗАННОГО ЗДЕСЬ СРОКА

Колич. пред. выдач ____________

...тип. Т. 1 млн. З. 384—74

К 8С(Чув)
С30

ЮРИЙ СЕМЕНОВ

# ÇĔРШЫВĂН ХАСТАР АЧИСЕМ

Чăваш совет поэзийĕнчи сарпа патриотизм теми

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1976

## Кĕнекере пурри

Умĕн калани . . . . . . . . . . 3
Героикăлла поэзин пуçламăш тапхăрĕ (1917—1929) . 6
«Колхоз маттур каччи ут йĕнерлет» (1930—1940) . . 18
«Фашистсене часрах çапса аркатар!» (1941—1945) . . 26
Мир — пурнăçа, вилĕм — вăрçа! (1946—1953) . . . 54
Çĕршывăн хастар ачисем (1953—1975) . . . . 63
Пĕтĕмлетсе калани . . . . . . . . . . 80

Ю. Семенов

С30 Çĕршывăн хастар ачисем.

80с.

Тăван çĕршыва хӳтĕлессине Коммунистсен партийĕ чи кирлĕ ĕçсенчен пĕри тесе шутлать. Ахальтен мар ĕнтĕ чăваш совет поэзийĕнче те çарпа патриотизм темипе çырнă произведенисем пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Хăйĕн очеркĕнче автор чăваш совет поэзийĕнчи асăннă темăпа çырнă сăвăсемпе поэмăсене кĕскен пăхса тухать.

Кĕнекене чăваш литератури вĕрентекенсем, студентсемпе шкул ачисем тата ытти вулакансем валли кăларатпăр.

С(Чув.2)

ПРОВЕРЕНО
2067

**Семенов Юрий Семенович**

**ОТЕЧЕСТВА СЫНЫ**

Критико-библиографический очерк

На чувашском языке

Зав. редакциями *В. О. Максимов.* Редактор *А. Н. Андреев.* Обложка *В. В. Гурина.* Художественный редактор *А. А. Макаров.* Технический редактор *Р. Я. Семенова.* Корректор *Р. И. Крысина.*

НТ 06858. Сдано в набор 3/III-1976 г. Подписано к печати 18/VI-1976 г. Формат 84×108 1/32. Бумага типографская № 2. Физ. печ. л. 2,5. Усл. печ. л. 4,20. Учетно-изд. л. 3,87. Заказ № 817. Тираж 2 000 экз.
Цена 10 коп.
Чувашское книжное издательство, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР. Чебоксары, Канашское шоссе, 13.

20312 - гуа

С $\frac{0722—097}{М 136(03)—76}$ 70—75

©Чувашское книжное издательство, 1976 г.

Республиканская библиотека им. М. Горького Чувашской АССР

## УМĔН КАЛАНИ

Хамăрăн ирĕклĕ çĕршывăмăра тăшмансенчен сыхлассси, хӳтĕлесси — кашни совет çыннин чыслă та хисеплĕ тивĕçĕ. Çакна эпир ăс-хакăлпа ăнланса, чунпа туйса тăратпăр. Мĕншĕн хаклă-ха пирĕншĕн тăван çĕршыв? Мĕншĕн тесен асаттесемпе асаннесем ăна халăх юнне ĕмсе пурăнакан пуянсенчен ĕçхалăхĕ валли туртса илнĕ, хура пĕлĕт пек каплана-каплана килекен хаяр тăшмансенчен алла хĕçпăшал тытса, юн тăкса хӳтĕленĕ. Аттесемпе аннесем те çав сăваплă тивĕçе чыслăн пурнăçланă, иккĕмĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче фашизма хирĕç паттăр кĕрешнĕ, социализмла тăван çĕршыва тăшмансенчен сыхласа хăварнă.

Капитализмла обществăн эксплуататорла тытăмне тăрă шыв çине кăларнă май, Карл Маркспа Фридрих Энгельс капитал пуçпулса тăнă чухне рабочисен тăван çĕршыв пулма пултарайманнине палăртнă. Буржуази ĕçхалăхне пур майсемпе те хĕсĕрлет. Апла пулсан, вĕсен шухăш-кăмăлĕ класс тĕлĕшĕнчен пĕр килмест. Влаçа хăй аллине илнĕ ĕçхалăхĕ вара тăван çĕршывне тупать, чи тĕрĕс обществăлла строй туса, ăна аталантарма, çав хушăрах шалти тата тулашри тăшмансенчен хӳтĕлеме тытăнать. Çапла вара, тăван çĕршыва сыхласси коммунизм тăвас аслă та пархатарлă ĕçĕн уйрăлми пайĕ пулса тăрать.

Социализмла тăван çĕршыва тăшмансенчен хӳтĕлессыйтăва ĕçхалăхĕн аслă çулпуçĕ В. И. Ленин татса панă. Хăй пурăннă тапхăра тĕплĕн тĕпчесе вĕренсе, вăл капитализм стройĕ империализм вăхăтĕнче сикчĕллĕн аталанса пырассине, çав хушăрах темиçе е уйрăм çĕршывра социализм çĕнтерме пултарассине татăклăн çирĕплетсе панă. Икĕ тĕрлĕ тытăмлă патшалăхсем хушшинче

çивчĕ хирĕçÿсем те сиксе тухма пултараççĕ. Акă мĕн çырнă ку тĕлĕшпе В. И. Ленин хăйĕн «Военная программа пролетарской революции» статйинче: «Это должно вызвать не только трения, но и прямое стремление буржуазии других стран к разгрому победоносного пролетариата социалистического государства. В этих случаях война с нашей стороны была бы законной и справедливой. Это была бы война за социализм, за освобождение других народов от буржуазии» [1].

Пурнăç çак сăмахсен тĕрĕслĕхне лайăх çирĕплетсе пачĕ.

Октябрьти социализмлă Аслă революци çĕнтерсен, тăван çĕршыва тăшмансенчен хÿтĕлес ыйту çивĕччĕн тухса тăнă. В. И. Ленин, халăх умĕнчи çул-йĕре витĕр курса тăраканскер, çав кунсенче çапла çырнă: «Мы—оборонцы теперь, с 25 октября 1917 г., мы — за защиту Отечества с этого дня... Мы — за защиту Советской социалистической республики России» [2].

Каярахпа В. И. Ленин çĕршыв сыхлăхĕпе хÿтлĕхĕ çинчен вĕрентнине Коммунистсен партийĕ малалла аталантарчĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕн Генеральнăй секретарĕ Л. И. Брежнев юлташ партин XXIV съездне туса панă отчетлă докладра çапла каларĕ: «Пурнăçри опыт çакна тепĕр хут витĕмлĕн кăтартса пачĕ: социализм лагерьне тапăнма, хавшатма хăтланакан, ĕççыннисен социализмлă çĕнтерĕвĕсене сăтăр тума тата пĕтерсе хума тăрăшакан вăйсен çулне социализмлă çĕршывсен тăванла пĕрлĕхĕ пуринчен те шанчăклăн пÿлсе хума пултарать. Социализмлă çĕршывсенчи халăхсем тĕнчене çакна уççăн кăтартса параççĕ: вĕсем революци çĕнтерĕвĕсене никама та памĕç, социализмла çĕршывсен туслă лагерĕн чиккисене никам та пăсма тата пырса тĕкĕнме пултараймĕ» [3].

Çапла, хамăр чикĕсене кирек кам тапăнасран та сыхласа хăварма тата социализм çĕнтерĕвĕсене хÿтĕлеме пирĕн мĕн кирлĕ пурте пур: тÿрĕ кăмăллă мир политики те, çар хăвачĕ те, совет халăхĕн пĕтĕçÿлĕхĕ те. Çакна эпир аван пĕлетпĕр.

Пархатарлă тĕллеве сăмах ăстисем те лайăх ăнла-

---

[1] *В. И. Ленин.* Çырнисен пуххи, 30 т., 133 стр.
[2] *В. И. Ленин.* Çырнисен пуххи, 35 т., 395 стр.
[3] КПСС XXIV съезчĕн материалĕсем, Шупашкар, 1971, 13 стр.

наççĕ, вĕсем хамăрăн тăван çĕршыва чунтан юратма, ăна куç шăрçи пек сыхлама, кирлĕ пулсан, алла хĕçпăшал тытса хӳтĕлеме вĕрентекен, хавхалантаракан произведенисем çыраççĕ. Кунта А. Фадеев, Д. Фурманов, А. Серафимович, А. Гайдар, М. Шолохов, Б Горбатов, Н. Погодин, К. Симонов, А. Сурков, А. Чаковский, О. Гончар, Ю. Збанацкий, В. Быков, В. Астафьев, Ю. Бондарев, С. Орлов тата ытти писательсен кĕнекисене асăнса хăвармалла.

Çарпа патриотизм темипе чăваш совет поэзийĕнче те чи малтанхи çулсенчех лайăх произведенисем çуралчĕç, кайран ку темăпа çырасси аталаннăçемĕн аталанса пычĕ, литературăра ырă традици пулса тăчĕ. Совет халăхĕн вăрçăри паттăрлăхĕ çинчен çырнă произведенисем вара вулакансен юратнă кĕнекисем пулса тăчĕç. Эппин, чăваш литературин аталану çул-йĕрне тĕпчекен-тишкерекенсен ку енĕпе пысăк сăмах хускатма та сăлтав пур. Паллах, асăннă темăпа пирĕн критиксемпе литературоведсем çырман мар, кĕнекесем те, статьясем те нумай пичетленĕ. Совет халăхĕ фашистла Германие çапса аркатнăранпа 30 çул тултарнине палăртма хатĕрленнĕ кунсенче çак ырă туртăм тата ытларах вăй илчĕ. Хаçат-журналсенче вăрçăпа сыхлăх çинчен çырнă произведенисене тишкерекен статьясемпе рецензисем нумай çапăнчĕç. Çапах та поэзири çарпа патриотизм темине тĕпчев ĕçĕн шăнăрĕ туса чăваш совет литературин пуçламăш тапхăрĕнчен тытăнса паянхи кунсем таранччен тĕпченĕ ĕçсем нумаях мар-ха. Автор çак ĕçре чăваш поэзийĕнче çарпа патриотизм теми мĕнле вырăн йышăнса тăнине кăтартасшăн, паллăрах произведенисем çинче чарăнса тăрасшăн.

Совет çыннисем тăван çĕршыва тăшмансенчен сыхлас тата хӳтĕлес енĕпе халиччен историре пулман паттăрлăх кăтартрĕç. Эппин, çав паттăр халăха сăнлакан, çамрăксене аслă ăрусен революцилле традицийĕсем тăрăх коммунизмла воспитани паракан произведенисем çинчен калаçни вырăнлă та усăллă пулĕ.

# ГЕРОИКĂЛЛА ПОЭЗИН ПУÇЛАМĂШ ТАПХĂРĔ

(1917—1929)

Октябрьти социализмлă Аслă революци чăваш халăхĕн пурнăçне пур енчен те çĕнĕ сывлăш кĕртет. Кивĕ йĕркесене тĕпренех аркатни халăха çутта тухма пулăшать. Революци хыççăнхи пĕрремĕш çулсенчех чăваш халăхĕн хутпĕлменлĕхĕ чылай чакать. Ку пулăма ăнкарса илме йывăр мар. Коммунистсен партийĕпе совет правительстви, ленинла наци политикине çирĕп тытса пырса, вак халăхсене çутта кăларас енĕпе пурне те тунă. Тĕрлĕрен тӳре-шарасенчен ĕмĕр тăршшĕпе те пĕр ăшă сăмах илтсе курман чухăнсем вара, самана тӳпине чăнчăн телей хĕвелĕ тухнине ăнланса илсе, пĕтĕм чун хавалĕпе çутталла туртăннă. Вĕсем общество пурнăçне хастар хутшăннă, вĕреннĕ.

Паллах, ку ĕçре вĕсене чăвашла тухса тăракан хаçатсемпе литература журналĕсем нумай пулăшнă. 1918 çулхи февралĕн 28-мĕшĕнче, сăмахран, Хусанта «Канаш» хаçат — чăваш ĕççыннисен совет саманинчи пĕрремĕш хаçачĕ — тухма тытăннă. Малтанах ку хаçатпа сулахай эсерсем хуçаланаççĕ, каярахпа кăна, Хусан хулине контрреволюцилле шурă гвардирен тасатсан тата редакцирен эсерсене хăваласа кăларсан, «Канаш» чăн-чăнах коммунистсен партийĕн хаçачĕ пулса тăрать, ĕççыннисен интересĕсене хӳтĕлеме тытăнать.

1918 çулхи сентябрь уйăхĕнче Хусантах тепĕр чăвашла хаçат тухма пуçлать. Ăна Хĕвелтухăç фрончĕн V-мĕш армийĕн политпайĕ çумĕнчи Чăваш уйрăмĕ кăларать. Салтак хаçачĕ «Чухăнсен сасси» ятлă пулнă.

«Большевиксен партийĕ салтаксене воспитани парас, вĕсен дисциплинине çирĕплетес, моральпе политика шайне, социализмлă тăван çĕршыва шалти контрреволюципе ют çĕршыв интервенчĕсенчен хӳтĕлессишĕн тата ирĕклĕхшĕн çапăçас кăмăлне, çавăн пекех вăрçă пĕлĕвне хăпартас ĕçре пичет пысăк вырăнта тăнине яланах асра тытнă,— тесе çырать истори наукисен кандидачĕ А. Изоркин.— «Чухăнсен сасси» — тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн, социализмлă революци çĕнтерĕвĕсене сыхлассишĕн вăрçа çĕкленнĕ чăваш ĕçхалăхĕпе унăн салтакĕсен хаçачĕ — хĕрлĕ армеецсемпе ялти чухăнсем хушшинче пропагандăпа агитаци тата организаторла ĕçсем туса

пынӑ. Хаҫат тӑван чӗлхепе чӑваш халӑхне парти политикипе, ҫӗршыври тата тӗнчери лару-тӑрупа, ҫавӑн пекех паттӑр Хӗрлӗ Ҫар кӗрешӗвӗпе паллаштарнӑ»[1].

Чӑваш чӗлхипе Чӗмпӗрте — «Ҫӗнӗ пурнӑҫ» (каярахпа «Ҫутталла»), 2-мӗш арми политпайӗ ҫумӗнче «Хӗрлӗ салтак», Шупашкарта—«Хресченсен сӑмахӗ» ятлӑ хаҫатсем те тухнӑ.

1919 ҫулта обществӑпа политика, наука тата илемлӗ литература журналӗ «Шурӑмпуҫ» пичетленме тытӑнать. Вӑл халӑх хушшинче ӑслӑлӑх пӗлӗвӗсем сарнипе пӗрлех чӑваш писателӗсен произведенийӗсене те нумай пичетлет, вулакансене вырӑс классикипе те паллаштарать.

«Шурӑмпуҫсӑр» пуҫне ҫав ҫулсенче ытти журналсем те тухнӑ. Уйрӑмах «Сунтал» пӗлтерӗшӗ пирки палӑртса хӑвармалла. 1924 ҫулта тухма пуҫланӑскер, вӑл хӑйӗн пӗрремӗш номерӗнчех С. Элкерӗн «Хурҫӑ карап», П. Хусанкайӑн «Ирӗк тимӗрҫӗ» сӑввисене, Хумма Ҫеменӗн «Пирӗн вӑй, вӑй!» калавне пичетленӗ, ҫапла майпа чӑваш совет литературин пӗрремӗш паха произведенийӗсене халӑх хушшине сарнӑ. «Сунтал» (хальхи «Ялав») вулакансен юратнӑ журналӗ пулса тӑчӗ, унӑн тиражӗ виҫӗ пинрен 60 пине ҫити ӳсрӗ. Унӑн страницисенче романсем, повеҫсем, сӑвӑсемпе поэмӑсем, драмӑлла произведенисем нумай пичетленчӗҫ, асӑннӑ тапхӑрта вӑл чӑваш халӑхне тӗнче, вырӑс тата ытти тӑванла халӑхсен литературипе паллаштарчӗ, калама ҫук пысӑк ӗҫ турӗ. Ахальтен мар ӗнтӗ СССР Верховнӑй Совет Президиумӗ «Ялава» совет литературинчи тава тивӗҫлӗ ӗҫсемшӗн тата ӗҫҫыннисене коммунизмла воспитани пама активлӑ хутшӑннӑшӑн 1974 ҫулхи июлӗн 5-мӗшӗнче «Хисеп Палли» орденпа наградӑларӗ.

Ҫапла вара, пичет органӗсем уҫӑлни тӑван литература аталанӑвӗшӗн ҫав тери пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнӑ.

Сӑмахӑмӑр — пӗрремӗш салтак поэчӗсем пирки. «Салтак поэчӗ» тесе пӗр иккӗленмесӗрех каламалла, мӗншӗн тесен вӑл вӑхӑтра пурте тенӗ пекех салтак пулнӑ: Чӑваш ревтрибуналӗн председателӗ Ҫеҫпӗл Мишши революци тӑшманӗсемпе ырми-канми кӗрешнӗ, ҫирӗм тӑваттӑри Николай Патман хӗрлӗ армеецсен батальонӗн командирӗ пулса атакӑна кӗнӗ, Никифор Мранька Кол-

[1] *И. Ахах.* Атьӑр социализмшӑн ҫапӑҫма! 8 стр.

чак ушкӑнӗсене хирӗҫ ҫапӑҫнӑ, вӗресе тӑракан Иоаким Максимов-Кошкинский политика комиссарӗ пулнӑ, ҫамрӑк студент Петр Осипов Хусана шурӑ гвардеецсем тапӑнсан алла хӗҫпӑшал тытнӑ, Степан Лашман салтаксен клубӗн пуҫӗнче тӑнӑ...

Урӑхла май та килмен. 1918 ҫулхи ҫу кунӗсенче чӑваш ҫӗршывӗнче революципе контрреволюци вӑйӗсем хушшинче кӗрешӳ ҫивӗчленсе каять. Хусан шурӑ гвардеецсен аллине кӗрсе ӳкет. Унта та кунта кулаксен пӑлхавӗсем сиксе тухаҫҫӗ. Контрреволюцилле учредиловецсем пуҫӗсене ҫӗклеҫҫӗ. Мускав, Питӗр, Чулхула тата ытти хуласенчи рабочисемпе пӗрле чӑваш хресченӗсем те кӗрешӗве тухаҫҫӗ. Ҫак хӗрӳ тапхӑрта «Хӗрлӗ ялав» ятлӑ сӑвӑ ҫапӑнса тухать.

Хӗвел ҫути айӗнче
Хӗрлӗ ялав хумханать —
Пӗтӗм тӗнче ӗҫҫынне
Вӑл ыйхӑран вӑратать...
Хура тӑшман юнӗпе
Хура тӑпра хӗрелнӗ.
Ирӗклӗхӗн ӗҫӗпе
Пӗтӗм ҫӗршыв пӗрленнӗ...
Хӗрлӗ ялав ӗмӗрех
Хальхи пекех хумханӗ,
Ирӗклӗхри этеме,
Таса ӗҫе вӑй парӗ.
Ҫутӑ хӗвел йӗркипе
Вӗҫӗ хӑйӗн ҫулӗпе,
Пӗр тан этем ӗмӗрех
Ҫухатас ҫук ирӗкне!

Ҫӗршыври ҫӗнӗ улшӑнусене ҫак йӗркесен авторӗ лайӑх курса тӑрать. Хӑй шухӑшне вӑл ӳрӗкӗн-сӳрӗкӗн мар, ҫирӗппӗн, татӑклӑн калать. Эппин, сӑвӑҫ «хӗрлӗ ялав ӗмӗрех хальхи пекех хумханасса» чун-чӗререн ҫирӗп шанса тӑрать, революци ӗҫне хӳтӗлесе хӑвараssишӗн ҫапӑҫма чӗнсе калать.

Ку сӑвва ҫыраканӗ — Георгий Васильевич Зайцев (Тал-Мӑрса). Вӑл 1895 ҫулта хальхи Тутар республикинчи Пӑва районне кӗрекен Пасарлӑ Упире хресчен килйышӗнче ҫуралса ӳснӗ. Хайсен ялӗнчи икӗ класлӑ шкултан вӗренсе тухсан, Чӗмпӗрти чӑваш шкулне кӗнӗ. 1915 ҫулта ӑна вӑрҫа илсе кайнӑ. Фронтран йывӑр аманса таврӑннӑ Тал-Мӑрса ялти шкулта учительте ӗҫленӗ. Октябрь революцийӗ хыҫҫӑн вӑл Хусанти этнографипе

археологи институтне вĕренме кĕнĕ, çав çулсенчех чăваш театрĕнче артист, тăлмачă, режиссер пулса ĕçленĕ. Акă миçе ĕçе харăсах туса пыма пултарнă çĕнĕ пурнăç сывлăшĕпе хавхаланнă чăваш çамрăкĕ!

Питĕ шел, пурнăçа чун-чĕререн юратакан, яланах çутă ĕмĕтпе хавхаланса пурăнакан, ырми-канми ĕçлекен поэт тата драматург 1921 çултах вилсе кайнă.

Тал-Мăрса сăввисенче революци, ирĕклĕх, кĕрешӳ пафосĕ çăлкуç пек тапса тăрать, вулакана хумхантарать, чун-чĕрере патриотла туйăмсем çуратать. «Чухăн халăх юрри» сăвăра вăл çук çынсем хăйсен ăраскалĕшĕн çапăçнине витĕмлĕн, курăмлăн сăнласа парать.

Чухăн çын çапăçать,
Юнне тăкать —
Улпутсен пурнăçне
Çĕмĕрет.
Çиçĕм çиçсе ярать,
Тул çутăлать —
Кăнтăр çути тесе
Калăн çав.
Хĕрлĕ Çар çапăçать,
Тăшман тарать —
Çавраçилсем тесе
Калăн çав.

Ирĕклĕхшĕн пыракан вăрçă ĕçхалăхĕ çĕнтернипе вĕçленмелле,— çакна поэт çирĕп шанать. Вăл граждан вăрçи хыççăн мĕнле пурнăç пулассине те курса-пĕлсе тăрать, çав çутă малашлăх çинчен хавхаланса калаçать.

Курăк-чечек ӳсет,
Шăлт вăрман пек —
Утса пĕр-ик хăлаç
Каяс çук.

Чухăн халăх ĕçлет
Машина пек,—
Ĕçлени харама
Каяс çук.

Харама кайман ĕç пурне те телей кӳмелле, савăнăçла тумалла. Пурин те çак çутă ĕмĕтпе хавхаланса тата тимлĕрех ĕçлемелле, тăрăшмалла.

Ку сăвăра çĕршыври, хамăр тавраri пĕрлешӳллĕ пурнăç уйрăмлăхĕсем çинчен тĕплĕн ăнлантарнă. Анчах Тал-Мăрса кунпа кăна çырлахмасть. Вăл — поэт-интернационалист. Пирĕн хамăр çĕнтернипе, хамăр ирĕке тух-

нипе кăна лăпланса лармалла мар, урăх çĕршывсенчи чухăнсемпе, ĕçхалăхĕпе пĕртăванлă, пĕр шухăшлă пулмалла, вĕсене кĕрешӳре пулăшмалла.

Хамăр вăйпа хамăр
Тунă ĕçе
Вăйлăлатма чунтан
Çунăпăр.

Хамăр пек телейсĕр
Чухăнсене
Ура çине тăма
Пулăшăпăр!

Анчах йĕри-тавра выçă куçлă тăшмансем кашкăрсем пекех улаççĕ, ирĕк халăхăн ăнăçуллă ĕçне ăмсанса пăхаççĕ, майлă самант тупса вăрçăпа килме хатĕрленеççĕ. Эппин, пирĕн, ĕçхалăхĕн, яланах сыхă тăмалла, хаяр тăшманпа çапăçма хатĕр пулмалла.

Калла хура тăшман
Тапрансассăн,
Пирĕн ĕçе пăсма
Çунсассăн,

Юрăсем юрласа,
Штык хăйраса,
Тăшман çине тухса
Кайăпăр!

Çил-тăвăл пек пырса,
Кĕрсе кайса,
Тăшмана çĕмĕрсе
Тăкăпăр.

Савăнса, юрласа
Таврăнăпăр.
Каллех хамăр ĕçе
Пуçлăпăр.

Уйрăм халăхсене
Пĕрле туса,
Тĕнчене коммуна
Çаврăпăр!

Тăшман йăхне ĕмĕр
Ылхан пултăр!
Çав çитес коммуна
Сыв пултăр!

Çапла вĕçлет Тал-Мăрса хăйĕн сăввине. Шухăшлатăн та, поэт пĕтĕм халăхăн пĕр пулса, пĕтĕм вăя хурса тумалли йывăр ĕçсем çине çăмăлраххăн та пăхнăн туйăнать, анчах вăл вăхăтра чухăн çынсемшĕн, нумай вĕренмен хресченсемшĕн çакăн пек уçă та татăклă каланă сăмах кирлех пулнă.

Литературăра çак вăхăтра ĕçленĕ сăвăçсенчен Иван Ахах (Иван Евграфович Ундрицов) тăван çĕршывăн хĕрӳ патриочĕ пулнă, проза, сатира тата поэзи жанрĕсенче тимлĕн ĕçленĕ.

Вăл Чăваш республикинчи Çĕмĕрле районне кĕрекен Уйпуç Ялтра ялĕнче вăтам хресчен килйышĕнче çуралнă. Малтан Юманай Ялтрара, кайран Хĕрлĕ Чутай шкулĕнче вĕреннĕ. 1918 çулта Ахах Хусанта тухса тăнă «Канаш» хаçат редакцине ĕçлеме кĕнĕ. Хусана шуррисем килсен, вăл Хĕрлĕ Çар ретне тăнă.

Унтан Иван Ахах каллех «Канаш» хаçат редакцийĕнче ĕçлет. Коммунистсен партине кĕрет. Çав çул вăл политикăлла статьясем, сăвăсем, калавсем нумай çырать. Хĕрлĕ Çар тăшмансене Çĕпĕрелле хăваласа кайнă май Ахах Пĕкĕлме, Пелепей урлă Ĕпхĕве пырса çитет, çав вырăнсенче чехсен паллă сатирикĕпе Ярослав Гашекпа паллашать.

1919 çулта Ахах йывăр чирлесе ӳкет, ĕçлейми пулса килне таврăнать. Кун хыççăн вăл нумай та пурăнаймасть, 1920 çулхи мартăн 15-мĕшĕнче вилет.

Ахахăн сăввисем нумаях мар, анчах вĕсенче патриотизм витĕрех палăрса тăрать.

Питĕ кансĕр çанталăк...
Çил вĕрнипе юр вĕçет...
Лере, картасем панче,
Пĕр çын такама кĕтет.

Калпак... çĕнĕ шур кĕрĕк...
Аш çăматă уринче.
Патронсемпе çыхнă пилĕк,
Çĕнĕ пăшал аллинче.

Пирĕн хĕрлĕ салтак вăл,
Хуралта иккен тăрать.
Таса, харсăр... Лăпкă вăл.
Шур тăшмансенчен сыхлать,—

тесе çырнă Ахах «Хуралта» сăвăра. Илемлĕх тĕлĕшĕнчен ку сăвва питех çӳллĕ шайра тăрать теме çук, апла пулин

те эпир çамрăк совет çĕршывĕн хуралçин сăнарне аванах куратпăр. Асар-писер çанталăкра, сивĕре часовой тăрать, вăл хăй мĕне сыхланине аван пĕлет. Таса шухăшлă вăйпитти çамрăкăн, поста шур тăшмансем тапăнас пулсан, вĕсене тавăрма лăпкă кăмăлĕпе çĕнĕ пăшалĕ пур. Вăл çапăçура çухалса каяс çук, мĕн куçĕ хупăничченех хăйне шанса панă чыслă ĕçе тăвĕ.

Коммунист-поэтăн «Çуралнă çĕршывра» сăввинче те тăван халăх, тăван çĕршыв çинчен мăнаçланса та савăнса, унăн çутă малашлăхне шанса витĕмлĕ çырнă вырăнсем пур:

Эп çуралнă çĕршывăм,
Ĕмĕр-ĕмĕрĕпелех
Сана тĕттĕм хуплаймĕ,
Сана усал çиеймĕ.

Паллах, парти идейисене ĕненмен, халăх вăй-хăватне шанман çын хăй тĕллĕн шухăшласа çакăн пек татăклă пĕтĕмлетÿсем тăвайман пулĕччĕ.

1919 çулта фронтра та, тылра та «Колчак» ятлă поэма, пысăк тиражпа уйрăммăн пичетлесе кăларнăскер, анлăн сарăлать. Ĕççыннисем ăна пысăк хаваслăхпа кĕтсе илеççĕ, çамрăксем поэмăна инсценировка туса сцена çинче лартаççĕ.

Çак паллă поэма авторĕ Илле Тăхти (Илья Ефимович Ефимов) 1889 çулхи сентябрĕн 4-мĕшĕнче Тăвай районĕнчи Нÿшкассинче çуралнă. 1908 çулта Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарирен вĕренсе тухнă. Ун хыççăн темиçе çул хушши хальхи Элĕк районĕнчи Тавăтри пуçламăш шкулта учитель пулнă. 1918—1919 çулсенче Канашри учительсем хатĕрлекен семинари çумĕнчи кăтартуллă шкулта ĕçленĕ, каярахпа районти çутĕç пайĕн инспекторĕ пулнă. 1925—1928 çулсенче Мускавра В. Я. Брюсов ячĕпе хисепленекен литература институтĕнче тата Государство университетĕнче вĕреннĕ. 1928—1931 çулсенче Шупашкарти педагогика техникумĕнче чăваш чĕлхи вĕрентнĕ.

И. Тăхти нумай пурăнайман. Ӳпке чирĕпе темиçе çул асапланнă хыççăн 1938 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче вăл вăхăтсăр вилсе кайнă.

«Колчак» поэмăна вуланă май эпир чи малтанах унăн чĕлхи витĕмлĕ те сăнарлă пулнине асăрхатпăр. Автор ваттисен сăмахĕсемпе тата каларăшĕсемпе вы-

рăнлă усă курса, çичĕ сыпăклă халăх такмакĕсен виçипе Колчак адмиралĕн, унăн хӳрешкисен, шурă гварди хурахĕсен таса мар ĕçĕсене хĕрӳллĕн питлет, тăрă шыв çине кăларать.

Чĕрĕ юна ĕçмешкĕн
Тискер кайăк кашкăрĕ
Пăрахаймасть, теесçĕ,—
Çавăн пекех Колчак та,
Ĕлĕкхине астуса,
Çӳрет халĕ хĕрĕнсе.
Колчак ĕнтĕ çавăнпа
Пĕтĕм улпут пуххине
Пухнă Çĕпĕр çĕр çине..

Халăх юнне ĕçсе пурăннă пĕтĕм тӳре-шара Колчак патĕнче шампань эрех ĕçет, мухмăрлă пуçпа ирĕклĕхе хĕстерме кавар тăвать. Сĕтел хушшинче канашласа ларакансене сăнласа панă вырăн уйрăмах кăсăклă, унта сăвăç сатирăллă танлаштарусемпе ăнăçлă усă курса çивчĕ карикатурăсем тунă. «Типшĕм питлĕ Колчакĕ» шĕвĕр сăмсаллă, хурчка куçлă, унпа юнашар ларакан пуп вара «ыраш çĕмел пысăкăш тулли питлĕ мăн хырăм, хура риза тăхăнса ылтăн хĕрес çакнăскер — апат тутлă çинипе арман хуçи ĕни пек мăшлаттарса сывласа» ларать. Тепри — «яка пуçлă хĕсĕк куç — пуян тарçи Колчака майпе-майпе илĕртсе, ларать хуçа-усламăç. Урал казак юнĕне чарăнмасăр ĕçекен Дутов ятлă атаман».

Колчак адмирал хăйĕн сăмахĕнче аслă улпут таврашне, превосходи генералсемпе высокороди полковниксене, иртĕхнĕ офицерсене ĕлĕкхи йĕркешĕн çапăçма чĕнсе калать, мĕн кирлине йăлтах пама пулать. Колчак тĕнче буржуазийĕ ячĕпе калаçать:

Советсене çĕнтерме,
Ĕçсыннине хĕстерме
Эсир мана пулăшсан,
Эпĕ сире манас çук.
Акă халĕ Япони
Ылтăн ячĕ ман валли.
Эпĕ сире паянах
Çавă ылтăн укçана
Валеçеп те паратăп.
Франципеле Америк
Кирлĕ-кирлĕ япала
Ялан пире параççĕ,—

тет вăл. Пулăшнăшăн Япони Çĕпĕр çĕрне, унăн пĕтĕм пуянлăхне ĕмĕрлĕхех илесшĕн, Франципеле Америка за-

водсемпе чугун çулсене ыйтаççĕ. Колчак патĕнчи канашлури ăçтиçуксем вара «мĕн ыйтнине памаллах» тесе çухăрашса лараççĕ, пĕрне-пĕри мухтаса куç курми пуличченех ĕçеççĕ. Шурă гварди офицерĕсем — хăравçăсем. Акă мĕн калать артиллерист-офицер:

— Советсемпе вăрçнă чух,
Хресчен салтак пуçтарса
Позицие ярас та
Хамăр çӳрес хыçалтан
Штабсенче те кадрта...

Ку шухăшпа ыттисем те хапăл тусах килĕшеççĕ.

Тарăхса та хурланса
Хура халăх ĕçлетĕр.
Ырă курса, савăнса,
Ĕçсе-çисе юрласа
Ĕмĕр эпĕр пурнăпăр,—

тесе юрлаççĕ ĕмĕр иртĕхсе ашкăнса пурăннă пуянсем. Вĕсем хăйсен ĕмĕт-шухăшĕсемпе пĕлĕте çитиех каппаяççĕ, ĕлĕкхи йĕркене каялла тавăрма шутлаççĕ, анчах çав ĕмĕтсен пуласлăхĕ сывлăш хăмпи пек кăна. Социализмшăн чунне парса çапăçакан халăха кĕрекере шавласа ларнипех çĕнтереймĕн. Хĕрлĕ Çар шуррисене кĕçех тухăçалла хăваласа каясса автор лайăх систерсе хăварнă.

Поэмăра Колчак çумĕнчи çынсен сăнарĕсене аван кăтартнă, терĕмĕр. Пирĕн литературоведенире ун пирки сатирăллă плакат тесе çырни те пур. И. Тăхти хамăрăн пуян чĕлхемĕре, унăн пиçĕлĕхне аван ăнланни, туйни курăнса тăрать. Паллах, çак произведени халăха шурă гвардеецсемпе кĕрешме нумай хавхалантарнă. Шутласа пăхăр-ха: халăх юнне ĕçекен çав ирсĕрсене кам чăтса тăма пултарĕ? Хăйсен ирĕкĕпе çара кайнă чăваш хресченĕсем чун хушнипе салтак кутамкки çакнă. Иккĕленмесĕрех калама пулать: вĕсене çулăмлă çула тухма Тăхти поэзийĕ те хавхалантарнă.

Чăваш совет литературин пуçламăш тапхăрĕнче çавăн пекех Николай Шелепи, Николай Шупуççынни, вĕсемпе пĕрлех Иван Курак, Григорий Алендей, Иван Викторов, Никифор Ваçанкка, Григорий Кели тата ыттисем те хăйсен сăввисемпе халăха Октябрь панă ирĕклĕхе сыхлама, тăван çĕршыва хӳтĕлеме, тăшмансене çĕнтерме, çĕнĕ пурнăç тума чĕннĕ. Халăх вĕсен сăввисене халĕ те пысăка хурса хаклать, юратса вулать.

«Çĕннипе кивви пĕр-пĕрипе хаяррăн кĕрешнине писательсем хире-хирĕçле (контрастлă) сăнарсемпе, картинăсемпе кăтартса параççĕ. Çĕнĕ, революцилле кунçула хавхаланса, хăпартланса йышăнни кивĕ пурнăçа тарăхса хурланипе, çилĕллĕн питленипе пĕтĕçсе тăрать. Пурнăçа çапла контрастлă кăтартса пани революцичченех çырма тытăннă писательсемшĕн те, революци тивлетне пула литература ĕçне пуçăннă çамрăксемшĕн те типлă»[1],— тесе çырнă ку тапхăрти литература пирки М. Сироткин профессор. Малалла вăл ун чухнехи сăнарсем ĕççынnисене социализмлă революци тăшманĕсене хирĕç кĕрешĕве тухма хавхалантарнине палăртнă.

Шăпах çав тапхăрта чăваш поэзийĕн тӳпинче çутă çăлтăр ялкăшма тытăнать. Ку вăл — Çеçпĕл Мишши. Ăна эпир тивĕçлипех чăваш совет поэзине пуçарса яраканĕ тетпĕр.

Çеçпĕл Мишши (Михаил Кузьмич Кузьмин) Канаш районĕнчи Касаккассинче, чухăн хресчен килйышĕнче 1899 çулхи ноябрĕн 16-мĕшĕнче çуралнă. 1911 çулта ялти пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă. Ун хыççăн виçĕ çул хушши Шăхасан вулăс кантурĕнче переписчикре ĕçленĕ. 1914 çулта Шăхасанти икĕ класлă шкулта вĕренме тытăннă. 1917 çулхи кĕркунне поэт Тутар республикинчи Теччĕ хулинчи учительсем хатĕрлекен семинарие кайса кĕнĕ. Кунта вăл икĕ çул вĕреннĕ, çав вăхăтрах ялсенчи çамрăксем хушшинче агитатор пулса ĕçленĕ.

1918 çулхи декабрĕн 15-мĕшĕнче Çеçпĕл Мишшине парти ретне илнĕ. 1919 çул пуçламăшĕнче ăна Мускава пропагандистсемпе агитаторсен виçĕ уйăхлăх курсне вĕренме янă. Унта вăл В. И. Ленина курнă, унăн сăмахне итленĕ.

1919—1920 çулсенче Теччĕ уесĕнче ответлă ĕçсенче пулнă, унтан Çеçпĕле Чăваш область ĕçтăвкомĕн членне суйланă, вăл ревтрибунал председателĕ тата юстици пайĕн пуçлăхĕ пулнă, пĕр хушă кĕнеке кăларакан комиссире ĕçленĕ. Шăмă туберкулезĕпе чирленĕскер, вăл Крыма сывалма кайнă, ун хыççăн Украинăри Остер хулинче Çĕрĕç пайне ĕçлеме кĕнĕ.

Çеçпĕл Мишши 1922 çулхи июнĕн 15-мĕшĕнче вилнĕ.

Çеçпĕл — аслă саманан аслă поэчĕ. Вăл хăйĕн вăхă-

[1] Чăваш совет литератури. Шупашкар, 1972, 33 стр.

чĕ çинчен çапла çырнă: «Революци пурнăçа пур енчен те çĕнĕ сывлăш, чĕрĕ сывлăш кĕртрĕ. Пур ĕçре те чĕрĕлĕх. Чăваш кунçулне çутатмашкăн, чĕрĕ сывлăш вĕрсе кĕртмешкĕн, чăваш поэзийĕ те чĕрĕле пуçларĕ. Хаçатсемпе журналсенче çĕнĕрен çĕнĕ сăвăсем (стихотворенисем) çапăнаççĕ. Ку ĕç — пирĕн Чăваш çĕршывĕшĕн çĕнĕ ĕç. Çул шырас пулать. Тĕрĕс çул тупас пулать...»

Ытахальтен çырман çак сăмахсене поэт. Вăл хăй çав тĕрĕс çула ырми-канми шыранă, революци ыйтакан çĕнĕ содержание юрăхлă çĕнĕ формăсемпе виçесем тупнă.

Çеçпĕл Мишшин хурçă шанчăкпа çырнă хĕрӳллĕ, новаторла сăввисем пирки, вăл чăваш поэзине силлаботоника виçине кĕртни пирки нумай çырнă, нумай ăшă сăмах каланă. Малашне те çырĕç, малашне те калĕç. Вăл ăна тивĕç. Мĕншĕн тесен, Хусанкай каларăш, «революциллĕ ăнтăлупа лирикăлла вĕрилĕх, пысăк шухăшпа асра юлан сăнарлăх, нацилĕхпе интернацилĕх пĕрлешсе поэт пултарулăхне хальхи — пирĕн саманари — кивелми хĕçпăшал туса хураççĕ».

Хăй ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çар ретне тăнăскер, Çеçпĕл салтаксем çинчен те çырнă, вĕсем мĕншĕн çапăçнине, мĕншĕн юн юхтарнине уçăмлăн кăтартнă. Акă «Пурнăçпа вилĕм» сăвă.

Вилнĕ çын тăпри вăл çак тăпра,
Ырă çынни вилнĕ вăрçăра.
Ĕç ачи вăл.. Çĕнĕ пурнăçа
Сыхласа вилнĕ вăл — çапăçса.
Чухăнсемшĕн хăйĕн кунçулне,
Çамрăк ĕмĕрне вăл хĕрхенмен,
Коммунизм хĕрлĕ ялавне
Чун тухиччен çĕре ӳкермен.

«Тăвансене пулăшар» сăвă революциллĕ чĕнӳ пек хăватлăн янăрать:

Васкар, туссемĕр, пулăшмашкăн
Вăйран каян тăвансене.
Юхăннине йăлт юсамашкăн
Халь Хĕрлĕ фронт пире чĕнет.

Çеçпĕле халăх ĕçĕ, халăх шăпи, çĕршыв кунçулĕ канăç паман. Вăл пуласлăха çирĕп шаннă, «çил-тăвăл иртсессĕн йăлтăра çанталăк кăмăллăн та лăпкăн ачашланса» канасса, «ирĕклĕхшĕн вилнĕ тăвансенĕн юнĕ чĕлтĕрти çеçкеллĕ хĕрлĕ чечек» пуласса пĕлсе тăнă, ĕненнĕ.

Халăх хăй телейĕшĕн çапăçса пуç хунă ывăлĕсене нихçан та манмасть, ĕмĕр-ĕмĕр асра тытать. Çав паттăр ывăлсенчен пĕри — Çеçпĕл Мишши. Унăн хăватлă сасси паян кун та Атăл хĕрринчен Днепр çыранне çити революци йыхравĕ пек янăрать:

...Юлташăмсем, тăххăрмĕш хум —
Юлашки хум — çапать хаяррăн!
Тăрсамăр пурте вырăна,
Вăрçма хатĕрленер патваррăн!

Чи юлашки таса вăрçа —
Чăн çутăшăн, таса тĕнчешĕн!
Çав тăххăрмĕш хума ватар!
Васкар телей çĕрне çитмешкĕн!

Патриотизм туйăмĕ — Çеçпĕл поэзийĕн чи паллă енĕсенчен пĕри. Уйрăм çынпа общество пĕрлĕхĕ, çав пĕрлĕхе çапăçура сыхласси, хӳтĕлесси çинчен каланă пархатарлă шухăша эпир кашни сăвăра тенĕ пекех тĕл пулатпăр.

«Çеçпĕл Мишши чăн-чăн патриот, чăваш ĕçхалăхне чунтан-вартан юратакан, ăна пĕр иккĕленми шанакан, ăна чĕртсе хăпартасшăн çунакан пысăк чĕреллĕ çын пулнă. Çавăнпа пĕрлех вăл — çирĕп интернационалист та» [1],— тесе çырать çулăмлă поэт çинчен И. Кузнецов профессор.

Чăнах та, çак шухăша Çеçпĕл поэзийĕ лайăх çирĕплетет. Акă «Иртнĕ самана» сăвă:

Вată аслаçу пӳртне
Йăвантарса яр,
Ĕмĕрлĕх никĕс çине
Çĕнĕ çурт лартар!

Пур чухăнсем тĕнчипе
Вăл çурта тăвар,
Йăлтăр хĕвел çутипе
Тăррине тăрлар!

Кунта автор пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисене пĕр пулма чĕнсе калать, телейлĕ пуласлăха чунтан шанать. Çакнашкал тĕслĕхсем нумай илсе кăтартма пулать.

Пĕтĕмĕшпе каласан, пирĕн çав тапхăрти йыхравлă

[1] *И. Кузнецов.* Çеçпĕл Мишши пултарулăхĕнчи патриотизмпа интернационализм. «Ялав» 1967, 10-мĕш №, 29 стр.



20312 - гуо.
Республиканская библиотека им. М. Горького

поэзи пысăк ĕç тунă, социализм никĕсне хывакансене куллен хавхалантарса пынă.

## «КОЛХОЗ МАТТУР ҪАЧЧИ УТ ЙĔНЕРЛЕТ...»

### (1930—1940)

Вăтăрмĕш çулсем — пĕтĕм совет халăхĕ пĕрремĕш пилĕкçуллăхсенче ырми-канми ĕçленĕ вĕри тапхăр. Ялта та, хулара та, пĕтĕм çĕршывĕпе ударлă ĕç фрончĕ вĕресе тăрать. Кашни совет çынни ирĕклĕ çĕршывшăн, халăхшăн усăллă ĕçсем ытларах тăвасшăн, хăйĕн вăй-халне, пултарулăхне социализм строительствине хывасшăн...

Чăваш республики — пурнăçа çĕнетсе улăштарас енĕпе пыракан социализмла ăмăртура малта пыракансенчен пĕри. Акă мĕнле çырать аслă совет писателĕ Максим Горький хăйĕн пĕр очеркĕнче: «Юмах пекех, анчах та ку — чăн факт. Пушкăртстанпа Узбекистан, сĕм тайгаллă Çĕпĕрпе Карели, молдавансемпе чăвашсем — пурте пĕр сасăпа мăнаçлăн янратаççĕ: çĕнĕ пурнăç хывмашкăн вăрантăмăр, ура çине çĕклентĕмĕр, ĕçлетпĕр, ĕçĕн пысăк пĕлтерĕшне пĕлетпĕр... Совет Союзĕнче рабочисемпе хресченсен влаçĕ, ăстăнĕпе кăмăл хăвачĕ çĕнĕ самана туптаççĕ...» [1]

Чăваш ялĕсенчи уйрăм хуçалăхсем колхозсене кĕреççĕ, 1937 çул тĕлне кашни çĕр кил пуçне çитмĕл тăвата кил пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене çырăннă. Республика индустри çулĕ çине тăнă. Çĕмĕрлере йывăç комбиначĕ, Вăрнарта фосфорит завочĕ, Куславккара çурт-йĕр деталĕсен комбиначĕ тата ытти предприятисем ĕçе кĕреççĕ, Канашра вагонсем юсакан завод тума тытăнаççĕ. Шупашкарта, Çĕрпӳре, Сĕнтĕрвăрринче, Етĕрнере пуянсенчен туртса илнĕ предприятисем çĕнĕлле ĕçлеме тытăнаççĕ. Колхоз уйĕсене пĕрремĕш тракторсем сухалаççĕ; Канашпа Шупашкар хушшинче автобуссем çӳреççĕ...

Республикăн культурăллă пурнăçĕнче те тĕлĕнмелле пысăк улшăнусем пулса иртеççĕ. 1939 çулта тăххăртан пуçласа хĕрĕх тăхăр çула çитнĕ кашни çĕр çынтан тă-

---

[1] *М. Горький.* Собр. соч. в тридцати томах, т. 25, М., 1953, стр. 459—460.

хӑрвун улттӑшӗ хут пӗлекен ҫынсем шутланнӑ, 1940 ҫул тӗлне, 1918 ҫулхипе танлаштарсан, ҫулталӑкне шӑпах вунӑ хут ытларах кӗнеке тухнӑ.

Хуҫалӑхпа культура аталанӑвӗнче, наци кадрӗсем хатӗрлес енӗпе тата ҫул-йӗр ӗҫӗнче пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑшӑн 1935 ҫулта Чӑваш социализмлӑ автономи республикине Ленин орденӗпе наградӑланӑ.

Куҫ умӗнчех улшӑнса, ҫӗнелсе пыракан пурнӑҫ писательсене те ҫунатлантарать, халӑх ӗҫне тивӗҫлӗ произведенисем ҫырассишӗн тӑрӑшма хавхалантарать.

1934 ҫулта, июнӗн 11—13-мӗш кунӗсенче, ҫӗнӗ Союза пӗрлешнӗ чӑваш писателӗсен I съезчӗ, каярахпа, август уйӑхӗнче, Пӗтӗм Союзри писательсен I съезчӗ пулса иртни кашни ҫыравҫӑшӑн пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнӑ. Совет литературинче ҫӗнӗ тапхӑр пуҫланать.

Писательсем хӑйсен произведенийӗсенче социализм обществи тӑвакан ҫынна — халӑх ӗҫӗшӗн тӑракан, ҫӗршывшӑн хыпса ҫунакан этем сӑнарне кӑтартаҫҫӗ. Произведенисен тематики сарӑлнӑҫемӗн сарӑлса пырать. Уйӑп Мишшипе Леонид Агаков Чулхулари автомобиль заводне тӑвакансем ҫинчен, Петӗр Хусанкай Магнитогорск хулине юмахри пек хӑвӑртлӑхпа купалакансем ҫинчен, М. Данилов-Чалтун Ҫӗпӗрти партизансен граждан вӑрҫи вӑхӑтӗнчи паттӑрлӑхӗ ҫинчен ҫыраҫҫӗ.

Социализм строительстви тапхӑрӗнче совет правительстви ҫӗршыва тӑшмансем тапӑнса кӗресрен сыхланас тӗлӗшпе нумай ӗҫсем туса иртнернӗ. Ҫар реформи СССР Хӗҫпӑшаллӑ Вӑйӗсен пурнӑҫне тӗпренех улӑштарнӑ. Соединенисемпе чаҫсем куллен ҫар ӗҫне вӗреннӗ, политика тӗлӗшӗнчен пиҫӗхсе пынӑ. Вӗренӗве тӗрӗс, ҫирӗп уставсемпе, наставленисемпе йӗркелени, ҫӗнӗлле дисциплина туни, ҫара, флота, авиацие вӗр-ҫӗнӗ техника пани Совет Союзӗн Хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене малта пыракан капитализмла ҫӗршывсен ҫарӗсемпе танлашма май панӑ. Ҫӗршывӑн пӗтӗмӗшле хӑвачӗ ӳссе пынӑ май Хӗрлӗ Ҫар тӗрекӗ ҫирӗпленнӗҫемӗн ҫирӗпленнӗ. Сӑмахран, 1930—1931 ҫулсенче пирӗн авиаци промышленноҫӗ ҫулталӑкне 860 самолет кӑларнӑ пулсан, 1938 ҫулта ҫак хисеп 5469 самолета ҫити ӳснӗ. Танксем тӑвасси те асӑннӑ тапхӑрта 740-рен 2271 танка ҫити хӑпарнӑ. Артиллери орудийӗсем хатӗрлесси те ҫавӑн пек хӑвӑртлӑхпах ӳснӗ. 1932 ҫулта—Лӑпкӑ океан, 1938 ҫулта Ҫурҫӗр флочӗсене тунӑ, ҫар валли кадрсем ытларах хатӗрлес тӗл-

левпе çар училищисем, академисем уçнă, ытти аслă шкулсем çумĕнче те çар факультечĕсем йĕркеленĕ.

Совет Çарĕпе халăх пĕр-пĕринпе уйрăлми тачă çыхăнса тăраççĕ. Ăна эпир çакăнтан та аванах куратпăр: 1937 çулта, СССР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш суйлавĕнчех, 1143 депутатран 86-шĕ Хĕрлĕ Çар çыннисем пулнă.

Çапла вара, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе пĕтĕм Совет халăхĕ çĕршыва хўтĕлекен çара пур майсемпе те çирĕплетнĕ тапхăрта чăваш поэзийĕнче те сыхлăх теми тĕп темăсенчен пĕри пулса тăрать. Акă мĕнле çырать 1934 çулта ун чухнехи çамрăк поэтсенчен пĕри Иван Ивник «Призывник» сăвăра:

Чĕре ташшийĕ уççăн илтĕнет,
Ĕмĕтĕмсем пуçра вырнаçрĕç тачă,
Паян ирпе повестка илтĕм эп —
Комиссие тăма повестка пачĕç.

Черет çитет. Эп çирĕм иккĕре.
Ĕçре ударник эп, шăмшакăм çирĕп.
Чĕре юлташăм! ан та иккĕлен,
Шанчăкăмăр питех те пысăк пирĕн.

Чĕрем сисет. Пĕлетĕп пит аван:
Хĕрлĕ çара пулатăп эпĕ юрăх.
Пĕр çавăнпах та ĕнтĕ ман паян
Туртса ярас килет хаваслă юрă.

Ку сăвă «Пирĕн çамрăклăх» кĕнекере пичетленнĕ. Çамрăк çыравçăсен çак пуххи Чăваш патшалăх издательствинче 1935-мĕш çулта пичетленнĕ. Ăна Çемен Элкер редакциленĕ. Çар темипе çырнă сăвăсем ку кĕнекере пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсенче самана сасси уççăнах илтĕнет. Ухсай Яккăвĕ, сăмахран, тăшмансем «ĕмĕт тытаççĕ шав-шавах юнпа витесшĕн çĕршыва, лаша çине ларсах çаплах кĕресшĕн Хĕрлĕ Мускава» тет, анчах коммуна тĕнчи çирĕп те сыхă тăни çинчен калать. Иван Вашки хăйĕн «Шурă хурăн» сăввинче шуррисемпе паттăрла çапăçса вилнĕ салтак çинчен çырать, Владимир Бараев совет çĕршывне сыхлакан часовойсен сăнарне çĕнĕ сăрăсемпе ўкерет.

Тĕреклĕ пирĕн чикĕсем:
Пĕлĕтре, çĕрте, шывра та;
Кăнтăрла, çĕрле е ир-и,—
Çĕршыва сыхлатпăр вирлĕн.
Ворошилов пек тĕллетпĕр!—

тет унӑн лирикӑлла геройӗ. Сӑвӑра хӗрлӗ армеецсем тӑван ҫӗршыва чунтан юратни, унӑн чиккисене хавхаланса, тимлӗн сыхлани, мирлӗ ӗҫ сыхлӑхӗшӗн ҫапӑҫава кӗме хатӗрри лайӑх курӑнать.

Асӑннӑ кӗнекерех М. Столяров, М. Айгир, Хасали ҫамрӑк поэтсем те патриотизм темипе лайӑх сӑвӑсем пичетленӗ.

Вӑтӑрмӗш ҫулсен иккӗмӗш ҫурринче ку тӗлӗшпе Илле Тукташ та ӑнӑҫлӑ ӗҫленӗ. 1936 ҫулта ҫырнӑ «Толедо хӗрӗсен юрринче» вӑл Испани ҫамрӑкӗсен паттӑрлӑхне мухтать, пӗтӗм ҫӗр чӑмӑрӗнчи пролетарисен пӗрлӗхне хӗрӳллӗн ырлать. «Хура урхамах» сӑвӑ кӗске кӑна, анчах кӗвӗллӗ те сӑнарлӑ, хӑй вӑхӑтӗнче вӑл, паллах, сахал мар ҫамрӑка хумхантарнӑ пулӗ:

> Колхоз хура лаши хыт кӗҫенет,
> Ик урипе чавса ҫӗр тӗпретет.
> Ворошилов ҫарне каяс тесе
> Ҫӗр тӗпретет колхоз хура лаши.
>
> Колхоз маттур каччи ут йӗнерлет,
> Хура урхамахпа ҫил вӗҫтерет.
> Чаплӑ кавалерист пулас тесе
> Ҫил вӗҫтерет маттур колхоз каччи.

«Портрет» сӑвӑра колхоз хӗрӗ хӑйӗн савниййӗ Хӗрлӗ Ҫара юрӑхлӑ пулнишӗн чунтан хӗпӗртет, тусӗ орден ҫакнӑ сӑнӳкерчӗк ярса парсан, тантӑшӗсем умӗнче сӑпайлӑ кӑна мухтанса та илет. «Шурӑ кӑвакарчӑн», «Ӑсату» тата ытти сӑвӑсенче те И. Тукташ ҫарпа халӑх пӗрлӗхне, хуралти яшсен паттӑрлӑхне кӑтартать, Европӑра пуҫ ҫӗклекен фашизма хирӗҫ сыхӑ тӑма чӗнет.

Поэтсем хӑйсен сӑввисенче час-часах граждан вӑрҫин паттӑрӗсене чӗртсе тӑратаҫҫӗ. Кун йышши произведенисенчен уйрӑмах Н. Янкасӑн «Чапаев вилӗмӗ» ятлӑ лирикӑлла поэмипе (1935) И. Ивникӗн «Чапай» сӑвви (1938) палӑрса тӑраҫҫӗ.

Янкас поэминчи Чапаев хӑйне Лбищенск патӗнче ҫавӑрса илнӗ шуррисемпе арӑслан пек ҫапӑҫать, анчах вӑйсем тан мар: тӑшман хӗсет. Мухтавлӑ ҫарпуҫӗ паттӑрла вилӗмпе вилет, анчах та унӑн ҫарӗ юлать, вӑл нихҫан та вилес ҫук. Ҫакна поэма авторӗ витӗмлӗн, шанчӑклӑн каласа хӑварать.

Сыхлӑх теми асӑннӑ тапхӑрта Уйӑп Мишши пултарулӑхӗнче тӗп вырӑн йышӑнса тӑрать. Михаил Данило-



И. Тукташ вăрçă вăхăтĕнче.

вич Шумилов 1911 çулта, ноябрĕн 12-мĕшĕнче, Чăваш республикинче, Шупашкар районĕнчи Мăштавăш ялĕнче çуралнă. Чухăн хресчен ачине 1923 çулта Шупашкарти Коммуна шкулне интерната илнĕ, каярахпа, 1927—1930 çулсенче, Уйăп Мишши Шупашкарти педтехникумра вĕреннĕ, 1933 çулта Чулхулара пединститут пĕтернĕ.

1933—1935 çулсенче Совет Çарĕнче пулнă. Хăй çарта чухне, 1934 çулта, ăна СССР писателĕсен Союзĕн членне илеççĕ.

1939 çулта поэт каллех çар тумĕ тăхăнать, ăна 1951 çулта тин хывать. Вунвиçĕ çул стройра тăрса, поэт рядовой салтакран майора çитет.

Шупашкарта пурăннă çулсенче Уйăп Мишши тĕрлĕрен ответлă ĕçсенче ĕçлет: «Сунтал» журнала редакцилет, писательсен Союзĕн правленине ертсе пырать, каярахпа унтах ответлă секретарь пулать, халăхпа патшалăх ĕçне тимлĕн, хастарлăн хутшăнать, ăна Чăваш АССР культурин тава тивĕçлĕ работникĕ ятне панă.

Поэт кунçулĕ 1970 çулта таталнă.

Уйăп Мишши пултарулăхĕнче патриотизм, халăхсен туслăхĕ тата сыхлăх теми тĕп вырăн йышăнни ытахальтен килмен. Социализм стройĕ çĕнтернĕ пĕртен-пĕр çĕршыва курайман çăткăнсем урнăçемĕн урнă, çакна хăйсен политикин тĕп тĕллевĕ туса, çине тăрса хĕçпăшалланнă. 1933 çулта Германире фашистсем влаçа хăйсен аллине ярса илнĕ, кĕçех Япони милитарисчĕсемпе пĕрле «Коминтерна» хирĕç пакт йĕркелени çинчен пĕлтернĕ; Итали империалисчĕсем вĕсемпе алла-аллăн пынă; тĕнчери ĕçхалăх тăшманĕсем Испанири революцие путарнă; 1938 çулта Гитлер эшкерĕсем Австрие кĕрсе кайнă, Англипе Франци тата США правительствисем пулăшнипе

Чехословакин Судет облаçне туртса илнĕ; самурайсем пирĕн Инçет-хĕвелтухăç чиккине хыпаланă...

Хăйĕн гражданла тивĕçне ытти писательсем пекех лайăх ăнланнă поэт-коммунист Уйăп Мишши çак хăрушлăх çинчен халăха каласа пама тăрăшнă. «Икĕ тус», «Ĕнте вăрман кашлать», «Çыру вырăнне» сăвăсенче эпир çар çыннисен таса туйăмлă та вăйлă сăнарĕсене куратпăр.

Хĕççине хăйрать тăшман, пире юнать,
Тупписем тăсасшăн вутлă чĕлхине;
Юхтарасшăн-мĕн вĕсем пирĕн юна,
Тавăрасшăн каяллах ĕлĕкхине,—

асăрхаттарать поэт вулакана «Çилхи витĕр çил вĕрет» сăввинче. Анчах эпир хăравçăсем мар, енчен, тăшман пуçне çĕклес пулсан, совет çыннисем алла усса ларас çук. Çакна эпир асăннă сăвăра лайăх куратпăр.

Кам пулсан та, шикленесси — пире ют!
Тыт-ха, тусăм, çирĕпреххĕн чĕлпĕре.
Урхамахăм, урхамахăм — çивĕч ут,
Çилхи витĕр, çилхи витĕр çил вĕрет.

Уйăп Мишшин çав вăхăтри сăввисене совет çĕршывĕнчи халăхсен тăванлăх идейи пĕтĕçтерсе тăрать. Çакна эпир уйрăмах «Кăнтăр сăввисем» тата «Çурçĕр сăввисем» ярăмсенче аван куратпăр.

Кунта илемлĕ-çке каç пит,
Каç питĕ ăшă та çемçе.
Сана савап, каçхи Каçпи!
Санпа ман çут шухăшсем çеç.
Кунта илемлĕ-çке каç пит...

Хавхаланнă сăвăç тăван çĕршывăн илемлĕ кĕтесне чунтанах савать, «Тинĕс тӳлеккĕн тĕлĕрет» сăвăра çав ытарайми илемпе киленни кăна çителĕксĕрри, ăна упрама, хӳтĕлеме кирли çинчен питĕ вырăнлă калать.

Анчах асрах эс тыт ăна:
Вĕçсĕр тинĕс тӳлекĕнче
Хăрушă тăвăл пытанать,
Хăрушă тăвăллă тĕнче!..
Ялан асрах эс тыт ăна.

Тен, кам пĕлет: ак, паянах,
Çак вăхăтрах, тен, кĕçĕрех
Сиксе, урса, ян та янах

Ҫисретĕҫ тупăсем ҫĕре...
Тен, кам пĕлет: ак паянах...

Поэт сăвви вулакана пăлхантарать, шухăша ярать. Ан тив, тăшман алхастăр, пирĕн ăна ҫăварлăхламалăх вăй-хăват пур.

Алра ман ҫивĕчĕ приказ:
Алла винтовка тытмалла.
Тăшман урса тăрсан, пер, кас!
Ҫĕнтерӳллĕн пăх малалла!
Алра ман ҫивĕчĕ приказ...

Тăвăл тухсан, ҫĕнетпĕрех,
Шывра, ҫĕрте те сывлăшра!
Ҫĕнме пĕр тĕл чĕнет пире,
Ҫĕнме ĕҫ юнĕ чупать ăшра,
Тăвăл тухсан, ҫĕнетпĕрех!

«Ҫурҫĕр сăввисенче» Уйăп Мишши Карели ҫĕршывне мухтать, ун илемĕпе хавхаланать:

Карели каҫĕ калама ҫук капăр,
Карели каҫĕ кантăк пек кăвак.
Ак иртсе кайрĕ шартлама декабрь...
Ҫăлтăрсем тухнă аслă пухăва.

Лирикăлла герой Калевала ҫĕршывĕнче хăйĕн савнине тупнă. Пике чипер: «ун калаҫăвĕ ҫу пек ҫепĕҫ; ун ҫиҫкĕн ҫутă куҫĕнче ҫап-ҫутă кӳлĕсен ҫĕршывĕ, ирхи ачаш кăвак инҫет...» Ҫурҫĕрте чикĕре тăракан салтак ҫĕршыв ăшшине туять, вăл station уншăн инҫетри чăваш тавралăхĕ, Вăрнар тăрăхĕ майлах, ҫавăнпа та хĕрлĕ ҫăлтăрлă каччă ăнланăвĕнче «тăван килйыш, тăван тавралăх, тăван ҫĕршыв» текен ăнланусем уйрăлми пĕтĕҫсе тăраҫҫĕ.

Кунта та хам ҫĕршыва тупрăм,
Эп пăшалпа та йĕлтĕрпе
Сан чул тăвусем тăрăх чупрăм
Тăшман йыттисен йĕрĕпе.

Тăшмана сахал мар йĕрлерĕм,
Ҫĕршыв тĕрекĕшĕн тăрса.
Нумай эп юрă кĕвĕлерĕм,
Чĕрене уншăн ҫунтарса.

Уйăп Мишшин гражданла лирики ҫулăмлă пафоспа палăрса тăрать. Ҫав вăхăтрах вĕсем форма енчен те килĕшӳллĕ, кĕвĕллĕ. Поэт Ҫеҫпĕл Мишши чăваш поэзи-

не кĕртнĕ силлабо-тоника виçине малалла аталантарса пырать, çиелтен пăхма çеç лăпкă тĕнчене сăнлама çĕнĕ виçесем тупать. Аллитераци, ассонанс, янăравлă тулли рифма — акă Уйăп Мишши сăввисен ырă енĕсем.

Вăтăрмĕш çулсен вĕçĕнче, каларăмăр ĕнтĕ, сыхлăх теми литературăра тĕп вырăнсенчен пĕрине йышăнать. Ку енĕпе Александр Алка, 1939 çулта çар тумĕ тăхăннă·скер, хĕрӳллĕ сăвăсем çырать, халăха сыхă пулма, гитлерла фашизма хирĕç тăма чĕнсе калать. Унăн «Перекоп», «Тупа», «Юнланнă явлăк», «Шанчăк», «Связист» сăввисем çак гражданла туйăмпа тулнă.

Акă А. Алка 1938 çулта çырнă «Чипер юлăр...» сăвва кăна илсе пăхар. Автобуспа пыракан колхоз каччи тăван уй-хирпе сывпуллашать. Кунта ӳссе çитĕннĕ вăл, вĕреннĕ, пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн анлă анисене тракторпа сухаланă, кĕр çитсен йĕтеме хурçă сасăпа кисрентерсе авăн çапнă, халĕ вара çав тавралăхпа сывпуллашать, каять. Çапах та шухăш-кăмăлĕ çĕкленӳллĕ унăн, ĕмĕчĕсем çутă: кĕçех вăл салтак тумĕ тăхăнĕ, алла тăван çĕршыв панă хĕçпăшала тытĕ, халăх шанăçне тӳрре кăларма мĕн кирлине пурне те тăвĕ.

Эпĕ пулăп инçе... Тепĕр хут куриччен,
Çак ялсем, уй-хирсем, çаран-улăх
Çаплах çитĕнĕç ирĕккĕн, тулăх:
Вĕсене эпир пур чĕререн
Юратса сыхлăпăр чикĕре.

Халь каятпăр унта. Ак ума
Тухрĕ çутă хула, аслă Атăл.
Асăмри аслă ĕмĕт, ан татăл!
Пуçăмра пысăк шухăш пур ман —
Хĕрлĕ Çарăн танкисчĕ пулма.

Ку сăвăри лирикăлла геройăн ĕмĕт-шухăшĕ вăл вăхăтри пĕтĕм çамрăксен шухăш-кăмăлĕпе пĕр килет.

Асăннă тапхăрта çавăн пекех С. Элкер, П. Хусанкай, Н. Янкас, С. Шавли тата ытти поэтсем те халăха вăрçă хăрушлăхĕ çинчен астутарсах тăнă, хатĕр пулма чĕннĕ. Ана эпир И. Ивникĕн 1938 çулта çырнă «Сыхлăх юрринчен» те аванах куратпăр:

Явăнасшăн пуç çинче
Чунилли çăханĕ.
Шухăшлать вăл: пур енчен
Юн ĕçме тухам-и.
Советсенĕн çĕрĕнче

Вилĕм çӳретесшĕн.
Ун çине вăл пур енчен
Вăрçăпа килесшĕн...

Пĕр сăмахпа каласан, фашистла çĕршывсен агрессилле политикине пула иккĕмĕш тĕнче вăрçи пуçланнине, çавна май Совет Союзĕ умне те пысăк хăрушлăх тухса тăнине чăваш поэчĕсем илемлĕ майсемпе витĕмлĕн сăнласа параççĕ. Анчах совет çынни, революци çулĕпе малалла хăюллăн утакан çын, тăшманпа пĕр хутчен кăна мар тытăçнă, кашнинчех çĕнтернĕ. Енчен, урнă фашистсем совет çĕршывĕн чикки урлă каçас пулсан, социализм тăвакан халăх пĕр çын пек кар çĕкленĕ, çĕршыва хӳтĕлеме пикенĕ. Çак пархатарлă шухăш вăрçă умĕнхи сăвălла произведенисенче тĕп вырăнсенчен пĕрине йышăнать.

## «ФАШИСТСЕНЕ ЧАСРАХ ÇАПСА АРКАТАР!»

### (1941—1945)

1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче фашистла Германи, 1939 çулта Совет Союзĕпе пĕр-пĕрин çине тапăнмалла марри çинчен тунă килĕшӳ пуррине пăхмасăрах, пирĕн çĕршыв çине сĕмсĕррĕн килсе кĕрет. Тăшман тупписем ирпе ирех пограничниксен застависем, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем тăракан гарнизонсем çине вут-хĕм тăкма тытăнаççĕ. Çав хушăрах эрешменле свастика ӳкернĕ пиншер самолет Балти тинĕсĕ хĕрринчи республикăсем, Белоруссси, Молдави çине бомбăсем тăкать. Вăрçа «çиçĕмле хăвăртлăхпа вĕçлемелли «Барбарос» планĕ тăрăх гитлеровецсем пирĕн çĕршыв çине виçĕ тĕлтен — çурçĕр-хĕвеланăç, хĕвеланăç тата кăнтăр-хĕвеланăç енчен — вăйлăн килсе çапаççĕ, Хĕрлĕ Çара çĕнтерсе, васкавлăн Мускава, экономикăпа политикăн ытти центрĕсене çавăрса илме, çапла майпа Совет Союзне аркатса тăкса вăрçă вĕçлеме ĕмĕтленеççĕ.

«Совет Союзĕн правительстви çĕршыври мĕнпур халăх — рабочисем, хресченсем, интеллигенци, арçынсемпе хĕрарăмсем—хăйсен ĕçне, хăйсен тивĕçне пысăк ăнланулăхпа пурнăçласса çирĕп шанса тăрать. Пĕтĕм халăхăн халĕ нихçанхинчен те ытларах пĕрлешмелле, пĕр çын пек

пулмалла. Пирĕн кашниннех халĕ хăйĕнчен те, ыттисенчен те ытларах ыйтмалла...»,—терĕ Совет правительстви фашистла Германи Совет Союзĕ çине сĕмсĕррĕн тапăнни çинчен 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче пĕлтернинче.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви чĕннипе тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хӳтĕлеме пĕтĕм халăх пĕр çын пек кар тăрса çĕкленет.

Районти предприятисемпе колхозсенче ĕççыннисен митингĕсем пулса иртеççĕ. Июнĕн 22-мĕшĕнче колхозсенчи митингсенче 3.711 çын пулнă, хулари митингра 3.500 çын пулчĕ. Правительство чĕнни çине ответлесе, нумай ĕççыннисем заявленисем параççĕ. Ялхуçалăх техникумĕнче хăйсен ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çара кайма кăмăл тунă юлташсем чылай. Воробьев юлташ митингра хĕрӳллĕ сăмах тухса каланă, хăйне Хĕрлĕ Çара илме ыйтнă.

Хулари митингра парти райкомĕн секретарĕ Скворцов, военком Петров т. ыт. юлташсем те тухса каланă. Митинг мĕнпур ĕççыннисене дисциплинăллă пулма, производство планĕсене ытлашшипех тултарма, çапла вара, Хĕрлĕ Çар хăватне ӳстерсе пыма чĕнсе, резолюци йышăннă.

Советра парти активĕ СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ кăларнă Указсене ăнлантарса пама ялсене тухса кайнă.

**ÇĔРПӲ РАЙОНĔНЧЕН ПАРТИ ОБКОМНЕ ПĔЛТЕРНИНЧЕН**

1941 çулхи июнĕн 23-мĕшĕ.

«Коммунизм ялавĕ» хаçатра 1941 çулта пичетленнĕ информаци.

Чăваш поэчĕсем те чечекленекен хуласемпе ялсем çине çулăм сапакан, ачасемпе амăшĕсене пĕр шелсĕр вĕлерекен, хĕрсене тыткăна хăваласа каякан сĕмсĕр тăшмана хăвăртрах çапса аркатма чĕнеççĕ. Сăвăçсем, мĕнпур совет çыннисем пекех, партипе пĕрле, халăхпа пĕрле.

«Иртнĕ вăрçă çулĕсенче пирĕн поэзи уйрăмах хăватлă сасăпа янăрарĕ. Поэтсем, унчченех ят илнисем те, çамрăкраххисем те, пысăк идейăллă, пысăк патриотла сăвăсемпе поэмăсем çырчĕç. Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех чăваш поэзийĕнче героикăлла пафос тĕп вырăн йышăнчĕ, çав вăхăтрах унта чĕререн тухакан хаяр тарăху-

па курайманлăх та вĕресе тăчĕ. Вăрçă пуçламăшĕнчи поэзи вăл — йыхрав, чĕнӳ поэзийĕ. Çакă сăвăсен ячĕсенченех лайăх курăнать: «Хăюллăн малалла!», «Фашизма — вилĕм!», «Аркатар çапса!», «Ан чак!», «Ан ман!», «Тăван çĕршывшăн, чысшăн, ирĕклĕхшĕн!», «Тавăрăр тăшмана» тата ыт. те.

Нумай поэтсем сăвăлла памфлетсем, эпиграммăсем, такмаксем çырчĕç, вĕсенче тискер фашистсене çивĕччĕн питлерĕç, сатирăн вĕри вучĕпе çунтарчĕç»[1],—тесе çырать Н. Дедушкин.

Халăх поэчĕ Н. И. Шелепи вăрçăн малтанхи кунĕсенчех «Чĕнетĕп», «Тăршшĕ икĕ метр, урлăш пĕрре — территори кирлĕ Гитлере» сăвăсем çырать. Акă мĕнле янăраççĕ поэтăн çулăмлă сăмахĕсем:

Çутă пурнăçлă
Çĕршыв хуçисем,
Ирĕклĕ кунçула
Юратакансем:
Вырăс, чăваш, тутар,
Харăссăн утар,
Фашистсене часрах
Çапса аркатар!..

Ку сăмахсенчен сăвăç яланах халăх шухăш-кăмăлĕпе пурăнни витĕрех курăнать.

Николай Иванович Полоруссов-Шелепи 1881 çулхи майăн 15-мĕшĕнче Хусан кĕпĕрнинче, Чистай уесĕнчи Çĕнĕ Ӳсел ялĕнче (халĕ Тутар республикинчи Аксу районĕ) хресчен çемйинче çуралнă.

1895 çулта Мăкшăелĕнчи пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă, унтан хресчен ĕçĕпе пурăннă, халăх сăвви-юррисене пухнă.

Шелепин малтанхи сăввисем («Раççей», «Çĕлен») 1905—1907 çулсенчи революци вăхăтĕнчех пичетленнĕ, вĕсенче вăл пусмăрлăха, чуралăха питленĕ. Пĕрремĕш революцие путарнă хыççăн поэт Çĕлĕре тухса каять, унта чугун çул çинче, ылтăн приискĕн кантурĕнче ĕçлет.

1914 çулта Н. И. Полоруссов-Шелепи тăван ялне таврăнать, тепĕр çултан Хусанта хăйĕн произведенийĕсене уйрăм кĕнекен кăларать.

Октябрьти социализмлă Аслă революци хыççăн Ше-

---

[1] *Н. Дедушкин.* Пăшалпа та, перопа та... Шупашкар, 1970, 49 стр.

лепи пирӗн поэзин историлле ҫул-йӗрне уҫса паракансенчен пӗри пулса тӑрать, паха произведенисем нумай пичетлесе кӑларать. 1936 ҫулта ӑна чӑваш совет литературине аталантарас ӗҫри ҫитӗнӳсемшӗн Чӑваш халӑх поэчӗ ятне панӑ, 1938 ҫулта «Хисеп Палли» орденпа наградӑланӑ.

Поэт 1945 ҫулхи январӗн 12-мӗшӗнче вилнӗ.

Калас пулать, Шелепи Тӑван ҫӗршывӑн аслӑ вӑрҫиччenex сыхлӑх темипе сӑвӑсем ҫырнӑ. Илсе пӑхар-ха, акӑ, «Хӗрлӗ Ҫар кунӗ» сӑвва:

Юнлӑ мула ҫӗмӗрекен
Хӗрлӗ Ҫара
Паян, пӗтӗм ӗҫхалӑхӗ,
Саламлар халь.
Чуралӑха ҫапса ватнӑ
Хӗрлӗ Ҫара
Паян, мӗнпур ӗҫыннисем,
Тав тӑвар халь.

Малалла автор хӑйӗн сӑввинче социализмла ҫӗршыв ҫарӗ халӑх пуянлӑхне шанчӑклӑ сыхлани ҫинчен ҫырать, унӑн никам ҫӗнми хӑватне сӑнлать:

Мул хуҫиллӗ патшалӑхсен
Юнлӑ алли
Совет Союз чикки ҫине
Тапӑнсассӑн,

Ӗҫхалӑхпе хресченсен
Хӗрлӗ Ҫарӗ
Аҫа-ҫиҫӗм вылятакан
Тӑвӑл ярӗ!

Вӑрҫӑччен ҫырнӑ «Коммунизм патне», «Хӗрлӗ ҫӑлтӑр» тата ытти сӑвӑсем те поэт ҫак темӑна асрах тытни ҫинчен калаҫҫӗ.

Совет халӑхӗн малтанхи пилӗкҫуллӑхсенчи ӗҫри ҫӗнтерӗвӗсемшӗн чунтан савӑнса юрланӑскер, Шелепи вӑрҫӑ тухсан Гитлер йыттисене ылханлӑ сӑмахсемпе питлеме тытӑнать, совет ҫыннисене вара йывӑрлӑх умӗнче пӗр пулма, тӑшмана хирӗҫ кар тӑма чӗнет, фронтри паттӑрсене мухтаса витӗмлӗ сӑвӑсем шӑрататать.

Шурӑмпуҫпе шӑпчӑк юрланӑ чух
Колхоз тырри-пулли хумханать.
Хӗрлӗ Ҫар хӗрӳллӗ ҫӗнтернӗ чух
Ӗҫҫынни тӗнчипех савӑнать,—

тесе çырать вăл 1942 çулта «Паттăр летчик юрри» сăвăра.

Вăрçă тухнă çул Н. Шелепи утмăл тултарнă. Ку вăхăтра ĕнтĕ унăн куçĕ пачах курман, анчах поэт халăхпа пĕрле тăшмана хăвăртрах çĕнтерес ĕмĕтпе пурăнать, вут-çулăмлă сăвă-юрăсем шăрататать. Вăл республикăри ялсене, хуласене çитет, халăх умне тухса калаçать, литература каçĕсем ирттерет, çынсене çĕнтерӳшĕн лайăхрах ĕçлеме чĕнет, хавхалантарать. Çапла вара, литературăра хĕрĕх çул хушши ырми-канми ĕçленĕ поэтăн пурнăçĕ те, пултарулăхĕ те пирĕншĕн чăн-чăнах çутă тĕслĕх пулса тăрать.

Чăваш халăх поэчĕн Çемен Элкерĕн пултарулăхĕнче çарпа патриотизм теми яланах малти вырăнта тăнă. Элкер поэзие вăрçă çинчен çырнă сăвăсемпе кĕнĕ. «Карпатра», «Тыткăнра», «Дунай улăхĕнче», «Вăрçă хирĕсенче» сăвăсем шăпах çавна çирĕплетсе параççĕ те ĕнтĕ.

Кураймастăп эпĕ пусмăрлăх вăйне,
Юратмастăп кивĕ тĕнче йĕркине!
Ылханатăп мулшăн тапратнă вăрçа,
Çынна çын çиен тĕттĕм пурнăçа,—

тесе çырать Элкер «Кураймастăп эпĕ» сăвăра 1920 çулта.

Айта, тăшман, талхăр,
Хăйра шăлна, ур!
Урмашкăн пĕр тапхăр
Халь саншăн кун пур.
Анчах пĕл: тулаймĕ
Тискер шухăшу!
Пире тек чараймĕ
Нимле тăрмашу.
Совет Çарĕн хĕçĕ
Вăл вичкĕн ялан;
Тăшман ирсĕр ĕçĕ
Пăчланĕ унтан,—

çапла хăюллăн, шанчăклăн, витерӳллĕн сăвăлать вăл 1931 çулта.

Çар темине çывăх курасси Элкер çамрăклах вăрçă вут-çулăмĕнче ăшаланнинчен те килнĕ-тĕр. Кĕскен те пулин йĕрлесе тухар-ха унăн пурнăç çулне.

Семен Васильевич Элкер Йĕпреç районĕнчи Мăн Упакасси ялĕнче 1894 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче çуралнă. Ялти шкултан вĕренсе тухсан хресчен ĕçĕпе пурăннă, çав хушăрах литературăпа интересленнĕ, кĕнекесем ну-

май вуланӑ. 1915 ҫул пуҫламӑшӗнче ӑна патша ҫарне илнӗ. Тӗнче вӑрҫинче йывӑр аманнӑскер, вӑл Австро-Венгри ҫарӗсен аллине тыткӑна лекнӗ, 1916 ҫулта, вӑрҫӑ инваличӗсене улӑштарнӑ чух, Раҫҫее таврӑннӑ. 1917—1918 ҫулсенче Хусанта аслӑ шкула кӗме хатӗрлекен курсра вӗреннӗ. 1919 ҫулта Кушлавӑш вулӗҫтӑвком членӗнче ӗҫленӗ. 1920 ҫулта Хусана кайса педагогика курсӗнче вӗреннӗ хыҫҫӑн пӗр ҫул хушши ялти шкулта ачасене вӗрентнӗ. 1922 ҫултанпа Шупашкарта пурӑннӑ, хаҫат-журнал редакцийӗсенче, радиора, кӗнеке издательствинче ӗҫленӗ, республикӑри литература организацине ертсе пыракансенчен пӗри, РСФСР Верховнӑй Совечӗн 3-мӗшпе 4-мӗш созывӗн депутачӗ пулнӑ. Ҫав хушӑрах Элкер сӑвӑсем, «Хӗн-хур айӗнче», «Вӑл вилӗмсӗр» поэмӑсем, «Вӑрҫӑ кунӗсем», «Шурӑмпуҫ килсен» романсем, «Вунсаккӑрмӗш ҫул» драмӑлла поэма, калавсемпе очерксем ҫырса ӗлкӗрет.

Чӑваш литературине аталантарас тӗлӗшпе паллӑ ҫитӗнӳсем тунӑшӑн Элкере 1940 ҫулта Чӑваш халӑх поэчӗ ятне панӑ, 1945 ҫулта Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗпе, 1950 ҫулта Ленин орденӗпе наградӑланӑ.

Элкер вӑрҫӑ-харҫӑн мӗнпур инкеклӗхне туллин куҫ умне кӑларса тӑратать. Анчах вӑрҫӑпа вӑрҫӑ пур чухне те пӗр мар. Эпир, мирлӗ ҫынсем, ытти ҫӗршывсене нихҫан та тапӑнас ҫук, анчах хамӑр ҫине хӗҫ ҫӗклесе килекен пулсан, тӑшмана ҫапса аркатиччен хамӑра шеллемесӗр ҫапӑҫатпӑр. Ку вӑл—ирӗклӗх вӑрҫи, тӗрӗслӗх вӑрҫи. Акӑ мӗнлерех ҫавӑрса калать ҫак шухӑша поэт:

Совет ҫар ҫынни,
Тӑр ҫирӗп, чакми!
Хура тӑшмансен пулькки тапӑнсан,
Ана ҫӗмӗрмешкӗн вӑй ҫирӗп-ха сан.
Илт эс те, тӑшман;
Ху выҫкӑн пирки ҫеҫ уран, антӑхан!
Ан тӗкӗн эс пирӗн мирлӗ халӑха...
Эпир ҫаратмастпӑр ютри пурлӑха,
Ҫапах пурӑнатпӑр пит лайӑх пурпӗр,
Пире кирлӗ мар ҫын ҫӗрӗ — ют ҫӗр.
Анчах хамрӑнне те,
Пӗр утӑм ҫӗре те
Сана парас ҫук. Эпир вӑйсӑр мар.
Усал тӑшманпа — эпир те хаяр.

Элкер ҫак шухӑш чӑваш хӗрарӑмӗсен чун-чӗрине епле кӗрсе вырнаҫнине те лайӑх кӑтартса панӑ. Акӑ

1919 çулта çырнă «Сантăр хěрě» — Сар Васса» сăвва илсе пăхар-ха.

Чăваш ялěнче хура кěркунне хěрсем улах лараççě, сӳс е çăм арлаççě. Кунта шавлă кулă сассисем илтěнмеççě, хěрсем пурте пăшăлккă, мěншěн тесен:

Хăшěн пиччěш-шăллěсем
Тахçанах фронтра,
Хăшěн савнă каччисем
Çапăçнă унта...

Сантăр пичче хěрě Васса шăппăн, пусăрăнса ларать, тăтăш куляннăран унăн пичě шурса кайнă. Хěр мěншěн кулянни паллă: ун каччи, хӳхěм Кěркури, вăрçă хирěнче çӳрет, Колчак эшкерěпе çапăçать. Вăл Васса патне пěрмаях ăшă çырусем çырса тăнă, анчах халě каччăран виçě уйăх нимěнле хыпар та çук. Хěр кăшт вырăсла пěлнě пулсанах фронта, Кěркури патне, тухса кайěччě, унпа юнашар тăрса шуррисемпе çапăçěччě: унăн шухăшě-ěмěчě кунта мар, савнă каччипе юнашар. Анчах Васса ялтан тухса кайма хăюлăх çитерейместь-ха. Хěрěн хěрӳ шухăшě çеç, хăй арлакан çип пек, вěçě-хěррисěр инçе тăсăлать...

Сар Васса пек хěрарăмсен ăнланулăхě, пуçарулăхě çěнě пусăма çěкленнине эпир «Вунсаккăрмěш çул» драмăлла поэмăра куратпăр. Хресчен хěрě Исси хăйне ялти пуян каччă, патша çарěнче поручик пулнă Каврук вăйпах çураçасшăн çуннă çěртех Левене, Псковпа Нарва таврашěнче Хěрлě гвардире çăпăçнă çěртен аманса таврăннă коммуниста, качча тухать. Маларах, Каврук евчисем çуллă чěлхисемпе йăпăлтатнă чухне, ашшěпе Исси хушшинче çакнашкал калаçу пулса иртет:

Исси

Çап, кас, хěне, вěлер те хур,—
Çавраймăн манăн кăмăла!
Чунтан савни Левен ман пур.
Телейлě эпě унпала...

Энтри
*(алăка чыша)*

Эх, ăссăр хěр!.. Пěлместěн-ха:
Левен ěмěрě — уйăха...
Эс çав пěтес çынна саван
Е унпалах пěтме шутлан?!

Ку пăтрашура Исси çĕнтерет: хăйне пуян качча парса яма тесе чăлана хупса лартнă пулин те, кантăкран сиксе Левенпе каять.

Левене, революци йĕркине лайăх ăнланакан çынна, чухăнсен комитечĕн председательне суйлаççĕ. Таçта та çитмелле Левенĕн, такампа та калаçмалла. Ĕç вĕçĕ-хĕррисĕр. Çакă Иссие, пурнăç çине уйрăм харпăрлăх куçĕпе пăхакан çамрăк арăма, малтанлăха пăшăрхантарать те:

Ялти ĕçпех çав айкашан...
Кил-çуртăнта мĕн чул ĕçӳ!
Пӳртне юсас пулать... Хăçан,
Хăçан сан пулĕ ерĕçӳ! —

тет вăл, чухăнсен комитетĕнче ĕçлекен упăшкине ӳпкелесе. Анчах пурăна киле вăл Левенпе пĕрле халăх ĕçне явăçать, пĕр хаяр тытăçура аманать. Сывалнă хыççăн вăл çĕнĕ влаçшăн тата хастарлăрах кĕрешме тытăнать. Левен шуррисемпе çапăçма хĕвелтухăç фронтне кайсан, Исси çапла калать:

Пулас çут пурнăçшăн кун-çĕрĕн
Хĕрӳллĕ вăрçă пынă чух,
Ах, хамăн та ак сыввăн, чĕррĕн
Килте лармашкăн чăтăм çук!
Ман хамăн та, мире кĕтмесĕр,
Каясчĕ Хĕрлĕ Çар ретне.
Фронта çитсе пĕр шикленмесĕр
Тухасчĕ çапăçу хирне...

Çирĕп кăмăлпа татса каланă шухăш пурнăçланать: Исси çур çул медсестрасен курсĕнче вĕренет, фронта каять, Левене, Чапаев дивизийĕнчи батальон командирне, шыраса тупать, унпа пĕрле Колчака хирĕç çапăçать.

Епле ăста çырса кăтартать Элкер пурнăçăн революцилле аталанăвне!

С. Элкер Тăван çĕршывăн аслă вăрçи çулĕсенче çырнă «Фашизм йăхне — çĕр тĕпне!», «Фашистсене вилĕм!», «Эпир аван пурнаттăмăр...», «Ленинграда», «Хĕрлĕ Çара» тата ытти сăвăсенче фашизма питлет, ылханать, вĕсен хура ĕçне тăрă шыв çине кăларать.

Çаратакан, çын çиекен
Выç фашизм — чунилли,—

тет вăл. Анчах усал фашизма пĕтерес тесен, кашнин —

хăшĕн хĕçпе, хăшĕн ĕçпе — кĕрешмелле, çапăçмалла. Мĕншĕн тесен:

Арканнă хула тĕпĕсем,
Қашни сыпăнми ванчăк чул,
Çунса кăмрăкланнă ялсем,
Хирте йăлт таптаннă тырпул —
Хушаççĕ паян кăшкăрсах
Фашизм вăйне тĕп тума!

Элкерĕн вăрçă вăхăтĕнчи патриотла пысăк ĕçĕ вăл — чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕ Иван Смирнов пулеметчик çинчен çырнă «Вăл — вилĕмсĕр» поэма.

«Элкер хальхи совет çамрăкĕсен çулăмлă патриотизмĕ ăçтан хĕлхемленсе çĕкленнине истори тĕлĕшĕнчен тарăн çутатса парать[1],— тесе çырать Аркадий Ĕçхĕл.— Мĕншĕн-ха чăваш ачи Смирнов комсомолец Ленинград хулине пĕтĕм чун-чĕрипе хӳтĕлет? Мĕншĕн вăл, çав аслă хулана хӳтĕлесе хăварас тесе, хăйĕн çамрăк пурнăçне те хĕрхенсе тăмасть?

Мĕншĕн тесен чăваш халăхĕн ывăлĕ Иван Смирнов лайăх пĕлет: çак аслă хула никĕсне хывнă çĕрте ĕлĕкавал чăвашсем те ĕçленĕ. Мĕншĕн тесен çак аслă хула— социализмла Аслă революци вучахĕ. Çакăнтан Октябрь кунĕсенче халăхсен аслă çулпуçĕ В. И. Ленин этемлĕхшĕн çĕнĕ самана пуçланни çинчен мĕнпур тĕнчене пĕлтернĕ. Ленинград вăл — пĕтĕм совет халăхĕн мухтавĕ. Вăл нихăçан та никама та парăнман, нихăçан та тăшман кулли пулман, пулас та çук.

Çак шухăш Иван Смирновпа унăн тантăшĕсен чĕринче мĕн ачаран çирĕпленнĕ. Вĕсене Тăван çĕршыв çапла вĕрентнĕ, çуратнă амăшĕсем килтен ăсатса янă чух урнă тăшмана тĕп тăвиччен çапăçма ырă сунса пехилленĕ. Акă мĕншĕн çĕнтерме çук Смирнова, акă мĕншĕн парăнтарма çук унăн взводĕнчи Петров, Вахитов, Воронков, Платунов, Амировсене!

Фашизма хирĕç чăн-чăн хĕрӳлĕхпе çырнă произведенисем совет çыннисен чĕринче курайманлăх вутне амалантарса, вăй илтерсе пынă, хамăрăн аслă çĕршывăмăра тата ытларах юратма, уншăн юна та, пурнăçа та шеллемесĕр кĕрешме хавхалантарнă

---

[1] *А. Эсхель.* Поэт кунçулĕ. С. В. Элкер пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен. Шупашкар, 1974 ç.

Чăваш поэчĕсемшĕн — алла хĕçпăшал тытса вăрçă вутне кĕнисемшĕн те, халăхпа пĕрле тылра çĕнтерӳ хĕçне туптакансемшĕн те — çав çулсенче вăрçă теми тĕп тема пулса тăрать. Акă мĕнле çырать хăйĕн пултарулăхне, пурнăçне тăван халăх кунçулĕпе, халăх шăпипе тачă çыхăнтарнă поэт Петĕр Хусанкай 1941 çулхи июнь уйăхĕнче:

Ăçта пулсан та эп —
Çĕршыв манпа пĕрле.
Пĕлетĕп, ĕненеп:
Эпир çĕнтермелле.

Çĕр халăхлă çĕршыв
Пĕр ĕмĕтпе тăрсан,
Юлма ан асăн сыв,
Антăхакан тăшман!

«Фронтпа тыл пĕр пулсан — çĕнтереймĕ тăшман», «Тăван çĕршывшăн, ирĕклĕхшĕн, чысшăн», «Виçĕ ывăл», «Ытарайми сестра», «Ахмет Делиевăн маттурлăхĕ», «Ширшов комсомолецăн паттăрлăхĕ», «Арам Петросян», «Памастпăр ирĕк хулана!», «Епле чăтать-ши çĕр сире?!» тата ытти нумай сăвăсене поэт вăрçă тухнă çул çырнă. Вĕсем хăватлă йыхрав пек илтĕнеççĕ, чĕрене шанчăк, хавхалану пиллеççĕ.

Петр Петрович Хусанкай 1907 çулта, январĕн 22-мĕшĕнче, хресчен килйышĕнче çуралнă. Вăл çуралса ӳснĕ Сиктĕрме ялĕ Тутар республикинчи Элкел районне кĕрет. Ялти иккĕмĕш сыпăклă шкула вĕренсе пĕтерсен, Хусанти чăваш педтехникумне вĕренме кĕнĕ, каярах Хĕвелтухăçĕнчи халăхсен педагогика институтĕнче вĕреннĕ.

Поэтăн пĕрремĕш сăввисем 1924 çулта «Сунтал» журналăн пĕрремĕш номерĕнче пичетленнĕ.

П. Хусанкай 1930—1934 çулсенче Мускавра тухса тăракан «Коммунар» хаçат корреспондентĕнче ĕçленĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче вăл фронтра малтан ахаль салтак, кайран командир пулнă, 1943 çулта Коммунистсен партине кĕнĕ.

П. Хусанкая 1950 çулта Чăваш халăх поэчĕн ятне панă. Вăл — Константин Иванов, Çеçпĕл премийĕсен лауреачĕ.

Унăн алла яхăн кĕнеке пичетленсе тухнă.

Поэт 1970 çулхи март уйăхĕнче вилнĕ.

Петĕр Хусанкайăн вăрçă вăхăтĕнчи пултарулăхĕ нумай енлĕ: йыхравлă-чĕнӳллĕ сăвăсемпе пĕрлех лирикăл-

ла сăвăсем, поэмăсем çырать. Хусанкайăн лирикăлла геройĕ çак çулсенче çĕнĕ пусăма çĕкленет темелле: тăван çĕршывшăн вăл нимĕн те хĕрхенсе тăмасть, вилĕм виçтăвата утăмрах пулин те çутă ĕмĕтсемпе пурăнать, унăн кăмăлĕ хаяр, анчах таса. «Аннене» сăвва поэт йывăр вăхăтра, 1942 çулта, Сталинград фронтĕнче çырнă. Çапах та йывăр лару-тăрура лирикăлла герой — совет салтакĕ — ытларах хăй шăпи пирки мар, çĕршыв çинчен шухăшлать, хăй ăшĕнче амăшне çав шухăшах калать.

Анчах халь пурне те мар-и —
Ывăла, хĕре —
Куçран пăхрĕ, ыталарĕ
Пĕр анне пире.

Вăл — асаплă та суранлă,
Çапах ĕмĕр сыв.
Эпир иксĕмĕр çуралнă
Сарлака çĕршыв.

Çав аннешĕн кĕрешмешкĕн,
Пăшала, туппа
Чуптуса, эпир пиншерĕн
Турăмăр тупа.

Енчен, çав аннешĕн пуçăма хурсан, эпĕ таврăнаймăп, анчах эсĕ мана уншăн айăп ан ту, мĕншĕн тесен ача чухне хăвах тӳрĕ чунлă, хăюллă пулма, çĕршыва, аслăран аслă аннемĕре хисеплеме вĕрентеттĕн,— тет салтак.

Хусанкай геройĕ туслăх мĕнне шутсăр аван ăнланать. Пĕр-пĕрин хушшинче туслă пулмалла — вара тăшман та çĕнеймĕ, тăван çĕршывшăн тăмалла — ку вăл этемĕн чи сăваплă тивĕçĕ, аслă ятсене—пĕтĕм тĕнчери халăхсен туслăхĕшĕн кĕрешнĕ çынсене — асра тытмалла, вара вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ малалла кайĕ, таса ĕмĕчĕ пурнăçланса пырĕ... Акă мĕншĕн вăл «Интернационал кĕперĕ» çинчен ĕмĕтленнĕ Çеçпĕл Мишши вилтăпри çинче «мерттес Шевченко амăшне», Украинăна ĕнтĕ, хĕçпе сыхлама тупа тăвать, чăваш халăх поэчĕпе Çемен Элкерпе çутă пуласлăх çинчен ăшра калаçса салтакăн флягине çĕклет, Павло Тычинăпа, Мицкевичпа канашлать.

Çынлăх — Хусанкай лирикин тепĕр паха енĕ. Çав çынлăх туйăмĕ тени, паллах, чи малтан çĕршыв умĕнчи ĕмĕрхи тивĕçе мĕнле пурнăçласа пыни урлă курăнать. Акă, сăмахран, «Çиле хирĕç çӳрен ут юртать» сăвва илĕ-

пĕр. Командир приказне пурнăçласа таврăнакан развед-чик-йĕкĕт учĕ çинчи лапка-лапка йĕпе юра çăмăллăнах шăлса пăрахать. Анчах çапăçура хăй чысне, çĕршыв чысне юнпа та, чунпа та упранă йĕкĕтĕн хăйĕн те тăн-лавĕ шап-шурах иккен... Константин Симоновăн «Сын артиллериста» балладинче фашистсен тылĕнче хамăр артиллери вут-хĕмне координацилекен Ленька Петров та заданирен çакнашкал шурса таврăнать, Хусанкай вара ку пулăма хăйне евĕрлĕ çырса кăтартнă.

Хусанкайăн вăрçă çулĕсенчи лирики пирки каланă май çакна палăртса хăвармалла. Çирĕммĕш-вăтăрмĕш çулсенче унăн геройĕ хăйне тепĕр чух халăхран уйрăм тыткаланă пулсан, халĕ вара вăл хăйĕн тăван халăх умĕнчи тивĕçне чунпа та, ăспа та туйса тăрать, ăна мĕн-ле майпа лайăхрах пурнăçласси çинчен шухăшлать.

Тăван çĕршывăн аслă вăрçи çулĕсенче поэт, совет халăхĕпе пĕрле пулса, тăшмана хирĕç кĕрешни совет çыннисен патриотизмне туллин те чĕррĕн кăтартса пама пулăшнă. Хусанкай кĕске сăвăсемсĕр пуçне вăрçа тата вăрçă паттăрĕсене сăнласа паракан пысăк произведени-сем те çырнă. Вĕсен шутне чи малтан «Таня» ятлă лири-кăлла-эпосла поэмăна кĕртмелле. «Совет хĕрĕн Таньăн ĕçне поэт нумай нациллĕ совет халăхĕн массăллă пат-тăрлăхĕн уйрăлми пайĕ пек сăнласа кăтартать. Поэмăна вулакан çакна аван туйса илет» [1],— тесе çырнă поэма пирки М. Я. Сироткин профессор.

Чăваш халăхĕн вăрçă вăхăтĕнчи пурнăçне, патриотла ĕçне-хĕлне П. Хусанкай «Аптраман тавраш» сăвăлла романра туллин сăнласа парать.

Ман шутпа, поэтăн çакăн пек произведени çырас шухăш тахçанах çуралнă. Çак роман пайрамĕсем, ял çыннисен курăмлă сăнарĕсем унăн вăтăрмĕш çулсенче çырнă сăввисенчех тĕл пулаççĕ. «Хамăр ялсем» ярăма вуласа тухсан ку уйрăмах лайăх сисĕнет. Акă ирĕкрен таврăнас ывăлĕ валли пўрт пăхакан Уняхвие илер-ха. Патша саманинче вăл нимĕн те туянайман, тўре-шара-сем хырăç-марăç тўлейменнисенне выльăх-чĕрлĕхне шав-лăн хаклашса сутнă çĕре курма çўренĕ, кайран, колхоза кĕрсе, çын ретлĕ пурăнать, ял влаçĕ кулаксен хуралти-çурчĕсене сутнă чух çапла евитлет:

---

[1] *П. Хусанкай.* Суйласа илнисем. Шупашкар, 1968, 31 стр.

Туянтарӑр Лариванӑн
Улт кӗтеслӗ хыр пӳртне.

Хамшӑн халь ӗнтӗ тарамччӗ,
Анчах ман пит аякран
Таврӑнать пулас-ха каччӑ,
Ҫитрӗ ҫырӑвӗ паян.

Эп ҫухатнӑччӗ, мӑнтарӑн,
Ывӑл тухнӑ паттӑра.
Хаҫатра сӑнне ҫаптарнӑ,
Курнӑ пулӗ хӑвӑрах.

Хӑй те ҫырнӑ: «Атте,— тенӗ,—
Илтӗм орден та митал...»
Колхозсен йышне ӗҫченӗн
Таврӑнмашкӑн суннӑ хал.

Е тӑхӑрвун тӑххӑра ҫити пурӑннӑ Элтиван старике илер-ха. Вӑл ӗмӗрне уй хапхи патӗнче ларса ирттернӗ, хуралҫӑ пулнӑ. Унӑн йӑли-йӗркинче эпир чӑваш чунне куратпӑр:

Тыр вырма ҫын кустарать-и,
Хӑнана е пасара —
Пуҫ тайсах уҫса яратчӗ
Элтиван пичче вара.

Ялйышсем-и, ют ялсем-и.
Юланут е урапа —
Вӑл пурне те кӑмӑлҫемӗн
Асататчӗ ырӑпа:

«Ҫӳрес ҫулӑр ҫӑмӑл пултӑр,
Ҫитес ҫӗрӗр ҫывӑх пултӑр,
Лайӑх таврӑнӑр!» — тесе
Кӑларатчӗ пиллесе.

Урапа пӑти тухасшӑн
Лӑканса пырать пулсан,
Шаккатчех вӑл сӑнасассӑн,
Аллинчи туяпалан.

Колхоза кӗни ватӑ ҫынна улӑштарать, ҫамрӑклатса ярать. Элтиван пичче халӑхшӑн тата ытларах тӑрӑшма тытӑнать, армана, витене, машина сарайне ҫитет, уй-хире тухса тӗрӗслет. «Тантӑшсем» сӑвӑри Сар Миккенпе Чӑм Нестӗрӗ пирки те ҫавнах каламалла. Икӗ ӗҫчен ватӑ уяв кунӗ пӳртре халапласа ларнӑ хушӑра пӗрин мӑнукӗ хаҫат илсе кӗрет.

— Асатте! — тет хӗрлӗ галстук
Ҫыхнӑ сарӑ пионер,—
Эп сана хыпар калас-тӑк
Ӗҫмӗн урӑх ӗмӗрне.

«Мӗн апла?» — сана ӗҫченшӗн
Медаль панӑ. Ак хаҫат.
Алӑ пуснӑ хӑй Калинин.—
«Ан калаҫ! Чӑнах-и ҫак?

Асса тух-ха тепрер кӑкшӑм,
Кин, кун пек телейпелен!
Ку — Калинин тантӑшшӑн
Пултӑр!» — терӗ Сар Миккен.

«Аптраман тавраш» романра та эпир ҫак сӑнарсен тӗнчинех лекетпӗр. Кунта поэт пӗр пысӑк йӑхӑн темиҫе ӑру пурнӑҫӗ ҫинчен каласа парать. Ҫав пысӑк йӑх йывӑр тӗрӗслев — Тӑван ҫӗршывӑн аслӑ вӑрҫи — витӗр тухать. Пӗрисем аҫтаха пек тӑшманпа фронтра куҫа-куҫӑн тӑрса ҫапӑҫаҫҫӗ, теприсем ҫӗнтерӳ хӗҫне колхоз хирӗнче туптаҫҫӗ, анчах шухӑшӗ-кӑмӑлӗ кашниннех пӗрре: Тӑван ҫӗршыв умӗнчи тивӗҫе чыслӑн пурнӑҫлас, ҫынран



Совет Ҫарӗн офицерӗ П. Хусанкай амӑшӗпе пӗрле.

юлса пырас мар, чăваш ятне çĕртес мар. Шăпах çав туртăм Энтрие, Петĕре, Наталие тата ыттисене те, пĕтĕм халăха, паттăрла ĕçсем тума вăй-хал парать. Çухатусем те пулаççĕ çапăçу хирĕнче: Натали упăшки Петĕр Сумбай аслă лейтенант Польшăри пĕр пĕчĕк хула масарĕнче выртса юлать. Энтри те, ыттисем те аманаççĕ,— анчах çав çухатусене чăтса, йывăрлăхсене тӳссе совет çыннисем малаллах утаççĕ, çĕнтерӳ çулне хываççĕ, рейхстаг çине хĕрлĕ ялав çакаççĕ. Вĕсем çичĕ ют мăшкăлĕ пулма çуралман.

П. Хусанкай хăйĕн романĕнче вăрçă тĕрĕслевĕ витĕр Ярмуххаль ялĕ çеç мар, пĕтĕм совет çыннисем тата ытларах пиçĕхсе, шăранса тухнине витĕмлĕн кăтартнă. Халăхсем хушшинчи туслăха (Энтрипе Виктор Басов, Сумбайпа Алиев), фронтпа тыл пĕрлĕхне, хĕрарăмсем те вăрçăн вышкайсăр йывăр çĕклемне арçынсемпе танах хăйсем çине тиенине (Натали фронта кайни, колхозри йывăрлăхсем) поэт пысăк ăсталăхпа уçса панă. Вĕсем пурте совет стройĕн никам çĕнми çитĕнĕвĕсене çирĕплетсе параççĕ. Аптрамансен тавракурăмĕ ӳсет, шухăш-кăмăлĕ социализмла патриотизмпа интернационализм майлă аталанса пырать. Вĕсем Тăван çĕршыва чун-чĕререн юратаççĕ, унăн хăватне хĕрӳ ĕçпе çирĕплетеççĕ, йывăр вăхăт килсе тухсан унăн ирĕклĕхĕшĕн хăйсене шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Аптрамансем — совет самани пăхса ӳстернĕ патриотсем

Фронтри лару-тăрăва, совет салтакĕсен шухăш-кăмăлне тĕрĕссĕн, анлăн уçса пама пĕлни Яков Ухсай пултарулăхĕнче те лайăх палăрать.

Яков Ухсай (Яков Гаврилович Никифоров) 1911 çулхи ноябрĕн 26-мĕшĕнче Пушкăрт АССРĕнче, Пелепей районĕнчи Слакпуç ялĕнче, чухăн хресчен килйышĕнче çуралнă.

1920—1924 çулсенче вăл ялти пуçламăш шкулта, унтан Пишпӳлекри колхоз çамрăкĕсен шкулĕнче вĕреннĕ, çавăнтах комсомола кĕнĕ. 1928—1930 çулсенче Ĕпхӳри наукăпа тĕпчев институтĕнче ĕçленĕ.

1930—1932 çулсенче Яков Ухсай Мускаври М. В. Ломоносов ячĕпе хисепленекен университетра вĕреннĕ, 1934 çулччен Пушкăртстанри МТСсенче нумай тиражлă хаçат кăларнă.

1934 çулта вăл Чăваш писателĕсен Союзĕн правлени секретарĕ, 1935—1937 çулсенче — педагогика ĕçĕнче.

Аслă Отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчех поэт салтак шинелĕ тăхăннă, Совет Çарĕн паттăр воинĕсемпе пĕрле Атăл хĕрринчен Шпрее патне çити паттăррăн утса тухнă.

1945 çултанпа — Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ, 1950 çултанпа — Чăваш халăх поэчĕ. Чăваш республикинчи Константин Иванов тата Россия Федерацийĕнчи Максим Горький премийĕсен лауреачĕ.

Совет çыннисем Тăван çĕршыва чунтан юратни, тăшмана курайманни, ăна пур майсемпе те пĕтерме тăрăшни курăнать Ухсай произведенийĕсенче. Тĕслĕхшĕн 1941 çулта çырнă «Винтовка» сăвва илсе пăхăпăр.

Хисеплĕ тусăм, шанчăклă пăшалăм,
　　Ялтрать хĕвелĕн çутинче.
Хитре те çутă затворне ман аллăм
　　Тытать хăрушă кунсенче.
Манччен ăна хисеплĕ тытаканĕ
　　Хăравсăр паттăр гражданин
Финляндин сивĕ хирĕнче утман-и?
　　Вăл утнă, пулнă харсăр çын...

Винтовка çав çын аллинче тĕл пенĕ, тăшмасене йăвантарнă, унăн штыкĕ те килпетсĕр хурахсенчен пĕрне кăна мар леш, тĕнчене ăсатнă. Эппин, çав винтовкăпа халĕ нимĕç фашисчĕсене хирĕç çапăçăва кĕрекенĕн те паттăр та хăюллă пулмалла. Çакна çамрăк салтак аван ăнланать, тупа тăвать:

Ăна тытса тупа тăватăп эпĕ:
　　Нихçан та тутăхмĕ пăшал.
Çухалмĕ ун мухтавĕпе хисепĕ,
　　Шалт перĕ те ўкерĕ шалт.

Юратнă тусăм, шанчăклă пăшалăм,
　　Тивлетлĕ тусăм алăра,
Тăшмансене кăвар сапса ăшалĕ,
　　Çунтарĕ, хирĕ вăрçăра.

Çапла вара, çак сăвăра та, ытти произведенисенче те, Ухсай салтакĕ «ăçта хушнă — çавăнта кайнă, мĕн хушнă — çавна тунă» текен пуçарусăр салтак мар, тĕрĕс вăрçă пĕлтерĕшне туллин ăнланакан, хăйĕн стройри вырăнне çĕршыв, халăх масштабĕпе виçсе хаклама пĕлекен хăюллă патриот.

Салтакăн туйăмĕсем таса, юратăвĕ çирĕп: вăл, çуралнă ялтан таçта аякра çўрет пулин те, çырă куçлă савнине чун тĕпĕнчех усрать. Таса юрату ăна çапăçура вăй-хал

пиллет, çунатлантарать. Çĕршыв сыхлавçи тăхлан айĕнче те «çăра çаранлă тăван тавра» пирки ĕмĕтленет. Пĕр сăввинче Ухсай артиллерипе ăмăртмалла авăтакан аслати çинчен çырать, сиплĕ çумăра хресчен куçĕпе пăхса хаклать. Вăрçăри çумăр çĕре ирсĕр тăшман шăршинчен тасатать:

Лĕп ăшă çумăра ырларăм,
Хывса пăрахрăм каскăна,
Çара пуçах тăрса сăнарăм:
Епле пуçларĕ çăвăнма
Аманнă çĕр-аннем мăнтарăн.

Чир кайтăр! Вилнĕ нимĕç мурĕ,
Шăрши çухалтăр çĕр çинчен!
Çĕртĕр тăшман вилли, çĕр чирĕ!
Çу, çумăр, чашкăр! Вăрçă хирĕ
Тасалтăр, уçăлтăр тĕнче!

Мирлĕ ĕçне пăрахса çĕршывшăн çапăçма вăрçă хирне тухнă совет салтакĕ хăюллă, çирĕп шухăш-кăмăллă. Çакна эпир «Карти-карти кикак-кикак хуркайăк», «Чĕре хытсассăн та, кикак хуркайăк», «Сап-сарă çулçăсем вĕçсе», «Шанчăк», «Вăрра ларсассăн тĕксĕм кантăр» сăвăсенче лайăх куратпăр.

1942 çулта Ухсай «Н-ски дивизири чăваш боецĕсемпе командирĕсем чăваш халăхне» ятлă çыру çырать. Унта вăл чăваш совет воинĕсен хăюлăхĕпе пагтăрлăхĕ, çапăçури тавçăрулăхĕ çинчен сăвăлать. Паллах, çак çыру фронтри салтаксене те, тыл ĕçченĕсене те çĕнтерӳ кунне çывхартассишĕн тăрăшма сахал мар вăй-хал кӳнĕ, хавхалантарнă.

Ухсайăн вăрçă çулĕсенче çырнă «Пĕр полк çинчен хунă сăмах» (1943), «Кĕлпуксем» (1943), «Шăллăм» (1944), «Вырăс хирĕнче» (1944), «Шăпчăк» (1944), «Влтава шывĕ хĕрринче» произведенисене халăх пысăк хак пачĕ, мĕншĕн тесен автор унта совет çыннисен сăнарне пысăк ăсталăхпа кăтартса панă.

Пире таптасшăн ӳхĕрчĕç куллен
Танксем çĕршер-пиншер те мар-и,
Анчах та пирĕн пысăк чĕререн
Вăйли пĕрре те тупăнмарĕ,—

тет поэт, рейхстаг çинче хĕрлĕ ялав вĕлкĕшме тытăннă хыççăн. Ку сăвăçăн вăрçă вăхăтĕнчи пултарулăхĕшĕн пĕтĕмлетсе калани евĕрлĕ илтĕнет.

Александр Алка, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçичченех çарпа патриотизм темипе ăнăçлă ĕçленĕскер, вăрçă çулĕсенче тата витĕмлĕрех çырма тытăнать. Сăлтавĕ паллă: поэт тавракурăмĕ анлăланать, пурнăç опычĕ пуянланать, çырав ăсталăхĕ те ӳснĕçемĕн ӳссе пырать.

Александр Алка (Александр Егорович Бачков) 1913-мĕш çулхи ноябрĕн 27-мĕшĕнче Тутар республикинче, Теччĕ районĕнчи Кăнна Кушкинче, чухăн хресчен килйышĕнче çуралнă. 1938 çулта Шупашкарти педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă, пĕр çул Етĕрнери педагогика училищинче преподавательте ĕçленĕ.

1939-мĕш çултан пуçласа 1946-мĕшне çитиччен çарта пулнă, çапăçусенчи паттăрлăхшăн коммунист-офицера тăвата орденпа, медальсемпе наградӑланă.

Вăрçă хыççăн поэт «Ялав» журнал редакторĕнче, писательсен Союзĕн правлени аппаратĕнче нумай ĕçленĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулнă.

1970 çулта поэта Чăваш халăх поэчĕ ятне панă.

Алка сасси ытти сăвăçсен сассисенчен палăрмаллах уйрăлса тăрать. Хусанкай сăввисенче эпир унăн интеллектуаллăхне, Ухсай произведенийĕсенче вăл çĕре юратнине кашни-пĕр йĕркере курса тăратпăр, Алка вара — чăн-чăн салтак. Çар çыннин патриотизмĕ, пĕтĕм пурнăç çине салтакла пăхни поэт произведенийĕсене витĕмлĕ, курăмлă тăваççĕ. Илсе пăхар-ха унăн хăшпĕр сăввисене. Акă мĕнле кĕтсе илеççĕ чикĕ хĕрринчи салтаксем вăрçа («Июнĕн 22-мĕшĕ»):

Сасартăк тревога янрарĕ ирпе.
Сасартăк, пĕр харăс тăрса,
Эпир вĕтлĕх витĕр, сăрт урлă, хирпе
Васкарăмăр аслă вăрçа.
Эпир — малтисемччĕ; çĕнме çĕкленсе
Кĕрейрĕмĕр çулăм ăшне,—
Ахлатрĕ тавралăх, шартах чĕтренсе,
Тем шăхăрчĕ: хăшĕ — хăшне!—
Вăл вут пек снаряд-мĕн
шартлатрĕ çумра,
Сӳ килчĕ, сӳ кайрĕ хĕрӳ...
Пĕрех çирĕп шанчăк çуралчĕ чунра,
Ун ячĕ — асту — Çĕнтерӳ.

Поэт тăшмансем совет çĕрĕ çинче мĕнле иртĕхнине хăй куçĕпе курать, унăн чĕри курайманлăх вучĕпе çунать. Хитре хуласем ялкăшаççĕ, мăкăрланаççĕ, ялсем çулăмра, улăхсем те чĕрĕ юнлă... Ăçта фашист иртет, унта

пушхир пулса юлать. Епле чăтма пултарĕ-ха ĕнтĕ çав ирсĕр юнĕçенсене этем чунĕ? Тавăру! — акă мĕн кĕтет тăшмана.

Шанатпăр эпир: çав çĕлен-калтана
Час нӳрлĕ çĕр çăтĕ, час нӳрлĕ юн витĕ,
Хаяр Тавăру ярса тытнă ăна.
Пире çĕнтерӳ курăнать çулăм витĕр,
Пире курăнать хĕвел сăнлă уяв,
Пире йыхăрать унта Пурнăç, Мухтав.

Çав хурçă шанчăк каярахпа пурнăçа кĕрет. Совет салтакĕ, тăван çĕршывшăн, халăхшăн вутпа-çулăма хăюллăн кĕнĕскер, тăшман эшкерне хăйĕн йăвине хăваласа каять. Акă пирĕн поэтăмăр Бранденбург хапхи умĕнче тăрать:

Нумай çĕршыва, юлташсем, çитсе куртăмăр,
Пит вăрăм çулсем пулчĕç юнлă, тар-шурлă,
Çапах ӳкермерĕмĕр хамăр чыса:
Урал тăвĕнчен килсе ялкăшнă вутăмăр
Хăюллăн вĕçет Бранденбург хапхи урлă,
Рейхстаг ишĕлет нимĕçле йынăшса...

Алка — пысăк туйăмлă лирик. Ан тив, вăл тепĕр чух сăввисенче кăшкăру паллисем те ларттăр, анчах унăн поэзине парадлă риторика теме хăяймăн. Унта — темĕн те пĕр тӳснĕ салтак чунĕ, унта — вышкайсăр йывăрлăхра çĕршыв çинчен шухăшлама пăрахман паттăр чунĕ, унта — кирек епле лару-тăрура та чыса таса упракан этем. Алкан лирикăлла геройĕн гуманизмĕ кирек ăçта та уççăн палăрать. Акă çĕнтерӳçĕ-салтаксем вăрçăран киле таврăнаççĕ, станцăра вĕсене тăванĕсем, савнă хĕрĕсем кĕтсе илеççĕ. Пĕр ватăлнă хĕрарăм та хăй ывăлне кĕтсе илме тухнă. Ăна эпир аван ăнланатпăр: вăл хăй çуратса ӳстернĕ ачине, 1941-мĕш çулхи пĕр ирпе анăçалла ăсатса янăскерне, кĕтсе илесшĕн, киле çитсен ывăлĕ çине ик куç туллин пăхса савăнасшăн, каярахпа, пурнăç йăлипе, кинлĕ, мăнуклă пуласшăн... Анчах та ун ывăлĕ çук та çук.

Юратнă ывăлĕ таврăнас çук:
Ют çĕршывра вăл çамрăк пуçне хунă
Тăван çĕршывшăн юн юхтарнă чух...

Вара лирикăлла герой ватă кинеми умĕнче хăйне айăплă туять, хăй чиперех таврăннишĕн, юлташĕ çапăçу хирĕнче выртса юлнишĕн аванмарланать.

А. Алка вăрçă темипе пысăк калăплă произведенисем сахал мар çырнă. Совет халăхĕн вăрçăри паттăрлăхĕ унăн «Атăл каччи», «Вĕсем çирĕм саккăрăн пулнă», «Çулăм витĕр çул выртать», «Тупăпа сĕрме купăс», «Одер çинче», «Полк ялавĕ» поэмисенче сăнарланнă.

Асăннă произведенисем А. Алка чăнах та пысăк ăста пулнине уççăнах кăтартаççĕ.

Ку тапхăрта ытти поэтсем те ырми-канми ĕçлеççĕ. Уйăп Мишши 1943 çулта «Малалла, хĕвеланăçнелле!» ятлă сăвă кĕнеки пичетлесе кăларать. Ĕнтĕ ку вăхăт тĕлне урнă тăшман хăй йăвинелле çаврăннă, анчах вăл, вилес умĕнхи арăслан пекех, хаяр та вăйлă-ха. Эппин, совет салтакĕсен тăшмана тата пысăкрах курайманлăхпа аркатмалла, часрах хĕвеланăçнелле хăваламалла.

Кур, боец, тыткăнри хуласем сан умра,—
Ишĕлеççĕ, çунаççĕ вутра, çулăмра.
Кур, боец, сан умра юн, суранлă ялсем!
Халь асаççĕ унта фашистсем-ирсĕрсем!
...Шавлă Днепр кĕтет, сенкер шывлă Дунай.
Ав, мăнаçлă Карпат тăвĕсем асăнаç.
Пур çĕрте те сан пурнăç ăшши кӳмелле.
Малалла! Малалла! Хĕвеланăçнелле! —

тесе йыхравлать поэт паттăр совет салтакĕсене.

Уйăп Мишшин «Сталинград», «Ан ман!», «Наступлени» тата ытти сăввисем те сулмаклăн, витĕмлĕн янăраççĕ. Асăннă кĕнекене поэт чăн-чăн патриотла туйăмпа çырнă.

Ку тĕлĕшрен «Салтак амăшĕ» поэма та паллă вырăн йышăнать. Фронтра паттăрла вилĕмпе вилнĕ Куçук амăшĕ кунĕн-çĕрĕн кулянать, анчах коллективлă ĕçре хуйхине пусарать. Ун патне Куçук тусĕсем çырсах тăраççĕ, вĕсем урнă тăшмана хаяр çапăçура тавараççĕ.

Кĕçĕн командир Хĕветĕр,
Пулеметчик Пурхиле,
Боецсем Ваççа та Петĕр
Кĕрес тетпĕр пĕр киле.

Вăл кил пултăр сирĕн килĕр,
Эсир пулăр ыр анне.
Пире ывăллăха илĕр,
Хăр Куçукăр вырăнне.

Амăшĕ Куçук тусĕсене ывăллăха илме килĕшет.

Ку поэмăра Уйăп Мишши чăваш хĕрарăмĕсен — салтак амăшĕсен çутă сăнарне ăшă туйăмпа сăнласа кă-

тартнă. Хăйсен ывăлĕсене вĕсем чи малтан пехиллесе инçе çула ăсатаççĕ, алла хĕçпăшал тытнă салтаксем вара çĕршыв-анне умĕнче тупа тăваççĕ.

И. Тукташ пултарулăхĕ вăрçă çулĕсенче çĕнĕ пусăма çĕкленет.

Илья Семенович Тукташ 1907 çулта Элĕк районĕнчи Мăн Тукташ ялĕнче çуралнă. Шупашкарти совпартшкулта, Куйбышеври геологи разведки институтĕнче вĕреннĕ. Тĕрлĕ хаçат-журналсен редакцийĕсенче, кĕнеке издательствинче, наукăпа тĕпчев институтĕнче ĕçленĕ. 1942—1944 çулсенче çар корреспонденчĕ, каярах Чăваш писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ пулнă.

И. Тукташ 1957 çулта вилнĕ.

Чунтан тухакан ăшă туйăмпа уйрălса тăраççĕ унăн лирикăлла сăввисем. Вĕсенче автор совет çыннисен вăрçăри паттăрлăхĕпе ĕçри хастарлăхне мухтать, пурнăçа, тăван çĕршыва юратма хавхалантарать. Çав сăвăсем хăйне евĕр кĕвĕллĕ, вĕсем халăх пултарулăхĕн чи лайăх тĕсĕсене çывăх. Ахальтен мар В. Воробьёв, Ф. Лукин, Г. Хирбю, Г. Лебедев тата ытти композиторсем вĕсене юрра хываççĕ. «Шурă кăвакарчăн», «Эпĕ тухрăм пахчана», «Сарă хĕр», «Шур Атăлта акăш ярăнать» вăрçă çулĕсенче çунатлă юрăсем пулса тăраççĕ. Вĕсенче — совет çамрăкĕсен шухăш-кăмăлĕ, пурнăçĕ, кунçулĕ.

Акă, колхоз хĕрĕ юрă юрлать. Кам çинчен пултăр-ха унăн юрри? Паллах, тăшманпа патваррăн çапăçакан савнă каччи çинчен.

Ирĕн-каçăн чунăм савăнать,
Инçетри туса эп асăнап.
Савнирен эп илтĕм ыр хыпар.
Çавăнпа чĕрем ман салху мар.
Чун пекех кĕтетĕп, савнă тантăшăм!

Юрату кĕввисем темĕнле йывăр вăхăтра та чуна уçăлтарса яраççĕ, çавăнпа та вĕсем вăрçă вăхăтĕнче уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă.

Аркадий Ĕçхĕл вăрçă çулĕсенче «Халăх паттăрлăхĕ», «Тупа», «Атăл тапранчĕ», «Атăл ывăлĕсем» тата ытти сăвăсем çырса чăваш поэзине патриотизмла витĕм кӳрет.

Поэт Чăваш республикинче, Çĕрпӳ районĕнчи Янсакасси ялĕнче 1914 çулта февралĕн 5-мĕшĕнче çуралнă, 1928—1930 çулсенче Чистайри ялхуçалăх техникумĕнче

вĕреннĕ, кайран колхозсем тунă çĕре хастар хутшăннă.

1934 çулта Шупашкара, хаçат-журнал ĕçне куçнă. Вунă çул ытла чăваш Писателĕсен союзне ертсе пынă, фашизма хирĕçле произведенисем кăларас енĕпе нумай вăй хунă. Поэта Совет правительстви Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав тата икĕ хутчен «Хисеп Палли» орденсемпе наградăланă.

Ĕçхĕлĕн вăрçă çулĕсенче çырнă чи пысăк произведенийĕ — «Ăмăрткайăк» поэма. Унта вăл хамăрăн паттăр ентеш — Совет Союзĕн Геройĕ Федот Орлов летчик-бомбардировщик çинчен пысăк ăсталăхпа çырнă, типлă сăнарăн мухтавлă ĕçĕ урлă пĕтĕм чăваш халăхĕн, совет çыннисен паттăрлăхне кăтартса панă.

Чăваш ачин Хветутăн пурнăçĕ йывăр: ыйткаласа та çӳреме тивет унăн, кĕтӳ кĕтме те. Тăраниччен çиме те çук, çипуçĕ начар. Анчах Совет влаçĕ ялта та вăй илсе, çирĕпленсе пынă май чухăнсен пурнăçĕ улшăнать, лайăхланать. Хветут шкула каять, хут вĕренет, кунта унăн тӳпене вĕçсе хăпарса ăмăрткайăк пек ярăнса çӳрес ĕмĕт çуралать.

Хĕрлĕ Çара службăна кайсан патвар йĕкĕт авиаци шкулне лекет, самолет тытăмне, вĕçев вăрттăнлăхне тимлесе, çине тăрса вĕренет, умри тĕллеве пурнăçлассишĕн ырми-канми тăрăшать.

Хăватлă марш. Вĕçевçĕсем маттур.
«Чĕремĕр пирĕн çулăмлă мотор...»
Шкултан тухса çĕн ĕмĕт-шанчăкпа
Орлов вĕçет бомбардировщикпа.
Тăват мотор, ик сарлака çунат,—
Тăван çĕршыв ăна ыр çул сунать:
Хăюллă çул, инçе те çӳллĕ çул,—
Çав çул çинче эс пысăк паттăр пул!
Çав çулпала эс ирĕккĕн çӳре,
Эс ху хуçа çак аслă тĕнчере.

Орлов вĕçет. Çĕршыв пехиллесе хушса янипе вăл юнлă Хасана çитет, Халхин-Гол патĕнче тăшман çине бомбăсем пăрахать, Хĕвеланăç Украинăна ирĕке кăларнă çĕре хутшăнать, финсемпе çапăçать. Пĕрремĕш социализмла çĕршыв чиккисене пур енчен те йĕкĕлтесех, чĕпĕтсех тăраççĕ, анчах совет çыннисем яланах сыхă. Сыхлăх хуралĕнче тăракансенчен пĕри — чăваш ачи Федот Орлов. Комсомолец хăйĕн çарти ăсталăхне куллен ӳстерет, политикăлла тавракурăмне анлăлатать. Юнашар — юлташсем, юнашар — опытлă летчик Николай

Гастелло, юнашар — пӗтӗм ҫӗршыв. Вӗрен, тупта ӑсталӑхна — сана валли пурте ҫителӗклӗ. Ҫакна Федот Орлов аван ӑнланать, хушнӑ ӗҫе мӗн май килнӗ таран шанчӑклӑрах тӑвас, ҫӗршыва лайӑхрах сыхлас тесе вӑл нумай вӑй хурать. Ҫакна сӑнланӑ сыпӑксенче поэт ӗлӗк пуянсен мӑшкӑлӗ пулса пурӑннӑ ҫынсем Октябрь хӗвелӗ айӗнче чӑн-чӑн ҫунат сарнине витӗмлӗ кӑтартнӑ. Акӑ епле калаҫаҫҫӗ кун пирки Гастеллопа Орлов:

—Чӑваш ачи, кала,
Ҫак аслӑ Совет влаҫӗ пулас мар-тӑк,
Ҫак тӗнчере эс кам-ши пулмалла?

Эс халь хӑватлӑ караппа ҫӳретӗн,
Эс сывлӑшра ҫӗнӗ ҫулсем уҫан.
Сан ӗмӗтӳшӗн чӑрмав ҫук пӗрре те,
Ӑҫта пыратӑн эс — унта хуҫа.

— Эп хам та,— тет Орлов чунтан пӑлханнӑн,—
Шутлатӑп халӗ ҫавӑн ҫинченех.
Эп тӗттӗм ҫӗрпӳртрен тухса хӑпарнӑ
Ҫак ирӗклӗ, тивлетлӗ тӗнчене.

Вӑрҫӑ! Пӗтӗм совет халӑхӗ ылханлӑ тӑшманпа ҫапӑҫма тухать. Летчиксем, ҫӗршывӑн ҫунатлӑ салтакӗсем, ҫав аслӑ кӗрешӳре чи малта. Н. Гастелло малтанхи ҫапӑҫусенчех тӗнче тӗлӗнмелле паттӑрла ӗҫ тӑвать, хаярлӑх вучӗпе хӗмленнӗ Орлов та чӗнмен хӑнасене пӗр шелсӗр тӳпелет. Вӑл пӑрахнӑ бомбӑсем фашистсен ҫар эшелонӗсене, хӗҫпӑшал базисене, гарнизонӗсене сывлӑша сирпӗтеҫҫӗ.

Пӗтӗм халӑх Гитлер йыттисемпе тытӑҫать. Вырӑсӗ, белорусӗ, казахӗ, тутарӗ — пурте вӑрҫӑра.

Чӑвашсем те ҫав ретрех. В. Винокуров танкист хӑйӗн хурҫӑ полкӗпе Мускава хӳтӗлет, тӳпере Б. Васильев истребителӗ ҫӑхансен ушкӑнне ҫулӑмпа хӑвалать, Г. Габайдуллин фрицсене миномет вучӗпе ӑшалать, Пухтел каччи П. Лаптев артиллерист тӑшмана ҫӗрпе пӑтратать, Элӗк ывӑлӗ М. Ефимов штурмовикпа аҫа-ҫиҫӗмле вӗҫет... Хапсӑнчӑк фашистӑн куҫӗ выҫӑ, анчах та вӑл чӑтса тӑраймасть, хӑй йӑвинелле ҫаврӑнать. Епле чӑтӑнха: коммунистсем вилессе пӗлмесӗрех вут-ҫулӑма кӗреҫҫӗ, тӗрлӗ наци ҫыннисем пӗр-пӗрне ҫур сӑмахран ӑнланаҫҫӗ, колхозниксемех ҫарти салтаксене самолетсем, танксем илсе параҫҫӗ, нумай пулмасть кӗтӳ пӑхса ҫӳренӗ ҫынсем Совет Союзӗн Геройӗн ятне илеҫҫӗ...



Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов летчик чăваш писателĕсем хушшинче. 1942 çул. П. Сизов ӳкерчĕкĕн репродукцийĕ.

Аркадий Ĕçхĕл «Ăмăрткайăк» поэмăра иртнĕ вăрçă вăхăтĕнчи йывăр, анчах çĕкленӳллĕ лару-тăрăва лайăх сăнласа кăтартнă.

Чăваш халăх поэчĕн Стихван Шавлин сасси çав çулăмлă çулсенче тата çирĕпреххĕн янрама тытăнать.

Поэт 1910 çулта, сентябрь уйăхĕн 15-мĕшĕнче, халĕ Куйбышев облаçне кĕрекен Шунтал районĕнчи Чулçырма ялĕнче çуралнă. Унăн ашшĕ-амăшĕ чухăн хресченсем пулнă. С. Шавли ялти шкулта, унтан Куйбышев хулинчи рабфакра вĕреннĕ. Рабфакра вĕреннĕ чухнех Куйбы-

шевра тухса тăнă «Колхозник» ятлă чăваш хаçатĕнче ĕçленĕ. 1939 çулта, Хусанти пединститутран вĕренсе тухсан, пурăнма тата ĕçлеме Шупашкара куçнă. Творчествăри çитĕнӳсемшĕн С. Шавлие Чăваш халăх поэчĕ, Чăваш АССР культурин тава тивĕçлĕ работникĕн хисеплĕ ятне панă.

Поэт 1976 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнче вилнĕ.

Çамку çине
Çак сăвă пултăр кĕлеме,
Вулатăр халăх, суртăр лач!
Шалçу тулать, эс тивĕç кĕлленме,
Палач! —

тесе ылханать сăвăç каппайчăк фюрера 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче. «Кăçхи Атăл хĕрринче», «Пирĕн гварди», «Степан Волков каласа хăварни», «Тулон матросĕсем», «Реквием», «Салтак тупи» сăвăсенче, «Киев пионерĕ», «Зоя», «Маттур Якур» поэмăсенче Стихван Шавли пĕтĕм совет халăхĕ — вăйпитти çынсем те, ватăсемпе ачасем те — сĕмсĕр тăшмана хирĕç кар тăрса тухни, çав аслă вăрçăра фронтпа тыл пĕрлĕхлĕ пулни çинчен ĕнентерӳллĕн те курăмлăн çырса кăтартать.

«Маттур Якур» поэма — ачасен вăрçă вăхăтĕнчи хастарлă ĕçĕ-хĕлĕ çинчен. Якур хăйсен ялне Украинăран эвакуаци йĕркипе пынă Остаппа туслашать, шкулта лайăх вĕренет, фронт валли ăшă япаласем пухассине йĕркелет, çывăхри госпитале апат-çимĕç кайса леçет. Якур тимленипе ялти пĕтĕм ача-пăча усăллă ĕçе пикенет.

«Зоя» поэмăра С. Шавли чăваш хĕрĕн Зоя Семенова радисткăн паттăрла ĕçне сăнласа кăтартать. Вунсаккăрти комсомолка командовани хушнипе тăшман тылне каять, унтан хамăрăн артиллерие координатсем парать. Нимĕçсем хăйсен ĕç ăнманнипе сехĕрленсе ӳкеççĕ: «Пĕтĕрĕнсе çĕре ӳкеççĕ фрицсем, ганссем, шульцсем, штоксем... Сывлăшалла ĕрĕхтереççĕ снаряд тиенĕ составсем. Пуçне хыçать чĕр юлнă нимĕç: «Тĕнче пĕтсе килет элле! Ак вырăс те, çитерчĕ çимĕç... Ăçтан перет? Тĕлĕнмелле!»

Зоя паттăр вилĕмпе вилет.

Эс чаплă Зойăпа пĕр ятлă,
Шăпу та санăн унни пек,
Ĕçӳ те унни пек хăватлă,
Вилме те вилтĕн эс ун пек,—

тет радистка çинчен автор.

Андрей Петтоки, Владимир Бараев, Максим Ястран, Илья Думилин, Кĕçтук Кольцов, Иван Викторов, Николай Пиктемир, Арсен Орлов, Василий Васькин, Николай Чурпай вăрçă тухичченех поэзире палăрма ĕлкĕрнĕ. А. Петтоки, сăмахран, хăйĕн «Çирĕм иккĕ» поэмине Хĕрлĕ çара халаллать, В. Бараев «Али-паттăр» сăвăлла юмах çырать, И. Думилин социализмла çĕршывăмăр çĕнелсе улшăннине курса çӳренĕ хыççăн «Тапраннă çурçĕр» ятлă ярăм кĕвĕлет, Максим Ястранăн «Çич çунатлă кайăк», «Асамлă лампа» тата «Темĕскер — мĕскер» ятлă сăвăлла юмахĕсем халăхăн иксĕлми вăйĕпе хăватне мухтаççĕ...

Çак пултаруллă сăвăçсем вăрçăра пăшалпа та, перопа та тăшмана хирĕç хастарлă çапăçаççĕ. Акă епле пысăк шанчăк капланса тăрать М. Ястранăн «Паттăр Хĕрлĕ Çар» сăввинче:

Урăм-сурăм тăвăл витĕр
Пĕр хутчен çеç мар
Çĕнтерӳллĕн тухнă пирĕн
Паттăр Хĕрлĕ Çар.

Акă халь тискер фашизм
Сĕкĕнчĕ вăрçа...
Тĕп туса ăна аркатĕ
Паттăр Хĕрлĕ Çар.

Хурçă алсемпе çĕкленĕ
Хĕрлĕ ялава
Çĕнтерӳллĕн варкăштарĕ,
Тухĕ мухтава!

Ку сăмаха Совет Çарĕ чăнах та тӳрре кăларчĕ, тăшман йăви тăрринче Çĕнтерӳ ялавĕ мăнаçлăн варкăшрĕ, анчах та паттăр салтак-сăвăçсем çав телейлĕ те савăнăçлă куна кураймарĕç, юратнă тăван çĕршывшăн çапăçса вăрçă хирĕнче пуçĕсене хучĕç.

1973 çулта Чăваш кĕнеке издательстви «Вĕçлеймен юрăсем» ятлă сăвăсен пуххи пичетлесе кăларчĕ. Унта та Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче пуç хунă çамрăк авторсен сăввисем кĕнĕ. Çӳлерех асăннă поэтсен вăрçăччен пĕрер е икшер кĕнеке те пичетленсе тухнă пулсан, «Вĕçлеймен юрăсен» авторĕсем вара хаçат-журналсенче темиçешер сăвă çеç кăларма ĕлкĕрнĕ. Çамрăк пулнă вĕсем, пысăк та çутă ĕмĕтлĕ пулнă, анчах ылханлă вăрçă телейлĕ малашлăха татнă.

Пурнăçа, вăхăта сăнарлăн ўкерсе пама тăрăшнипе, совет çыннисен патриотизмне кăтартнипе уйрăлса тăраççĕ кĕнекери сăвăсем.

Арăслан пек паттăр пулнă çав салтаксем, поэзипе чунтан туслашнăскерсем. Виктор Шуреков, сăмахран, 22 çултах капитана çитнĕ, ăна Хĕрлĕ Çăлтăр, Хĕрлĕ Ялав орденĕсемпе наградăланă. Аслă Арапуç çыннин Иван Алексеевăн фронтри паттăрлăхĕ çинчен Мускавра çапăнса тухнă «Говорят погибшие герои» кĕнекере тĕплĕн çырса кăтартнă. Курск патĕнчи çапăçусенче палăрнă Иван Чекушкин политрук пирки те çавнах каламалла.

Кĕскен те пулин çак хастар çамрăксен пултарулăхĕ çинче чарăнса тăрăпăр. Акă мĕнле хĕрўлĕхпе тупа тăвать Вениамин Туртуш (1912—1943) çĕршывăмăр умĕнче:

Юн чĕнет тавăрма шеллемесĕр,
Юн чĕнет тăшмана аркатма!
Фашистла çĕлене çĕнтермесĕр
Ырă кун пулас çук пурăнма!

Комсомол ретĕнче çитĕннĕскерсем, вĕсем халăх умĕнчи тивĕçе чун-чĕререн ăнланнă, çĕршыв умĕнчи юрату тĕнчери чи аслă, чи вăйлă юрату иккенне хăйсен пурнăçĕпе çирĕплетсе пынă. Çакна эпир Николай Горшковăн (1924—1943) çапăçу умĕнхи кĕске сăввинче те аван куратпăр:

Тăван çĕршыв-анне! Сана хам вăйăмпа
Тивĕçлине парса пахалаймарăм.
Сан мухтавна, чысна çĕклеп те кăкăрпа
Вăрçа кĕреп. Ку ман вăл — тивĕç, парăм.

Мĕн тери пархатарлă хавхалану! Совет çыннисем шăпах çапла шухăшланăран, хăйсен пурнăçри вырăнне çапла ăнланнăран çĕнтерчĕ те ĕнтĕ мухтавлă Союзăмăр иртнĕ вăрçăра.

«Вĕçленеймен юрăсем» — паттăрсене асăнса лартнă палăк. Ун çинче ылтăнпа çырнă ятсем çиçеççĕ. Акă вĕсем: Елизар Абакшин, Иван Алексеев, Николай Горшков, Григорий Калинин, Генрих Катрамов, Иван Кузьмин, Имет Лисков, Исливан Лисков, Порфирий Лукоянов, Николай Митта, Гаврил Мыскар, Николай Пиктемир, Василий Романов, Пракка Сатур, Илья Семенов, Геннадий Сергеев, Вениамин Туртуш, Иван Чекушкин,

Виктор Щуреков, Семен Элём, Варфоломей Эншей. Ĕмĕр-ĕмĕр мухтавлă пулĕç çак пархатарлă ятсем!

Кунта вăрçă вăхăтĕнчи фольклор пирки те асăнса хăвармалла. Унта халăх шухăш-кăмăлĕ, ăс-хакăлăн çивĕчлĕхĕ уççăн палăрса тăраççĕ. Сăмах вĕççĕн çӳрекен сăвă-юрăсем, такмаксем, халап-юмахсем, ваттисен сăмахĕсем, пĕр енчен, хамăр салтаксен, партизансен, тылри ĕçченсен паттăрлăхĕпе хастарлăхне çунатлă сăмахсемпе мухтанă, тепĕр енчен, фашистсен этемле мар хăрушă сăнарне куç умне кăларнă, вĕсене хирĕç гата хаяртарах-хăн çапăçма чĕннĕ.

Чăваш писателĕсем 1941 çулта «Фашизма хирĕç» ятлă фольклор кĕнеки кăлараççĕ. Ăна хатĕрлес ĕçе И. Патмар, В. Долгов, Иван Мучи, А. Кăлкан, Г. Краснов, М. Ястран, С. Шавли уйрăмах хастар хутшăнаççĕ. Акă мĕнле çивчĕ такмаксем хывнă халăх:

Йытă тейĕн — çăмĕ çук,
Этем тейĕн — сăнĕ çук.
Çавă ĕнтĕ çынçиен —
Гитлер ятлă юнĕçен.

Салакайăк пулас мар,
Пуçа усса ларас мар.
Гитлер чури пулас мар,
Ĕмĕр хурлăх курас мар.

Вăрçă çулĕсенче халăх юрăçисем хăйсен пултарулăхĕпе палăраççĕ. Гаврил Федоров, Антун Мучи тата ыттисем те витĕмлĕ сăвă-юрăсем хываççĕ. Вĕсенчен пĕри, Кашкăр Микули, тăшмана хирĕç çапла çапăçма чĕнет:

Çап фашиста урарап,—
Вăл малалла ан уттăр!
Хăйĕн юнлă урине
Пирĕн çĕре ан пустăр.

Çап фашиста аллинчен,—
Тупрана вăл ан илтĕр!
Пирĕн халăх вăйĕпе
Текех ан киленейтĕр.

Чик фашиста хырăмран —
Пирĕн тырра ан çитĕр!
Çĕлен-калта ăшĕнче
Çăкăр-тăвар ан çĕртĕр.

Сăмах вĕççĕн çӳрекен произведенисем фашиста, çĕ-

лен-калта йăхне, сатира вучĕпе çунтараççĕ, хамăр çĕршыва, Коммунистсен партине, Октябрьте çуралнă саманана мухтаççĕ, халăх вĕсемшĕн çĕнтерӳ кунĕччenех паттăррăн çапăçма хатĕрри çинчен калаççĕ.

Фольклор поэтсемшĕн яланах чĕрĕ çăлкуç пулнă. Вăрçă вăхăтĕнче çырнă сăвăсемпе поэмăсенче, юптарусемпе балладăсенче эпир çавна аван куратпăр. П Хусанкай, сăмахран, «Таня» поэминче чăваш юмахĕнчен, Вупăрпа Хĕвел вăрçнинчен пуçлать:

Эпĕ илтнĕччĕ пĕр юмах-халап
Сар Хĕвел хĕрĕ Хĕвелпи çинчен...
Тахçантан тахçан, ĕлĕк авалах
Вупăрпа Хĕвел вăрçнă пĕринче...

А. Ĕçхĕлĕн «Ăмăрткайăк» поэминче Якур мучи çамрăк Хветута этемĕн шанчăклă тусĕ пулнă ăмăрткайăк çинчен юмах ярса парать. Çав ăмăрткайăк Хăрпан патшан икĕ пуçлă ăмăрткайăкне çапса антарать. Çапла вара ирĕк юнлă вăрçăра пусмăра çĕнет.

Çак юмахпа ыранлă усă курни поэма тĕп шухăшне лайăхрах уçса пама пулăшать.

Кун пек тĕслĕхсем Я. Ухсай, А. Алка, С. Шавли тата ытти поэтсен пултарулăхĕнче те сахал мар.

Вăрçă çулĕсенчи поэзи пирки пĕтĕмлетсе кĕскен калас пулсан, çакна палăртмалла. Çĕршыв çине хура пĕлĕт хупланса килнĕ тапхăрта пирĕн сăвăçсем хăйсен тивĕçне нихçанхинчен те ытларах туйса ĕçлеççĕ, пурнăçа тарăннăн, витĕмлĕн, ĕнентерӳллĕн сăнарласа кăтартаççĕ. Совет çыннин таса чун-чĕри, унăн ăнланулăхĕ, паттăрлăхĕпе ĕçченлĕхĕ çав произведенисенче тĕп вырăн йышăнать. Пĕр сăмахпа каласан, çав сăвăсемпе поэмăсем бомбăсемпе снарядсем пекех вăйлă хĕçпăшал пулса тăраççĕ.

## МИР — ПУРНĂÇА, ВИЛĔМ — ВĂРÇА!

**(1946—1953)**

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине çĕнтерӳпе вĕçленĕ хыççăн совет халăхĕ юхăннă хуçалăха юсама тытăннă. Экономикăра, наукăпа техникăра çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕ-



Фронтовик писательсен пӗр ушкӑнӗ (сулахайран сылтӑмалла), лараҫҫӗ: Г. Краснов-Кӗҫӗнни, А. Алка, Г. Орлов, В. Алакер, Н. Дедушкин; тӑраҫҫӗ: Г. Харлампьев, Н. Евстафьев, М. Белов, В. Алентей, Л. Агаков.

нӳсем тунӑ. Паллах, культура тӗлӗшӗнчен те асӑннӑ ҫулсем пысӑк ӳсӗмлӗ пулнӑ. Пур жанрсене те илес пулсан, ҫав тапхӑрта ҫырнӑ паллӑрах произведенисем шутне С. Элкерӗн «Вунсаккӑрмӗш ҫул» драмине, М. Трубинан «Ача чухнехи» повеҫне, П. Хусанкайӑн «Аптраман тавраш» сӑвӑлла романне, Я. Ухсайӑн «Ҫул» («Ту урлӑ ҫул») поэмине, А. Талвирӑн «Пӑва ҫулӗ ҫинче» повеҫне, Ҫ. Турханӑн «Йӑмраллӑ ял» романне, Л. Агаковӑн «Ылтӑн вӑчӑра» повеҫне, А. Алкан «Хамӑр ялсем» поэмине кӗртмелле.

Малалла аталанса пынӑ май чӑваш поэзийӗ тӗрлӗрен пысӑк темӑсем хускатать. Ҫапах та совет ҫыннин-ҫӗнтерӳҫӗн характерне уҫса парасси, унӑн вӑрҫӑри паттӑрлӑхне кӑтартасси, ҫав иксӗлми паттӑрлӑх мӗнле ҫӑлкуҫран тапса тӑнине ҫырса кӑтартасси,— ку тапхӑрти поэзин тӗп темисенчен пӗри пулнӑ. Ку лирикӑра та, эпикӑра та уҫӑмлӑнах палӑрать.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче поэтсем вутпа-ҫулӑмра ҫырнӑ сӑвӑсемпе поэмӑсене пухса кӑлараҫҫӗ, ҫӗнӗрен те нумай ҫыраҫҫӗ. Ухсайӑн, сӑмахран, «Салтак кӗнеки» (сӑвӑсем, 1947), «Сӑвӑсемпе поэмӑсем» (1947), «Вырӑс ачи» (поэма, 1950), Алкан «Тӑватӑ ҫулталӑк» (сӑвӑсем, 1947), Сӑвӑсемпе поэмӑсем» (1948), «Ҫулӑм витӗр ҫул выртать» (1948), Тукташӑн «Хӗвел» (сӑвӑсем, 1947), Уйӑп Мишшин «Ҫутӑ ҫул» (сӑвӑсемпе поэмӑсем, 1948) тата ытти кӗнекесем те кун ҫути кураҫҫӗ.

Халӑхӑн вӑрҫӑри паттӑрлӑхӗ, туслӑхӗ, патриотизмӗ А. Алкан «Ҫулӑм витӗр ҫул выртать» поэминче аван курӑнать. Семенюк украинецпа Ҫавалов чӑваш тӑван ҫӗршывшӑн паттӑрла ҫапӑҫаҫҫӗ, пӗр-пӗрне пулӑшаҫҫӗ, хута кӗреҫҫӗ. Чӑваш ачи Петӗр украина хӗрне Олеҫӑна хӑйӗн кӗлеткипе хӳтӗлесе вилет. Ҫакӑ мар-и-ха ӗнтӗ халӑхсен арканми туслӑхӗн тӗсӗ, ленинла наци политикин ҫӗнтерӳ палли?

Нимӗҫ фашисчӗсене аркатасса шанса, пӗр пулса ҫапӑҫаҫҫӗ тӗрлӗ наци ҫыннисем, ҫӗнтерӳ ячӗпе ҫулӑм ӑшне кӗреҫҫӗ.

Стихван Шавли хӑйӗн «Ватӑ салтак» поэминче вӑрҫа хӑй ирӗкӗпе кайнӑ чӑваш писателӗ Максим Николаевич Данилов-Чалтун ҫинчен ӑшшӑн ҫырать. Ҫар комиссарӗ аллӑри ҫынна фронта яма тӑхтать, анчах ҫамрӑк чухне Кузбасра шахтерта ӗҫленӗ, Псков таврашӗнче Хӗрлӗ Гвардире ҫӳренӗ, сутӑнчӑксене тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ

патвар çын Мускава çыру çырать, унта вара патриот ыйтăвне тивĕçтерeççĕ:

Тăват кун иртрĕ, çитрĕ телеграмма:
«Ҫилĕшмелле Данилов юлташпа.
Салтак ятне яман вăл. Ямĕ.
Ăсатăр чыслăн. Халăхпа».

Ҫĕнтерме тухса каять писатель фронта. Рота политрукĕ пулса çапăçать вăл, вăтăр виçĕ хаяр тытăçăва кĕрет, кашнинчех совет салтакĕсене ырă тĕслĕх кăтартать. Анчах вăтăр тăваттăмĕш атака умĕн вăл ывăлĕ вăрçăра вилни çинчен хыпар илет. Йывăр хуйхă патриот чĕрине курайманлăх вучĕпе çунтарать. Тата хĕрӳллĕрех çапăçать ватă салтак.

Ак вăл, акă
Хускалчĕ, тăчĕ талпăнса.
Шăлне вăл хыттăн-хыттăн çыртрĕ,
Ҫилли капланчĕ вĕресе.
— Юлташăмсем, халь вăхăт çитрĕ,
Ман хыççăн, арăсланăмсем!

Пĕр çапăçура писатель-политрук вилмеллех аманать.

«М. Данилов-Чалтун сăнарĕ урлă поэмăра эпир ытти халăхсемпе пĕрле вилме мар — çĕнтерме вăрçа çĕкленнĕ чăваш халăхне куратпăр»,— тесе çырать ку произведени пирки Н. Евстафьев поэт [1].

Мир темипе А. Кăлкан та нумай ĕçлерĕ.

Александр Кăлкан (Александр Дмитриевич Антонов) 1911 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче Тутар республикинче, Пăва районĕнчи Ҫĕнĕ Мертлĕ ялĕнче çуралнă. Хусанта чăваш педтехникумĕнче, педагогика институтĕнче, Мускавра Литература аслă курсĕнче вĕреннĕ.

Кăлкан Чăваш АССР Халăх комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи искусство управленийĕн начальникĕ, «Тăван Атăл» альманах редакторĕ пулнă, Писательсен союзĕн правленийĕнче ĕçленĕ. Халĕ — писатель-профессионал, 1945 çултанпа Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ.

Хăйĕн сăввисемпе юррисенче, юптарăвĕсенче А. Кăлкан тĕнчене вăрçă вут-çулăмĕ хыптарас ĕмĕтпе пурăна-

[1] *Н. Евстафьев.* «Ватă салтак» поэма çинчен, «Ялав», 1947, 8 №, 30 стр.

кансене питлет, тӳрĕ кăмăллă ĕççыннисене мулшăн çунакансемпе кĕрешме чĕнет:

Эй, тӳр кăмăллă çынсем!
Çул ан парăр вут-вăрçа.
Тĕнчипе кар! çĕкленсе,
Сыхлăр мирлĕ пурнăçа!

Эсрелсем тĕп тăвасран
Сыхлăр çĕр-аннемĕре!
Тытăр яланах асра:
Пирĕн вăл — пĕртен пĕрре!

Уйăп Мишши «Çуралнă çĕршыв» ятлă лирикăлла поэма çырчĕ. Поэт хăй çĕршывĕпе, унăн çыннисемпе мухтанать, хăйĕн çарти юлташĕсене аса илет. Уйăп Мишши вăрçăчченех ялан сыхă тăма кирли çинчен асăрхаттарнă пулсан, вăл халĕ те, Тăван çĕршыв Аслă вăрçи çĕнтерӳпе вĕçленнĕ хыççăн, сыхлăх çинчен манмасть. Пĕр тăшман тĕп пулчĕ, анчах социализм çĕршывĕсен тăшмансем нумай-ха, вĕсем кирек хăш вăхăтра та çĕлен пек пуçне çĕклеме пултараççĕ.

Поэмăра эпир чăваш халăхĕ кĕрешӳре те, ĕçре те Совет Союзĕнчи ытти халăхсем пекех хастарлă, хăюллă, паттăр пулнине куратпăр.

Çил-тăвăлсем хускатнă вăрмана
Тапранчĕç ирĕк халăхсем пĕр харăс.
Ман халăх та çĕкленчĕ пĕр çынла,
Вăл тытăçрĕ мурпа арăсланла,
Ун аттисем тăшман çĕрне таптарĕç.
Вăл паттăр пулчĕ чаплă ĕçĕпе,
Ахальтен мар вăл хăй юнне юхтарнă.
Вăл чăвашла, çап-çут штык вĕçĕпе
Хаяр çĕнтерӳçсен тивĕçĕпе:
«Эп Берлинра!» тесе çырса хăварнă.

Вăрçă хыççăнхи тапхăр чăваш литературине талантлă çыравçăсен çĕнĕ ушкăнĕ кĕнипе паллă. Вĕсем хушшинче Н. Евстафьев, В. Давыдов-Анатри, Г. Ефимов, М. Хури, А. Афанасьев, В. Алентей палăрса тăраççĕ.

Çарпа патриотизм теми Н. Евстафьев пултарулăхĕнче пысăк вырăн йышăнать

Николай Филиппович Евстафьев 1918 çулта, апрелĕн 14-мĕшĕнче, халĕ Куйбышев облаçĕн Клевлĕ районĕнчи Йĕкер ятлă ялта çуралнă. Пĕчĕклех тăлăха тăрса юлнăскере, ăна учительницăра ĕçленĕ аппăшĕ тата пи-

ччĕшĕсем çитĕнтернĕ. Похвиçнĕри ялхуçалăх техникумĕнчен вĕренсе тухсан, 1938-мĕш çулта, Н. Евстафьев Хĕрлĕ Çара каять, унта 1945-мĕш çулччен пулать.

1950 çулта Н. Евстафьевăн «Паттăр ывăлĕ» поэми уйрăм кĕнекен пичетленсе тухать. Унта автор Игнат Вашаватов пурнăçĕпе паллаштарать. Вăл ачаллах тăлăха юлнă, ашшĕ граждан вăрçинче Совет влаçĕшĕн çапăçса вилнĕ, амăшĕ, унтан та маларах, пуянсем патĕнче тарçăра ĕçленĕ чухнех çĕре кĕнĕ. Игната ача çуртне вырнаçтараççĕ, пăхса ӳстереççĕ, пĕлӳ параççĕ. Ӳссе çитсен, вăл агроном пулать, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан, совет çĕрне хӳтĕлеме тухса каять. Çапла вара автор совет саманинче ӳссе çитĕннĕ çамрăкăн пысăк шайри ăнланулăхне, вăл çĕршыв кунçулне, халăх шăпине хăй пурнăçĕнчен мала хунине кăтартать.

«Хĕвеле хирĕç» ятлă лиро-эпикăлла поэмăра Н. Евстафьев Совет Çарĕ халăхсен ирĕклĕхĕшĕн тăракан çар пулнине, мирлĕ çĕршывсемпе халăхсемшĕн вăл шанчăклă хӳтлĕх пулса тăнине аван сăнласа панă. Совет салтакĕсем вилес пек выртакан монгол хĕрне Цембăна сыватаççĕ, монгол халăх çарĕпе пĕрле Халхин-Гол патĕнчи çапăçура Япони самурайĕсене аркатса тăкаççĕ.

Совет Çарĕн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи паттăрла ĕçĕсем çинчен çырнă пысăк калăплă произведенисем чăваш совет поэзийĕнче ку таранччен пулман, çавăнпа та Н. Евстафьев поэми те, унăн сăввисен ярăмĕсем те литературăшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ.

В. Давыдов-Анатри сăввисем халăхăн сăмах вĕççĕн çӳрекен пултарулăхне çывăх тăраççĕ, çавăнпах-и тен пирĕн композиторсем вĕсене час-часах юрра хываççĕ. Сăвăюрăсен теми — Тăван çĕршыв илемĕ, хăвачĕ, унăн çыннисем, çамрăксен таса юратăвĕ. Поэтăн сыхлăх, вăрçă темипе çырнă сăвăсем те сахал мар.

Василий Иванович Давыдов-Анатри 1917 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнче, Патăръел районĕнчи Аслă Арапуçĕнче, хресчен çемйинче çуралнă. Ялти вăтам шкултан, республикăри хаçат шкулĕнчен, учительсем хатĕрлекен институтран вĕренсе тухнă. Райхаçат редакцийĕнче, Радиоинформаци комитетĕнче, КПСС Чăваш обкомĕн пичет секторĕнче, кĕнеке издательствинче ĕçленĕ. Халĕ — писатель-профессионал. Чăваш АССР культурин тава тивĕçлĕ работникĕ.

1950 çулта çырнă «Эпир миршĕн» юрăра вăл çапла калать:

Тăван халăх сасси янăрать:
Вăрçа хирĕç эпир пĕр çын пек!
Ҫам чунтан пурнăçа юратать,
Ҫав çĕклентĕр паян пирĕнпе.

Ялкăш, ялкăш мухтавлăн,
Ҫĕнтерӳллĕ ялав.
Мирлĕ пурнăç, хăватлăн
Эс çĕклен, вăйлăлан.

«Юлташ тăпри» сăвăра поэт çапăçу хирĕнче пуçне хунă салтак вилтăпри умĕнче пуç таять.

Ĕмĕр-ĕмĕр упрар чĕрере
Хамăр çывăх юлташăн ятне.
Ӳкермен вăл нихçан та çĕре
Пурнăçпа çĕнтерӳ ялавне.

В. Давыдов-Анатрин ку темăпа çырнă пысăкрах произведенийĕсенчен «Ҫутă хĕç» балладăна палăртмалла.

Вăрçă Иван Малкай пултарулăхĕнче те паллă йĕр хăварать.

Иван Малкай (Иван Григорьевич Григорьев) 1911 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче Ҫĕрпӳ районĕнчи Первомайски ялĕнче çуралнă. Ҫĕрпӳри сакăр çул вĕренмелли шкулта, Шупашкарти стройтехникумра, Горькири комуниверситетра вĕреннĕ.

Вăрçă çулĕсенче Совет Ҫарĕн салтакĕ пулнă, унтан таврăнсан Радиоинформаци комитетĕнче, хаçатсен редакцийĕсенче ĕçленĕ.

Ҫĕршыва хӳтĕлесси, миршĕн кĕрешесси—кашни çыннăн чыслă тивĕçĕ. Ҫак шухăша И. Малкай «Пирĕн çар», «Тĕрĕслĕх хăвачĕ», «Тинĕс салтакне» сăвăсенче лайăх, витĕмлĕн каланă. Унăн маларах çырнă «Манас çук эс ăна» сăвви салтак пурнăçĕн йывăрлăхне кăтартать:

Шăхăрса, ӳлесе çил вĕрет кассăн-кассăн,
Вăл сана та лăскать, вĕçтерет ыйхуна.
Ҫĕрхи каç окопра выртса куртăн пулсассăн —
Ĕмĕрне те, нихçан манас çук эс ăна.

Ҫапла, çĕнтерӳ нихçан та çăмăл килмест. Ҫам тĕрĕслĕх вăйне ытларах ăнланать, кам тăван çĕршыва ытла-

рах юрататъ, çавă çеç мĕнпур йывăрлăх витĕр тухса çĕнтерӳ патне çитме пултарать.

И Малкайăн 1943 çулта çырнă «Шурă кăвакарчăн» сăвви халăхра анлăн сарăлчĕ.

Ку çулсенче чăваш поэзийĕнче çамрăк авторсем те ăнăçлă, вăрçăпа мир çинчен самаях витĕмлĕ сăвăсем чылай çыраççĕ. Акă Ехрим Иванĕн пĕр сăвви:

Пĕтрĕ вăрçă. Юлтăм сывă.
Кĕç ак таврăнтăм киле.
Мăшăрăм çуратĕ ывăл,
Ятне хурăпăр Илле.

Ӳссе çитĕ, пысăк пулĕ.
Вăл ăнкарĕ ун чухне
Ашшĕ тухнă вăрçă çулĕ
Мĕн пек йывăр пулнине.

Пĕлĕ: мĕн вăл пурнăç хакĕ;
Мĕншĕн кăкăрĕ çине
Ашшĕ ун — Совет салтакĕ,—
Икĕ орден çакнине.

Нимĕн те калаймăн, ăшă сăвă, салтак чунĕпе çырнă сăвă. Николай Урпай, Василий Эрченеш, Николай Дальнов, Егор Афанасьев, Александр Клементьев, Александр Каттай, Василий Веселов, Кăсăя Васлейĕ сăввисем те хаçат-журналсенче час-часах пичетленнĕ.

1945—1953 çулсенче писательсем халăхăн вăрçăри паттăрлăхне кăтартакан, миршĕн çине тăрса кĕрешме чĕнекен произведенисем нумай çырнă. Чăваш поэчĕсем ушкăнпа кăларнă «Аслă çĕнтерӳ» тата «Миршĕн» кĕнекесем те çавăн çинченех калаççĕ.

«Аслă çĕнтерӳ» сборникре Я. Ухсай, А. Ĕçхĕл, С. Шавли, И. Малкай, И. Тукташ сăввисем пичетленнĕ. Вĕсене вуласан совет халăхĕн патриотизм туйăмĕ аталанса, сарăлса, нумай халăхсем хушшинчи туслăх туйăмĕсем ӳссе, тарăнланса пынине курма пулать. Сăвăçсем аслă çĕнтерĕве мухтаса юрлаççĕ, вăл мĕнле сăлтавсенчен килнине уççăн, тĕрĕссĕн кăтартаççĕ.

«Миршĕн» кĕнекен умсăмахĕ те сăвăлла. Унăн айне автор ятне çырман, апла пулин те эпир миршĕн чун-чĕререн кĕрешнĕ поэтăмăр Петĕр Хусанкайăн хĕрӳ сассине тӳрех уйăрса илетпĕр:

Миршĕн! Пĕр сăмахпа ят хуратпăр
Эпир çак сăвăсен пуххине.

Мир пулсан пурте пулӗ: Ҫын — паттӑр
Паллайми тӑвӗ ҫӗр сӑн-питне.

Ҫӗнӗрен тинӗссем кӗмӗлленӗҫ,
Ӳссе ҫитӗ тин лартнӑ вӑрман.
Пучахсем шӑрӑхпа вӗтеленмӗҫ,
Тарӗҫ типӗ ҫилсем пусӑран.

Вӑрҫӑшӑн ҫунакан мулҫӑсен сӑнарне эпир С. Элкерӗн «Эп — ватӑ салтак» сӑввинче куратпӑр. «Америк хурахӗ — хура ҫӗр ҫӑтасшӗ — юнласшӑн мӗнпур анӑҫа-тухӑҫа», — тет поэт. Ҫав хурахсем «каллех мӗльюн чӗр пуҫа ҫиме хатӗр», вӗсем Корея ӳтне чӑрмалаҫҫӗ, Вьетнамри халӑх влаҫне тӑшманнӑн кураҫҫӗ. Вӗсем, Трумэнпа Черчилль ӗрчетнӗ ҫӗленсем, атом бомбипе сиксех мухтанаҫҫӗ, ӗҫлӗ халӑха ытларах пӗтерме, вӗсен юнне юхтарса пуйма ӗмӗтленеҫҫӗ.

Кӗнекери сӑвӑсен йӗркисем хӗрӳ хӗлхем пек сирпӗнеҫҫӗ, чунра курайманлӑх ҫуратаҫҫӗ, миршӗн кӗрешес ӗҫре ҫирӗп пулма чӗнеҫҫӗ.

Ман ят чапа тухса ҫуталӗ
Историксем ҫырнисенче, —
Теесшӗн мар тӑват ҫулталӑк
Эп утрӑм вӑрҫӑ хирӗнче, —

тет халӑх поэчӗ Яков Ухсай.

Вутлӑ тӑвӑл тухсан,
аслати кӗрлесен,
Тӑшмана аркатма
улӑпла ҫӗкленетпӗр, —

тупа тӑвать Илле Тукташ.

Колорадо нӑррисем —
Саррисем, хӑмӑррисем —
Тӗрлӗ трумэн-черчилльсем,
Ачесон-макартурсем
Пӗтӗм ҫӗрӗн чӑмӑрне,
Пӗтӗм ҫӗрӗн кӑкӑрне
Ҫавӑрса сырса илесшӗн,
Типӗтсе, хӗртсе ӗмесшӗн.
Хускалаҫҫӗ кӗшӗл-кӗшӗл, —
Йӑтӑнаҫҫӗ вӗшӗл-вӗшӗл, —

тесе питлет тӑшмансене Стихван Шавли.

Пысӑк та мар ку кӗнеке, анчах вӑл мир кӑвакарчӑнӗ пекех ҫунатлӑ, кашни ҫын патне ҫитет, кашнин чунне

вутлантарать. Акă мĕнле шая çĕкленнĕ пирĕн поэзин гражданла лирики!

Унти сăвăçсем кăшкăруллă, поэтсем риторика тыткăнне кĕрсе ӳкнĕ тесе никам та калаймĕ. Пысăк эстетикăлла туйăм, анлă тавракурăм, хĕрӳллĕ патриотизм çав сăвăсене çӳллĕ шая çĕклеççĕ.

## ÇĔРШЫВĂН ХАСТАР АЧИСЕМ

**(1953—1975)**

Аллăмĕш çулсен пуçламăшĕнче чăваш поэзине вăрçă вут-çулăмĕ витĕр утса, пиçĕхсе тухнă сăвăçсен йышĕ килет. Н Сандров, В. Урдаш, Г. Орлов, А. Афанасьев, В. Алентей, А. Воробьев хăйсен пĕрремĕш кĕнекисене пичетлесе кăлараççĕ.

Паллах, кирек епле писатель те çырнă чухне хăйĕн пурнăç опычĕ çине таянать, хăй мĕн курни, мĕн тӳссе ирттерни çинчен çырать. Асăннă сăвăçсем, алла хĕçпăшал тытса çуралнă çĕршывшăн çапăçнăскерсем, хăйсен литературăри çул-йĕрне вăрçă çинчен çырнă сăвăсемпе поэмăсенчен пуçлаççĕ. Акă мĕнле аса илет йывăр кунсем çинчен Николай Сандров:

Чи лайăх вăхăта эп вăрçăра ирттертĕм,
Пăрлантăм юр çинче, ислентĕм шурлăхра.
Хĕрсе вĕренес чух эп тупăран тĕллерĕм,
Хĕре чуптăвас чух — юн тулчĕ çăвара.

Пин градуслă вутра металл та, çĕр те çунчĕ.
Вутра çунман, шывра путман эпир.
Мускавăн çăлтăрĕ сӳнмерĕ, йăлкăш юлчĕ,
Хĕвеллĕ май пире пиллерĕ мир.

Илтсемĕрччĕ, пур çын та тĕнчере,
Кунçулăмăр килет пĕрле кар тăнинчен.
Каллех ан хыптăр вут ешерекен Çĕре,
Шутлар хыпса кайсан мĕн пуласси çинчен!

«Кунçулăмăр килет пĕрле кар тăнинчен...» Çапла, пирĕн ешерекен çĕре вут ан хыптăр тесен, алла-ал тытăнса кĕрешмелле. Миршĕн кĕрешесси — кашни çын тивĕçĕ. Вăрçа сирсе пымасан, куллен тăрăшса ĕçлени, пĕрчĕнпĕрчĕн пухнă ырлăх-пурлăх та ахалех сая кайма пулта-

рать, ачамӑрсен пуласлӑхӗ те тӗттӗм каҫ пек хуралса, тӗтӗм пек йӳҫӗхсе килет. Сӑвӑҫ ҫакна пӗтӗм чун-чӗрипе ӑнланать.

Николай Сандров (Николай Александрович Александров) 1922 ҫулта январӗн 15-мӗшӗнче Тӑвай районӗнчи Чӳкҫырми ялӗнче ҫуралнӑ. Тӑвайри вӑтам шкулта, Шупашкарти строительство техникумӗнче, педагогика институтӗнче вӗреннӗ. Кӗнеке издательствинче редакторта ӗҫленӗ.

1942—1946 ҫулсенче Совет Ҫарӗнче пулнӑ, вӑрҫа хутшӑннӑ.

«Партбилет», «Варшав ҫывӑхӗнче» сӑвӑсенче, «Вутра» ятлӑ лирикӑлла поэмӑра Н. Сандров вӑрҫӑри ӳкерчӗксене, ҫапӑҫури сӑнсене куҫ умне кӑларать. Аслӑ халӑхӑн паттӑрлӑхне вӑл тивӗҫлипе мухтать, тӗрӗслӗхшӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ӳксе юлнӑ тусӗсене аса илет. «Сӑнӳкерчӗк» сӑвӑра лирикӑлла герой хӑйӗн ялти тантӑшӗсемпе вӑрҫӑ тухнӑ кун ӳкерттернӗ сӑнӳкерчӗке пӑхать. Вӗсем йышӗпех анӑҫа ӑсаннӑ, унта ялйыш, ҫӗршыв шанӑҫне тӳрре кӑларнӑ, анчах... хӑйсене упрайман. Хӑйсем ҫинчен шухӑшламан та вӗсем.

Эп вӑрҫӑран телейлӗ тухрӑм —
Эп ҫитрӗм Ҫӗнтерӳ кунне.
Аннӳсене курсан, ма юлтӑм
Тесе те пӑхрӑм хӑш чухне.

Вӑрҫӑ паттӑрӗсене поэт ҫеҫ мар, пӗтӗм ялйыш, пӗтӗм ҫӗршыв чыслӑн асӑнать.

Валентин Урташ поэзийӗн хӑйӗн уйрӑмлӑхӗсем пур. Вӗсем питӗ юрра ҫывӑх тӑраҫҫӗ. Сӑнарлӑ та сӗтеклӗ чӗлхе, вырӑнлӑ повторсемпе ӑнӑҫлӑ параллелизмсем унӑн сӑввисене асра юлмалла тӑваҫҫӗ.

Атте пачӗ мана вӗри вутлӑ чунне
Сынҫиен тӑшмана пӗтермешкӗн,
Эп тӑтӑм унпа урнӑ йытӑ умне,
Аттерен вӗренсе ҫӗнтермешкӗн.

Анне пачӗ мана мӑшӑр ҫӗмӗрт куҫне
Курайми тӑшмана ширамашкӑн.
Эпӗ каҫрӑм ҫӗрле ҫав тӑшманӑн хыҫне,—
Ҫук, пӗлместпӗр эпир хӑрамашкӑн.

Халӑх пачӗ мана ик патвар урине
Юнӗҫен тӑшмана йӗрлемешкӗн.
Эпӗ ҫитӗп унпа ҫут тӗнче хӗррине,
Халӑхран вӗренсе ҫӗнтермешкӗн.

Парти пачӗ мана хӑйӗн ҫивчӗ ӑсне
Ӗмӗрхи тӑшмана пӗтермешкӗн.
Ҫав вӑйпа эп кӗреп вутпа ҫулӑм ӑшне
Партирен вӗренсе ҫӗнтермешкӗн.

Валентин Урташ (Валентин Андреевич Яковлев) 1924 ҫулта, декабрӗн 20-мӗшӗнче, Тутар республикинчи Пӑва районне кӗрекен Раккасси ялӗнче ҫуралнӑ.

1941—1943 ҫулсенче Тӑван ҫӗршыв Аслӑ вӑрҫинче пулнӑ, йывӑр аманнӑ.

Хусанти «Хӗрлӗ ялав» хаҫат редакцийӗнче, Радиоинформаци комитетӗнче ӗҫленӗ.

1973 ҫулта вилнӗ.

«Юрӑран пӗр сӑмахне те кӑларса пӑрахаймӑн»,— тенӗ вырӑссем. Урташ сӑввисем пирки те ҫапла калама пулать. Унӑн сӑввисенче сӑмахпа сӑмах, йӗркепе йӗрке, строфапа строфа уйӑрлми ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ, авторӑн шухӑшне лайӑх уҫса параҫҫӗ. «Чапаев», «Ленин ҫинчен хунӑ юрӑ», «Ялавӑмӑр миршӗн ҫӗклентӗр», «Мир маршӗ», «Туслӑх юрри», «Сана юратрӑм», «Комсомол маршӗ», «Хӗр палӑкӗ», «Тухӑҫран хӑпарсан шурӑмпуҫ», «Прохор Иванов» тата ыттисем те ҫарпа патриотизм темипе ҫырнӑ лайӑх юрӑсен шутне кӗрсе юлчӗҫ.

В. Урташӑн «Пурӑнас килет» поэми — патриотизмла пафоспа ҫырнӑ произведени. Тӑван кил, тӑван ҫӗршыв— лирикӑлла геройӑн пӗр ӑнлану, вӑл вӗсемшӗн вута кӗрет, аманать, ҫапӑҫура орден илме тивӗҫ пулать.

Алексей Воробьев пултарулӑхӗнче те вӑрҫӑпа мир теми пысӑк вырӑн йышӑнать. «Салтак», «Йывӑр ҫул вӗҫӗ», «Вӑрҫӑра пуҫ хунисене», «Сӑмах тӗшши», «Ман манифест», «Пурнӑҫа юратни», «Анне канлӗхӗшӗн», «Ҫӗмӗрт» тата ытти сӑвӑсем хӑйсен чӑнлӑхӗпе, витӗмлӗхӗпе чуна тивеҫҫӗ, тарӑн шухӑша яраҫҫӗ.

Эп пӗчӗк ҫын, янравсӑр ятӑм.
Эп хапсӑнмастӑп нумая.
Ҫапах пӗлетӗп — мӗн вӑл атом,
Чухлатӑп атомри вӑя.

Ман пӗлмелле те: Сталинградӑн
Пуласлӑхне хӑтарнӑ кун
Хул ӳкрӗ хуҫӑлнӑ туратӑн,
Хама шӑварчӗ хамӑн юн,— тет вӑл.

Лирикӑлла геройӑн ашшӗ те виҫӗ вӑрҫӑра пулса Витебск патӗнче пуҫ хунӑ, хӑй те йывӑр аманнӑ. Ҫавӑнпа

та вăл ывăлĕ те пулин çавăн пек инкек-синкеке ан пĕлтĕр тесе тăрăшать, «Мирлĕ атом, эс халăха пуянлăх пар!» — тесе сăвăлать.

Алексей Александрович Воробьев 1922 çулхи октябрĕн 28-мĕшĕнче Вăрнар районĕнчи Мăн Явăшра çуралнă, Çĕрпӳри ялхуçалăх техникумĕнче, Мускаври Литература аслă курсĕнче вĕреннĕ. Вăрçăра аманнă.

1976 çулхи мартăн 31-мĕшĕнче вилнĕ.

Агроном, Чăвашрадио корреспонденчĕ, Чăваш писателĕсен Союзĕн литература консультанчĕ пулнă.

Воробьев сăмах хакне аван чухлатчĕ, çавăнпа унăн сăввисем тулли пучах пекех сулмаклă. Унпа пĕрле ялсенче пулатăн-и, рабочисем патне çитетĕн-и,— Воробьев сцена çине тухсан яланах халăха хăй актерла вуланипе мар, сăввисен сулмаклăхĕпе, шухăш хиврелĕхĕпе тыткăнлатчĕ. Ялсенче поэт «Çăкăр» сăвва вулатчĕ, вăрçă кунĕсене астăвакан çынсем вара ăна куççуль витĕр итлетчĕç. Эппин, çав йĕркесенче пурнăç чăнлăхĕ хăватлăн тапса тăрать.

Çĕн çăкăра çиме ларсан,
Асаилӳпе хĕрет ман чун.
Ан пултăр вăрçă тек нихçан!
Ан килтĕр урăх выçă кун!

Ку сăвă Воробьевăн пĕтĕм пултарулăхĕн лейтмотивĕ пек туйăнать. «Кипенек», «Йăмра» ,«Çĕрпӳ кĕперĕ» поэмăсене илетĕн-и, сăвă ярăмĕсене вулатăн-и,— поэтăн юнлă вăрçа хирĕç каланă татăклă сăмахне унта та, кунта та тĕл пулатăн. Пысăк ответлăх туйăмне куратпăр эпир çав йĕркесенче. Хальхи кунсемшĕн те, пуласлăхшăн та. Ахальтен мар ĕнтĕ поэта Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премине панă.

Прозăра та, поэзире те ĕçлекен Василий Алентей «Салтак çулĕ» ятлă поэма çырса пичетлерĕ. Ăна критика та, вулакансем те ырласа йышăнчĕç. «Унта совет салтакĕн паттăрлăхĕ, ырă кăмăлĕ, вĕри чун-чĕри витĕр курăнса тăрать, вăл Тăван çĕршыва юратма, миршĕн кĕрешме чĕнет. «Салтак çулĕ» поэмăн чĕлхи — сĕтеклĕ те афоризмлă» [1],— тесе хаклать Г. Хлебников критик Алентей поэмине.

Василий Алентей (Василий Степанович Алендеев)

---

[1] Чăваш совет литератури. Шупашкар, 1972, 433 стр.

Вăрмар районĕнчи Кĕтеснер ялĕнче 1919 çулта, октябрĕн 16-мĕшĕнче çуралнă. Вăтам шкултан, Партин Горькири шкулĕнчен вĕренсе тухнă.

1939—1942 çулсенче çарта пулнă, вăрçа хутшăннă.

ФЗО шкулĕн директор заместителĕ, район хаçачĕн редакторĕ, Чăваш кĕнеке издательствин редакторĕ, «Тăван Атăл» альманах редакторĕ пулнă.

Халĕ литература ĕçĕпе пурăнать.

Алексей Афанасьев та юлашки вăхăтра ăнăçлă ĕçлерĕ: сăвăсем те, поэмăсем те çырчĕ, прозăра та хăйĕн вăйне тĕрĕслесе пăхрĕ. 1943—1945-мĕш çулсенче çарта пулнăскершĕн патриотизм теми яланах çывăх тема пулнă. Çавăнпа та вăл çырнă «Çĕр çаврăнтăр», «Нумай-и кирлĕ этеме?», «Эс вилместĕн», «Курнах эсир...», «Пичче масарĕ», «Чул ан пулăр» сăвăсем мир манифесчĕ пек янăраççĕ.

Алексей Андриянович Афанасьев 1925 çулхи октябрĕн 19-мĕшĕнче Тутар республикинчи Павлă районне кĕрекен Тăмпарлă ялĕнче, учитель çемйинче çуралнă. Ялти вăтам шкулта, Пĕкĕлмери учительсем хатĕрлекен институтра вĕреннĕ.

1943—1945 çулсенче Тăван çĕршыв Аслă вăрçинче пулнă.

Район хаçатĕнче, учительте ĕçленĕ. Халĕ — писатель-профессионал.

Патриотизм пафосĕ уйрăмах «Вырăс капитанĕ» поэмăра вăйлă сисĕнет. Поэма сюжетне автор 1943-мĕш çулта çулла Германири Веймар хули çывăхĕнчи Ордруф ятлă артполигонра пулса иртнĕ ĕçрен илнĕ. Вырăс капитанĕ, тыткăна лекнĕскер, концлагерьте ларать. Нимĕçсем çĕнĕ снаряд хăватне танк çине персе тĕрĕслесе пăхасшăн. Çав танка тытса пыма вĕсем совет офицерне хушаççĕ. Капитан танк ăшне кĕрсе ларать те тăшман батарейине аркатса тăкать, унтан хĕвелтухăçнелле çул тытать. Бензин пĕтсен тин унăн танкран тухма тивет, вара ăна каллех нимĕçсем тыткăна илеççĕ, персе вĕлереççĕ. Çапла вара сехет хушшинче пирĕн салтак фашистсене темĕн чухлĕ сăтăр тăвать. Мĕн ку? Паттăрлăх. Совет çынни нимĕнле лару-тăрура та çухалса каймнни, тăшман йăвинче те тăван çĕршывшăн тăрăшни, çапăçни.

Георгий Орловăн «Экзамен», «Вилĕмрен те вăйлăрах» тата «Совет салтакĕ» поэмисенче совет халăхĕ Тă-

ван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫинче кӑтартнӑ паттӑрлӑхпа хӑюлӑх уҫҫӑн та витӗмлӗн сӑнарланнӑ.

Георгий Орлов (Егор Федорович Орлов) 1925 ҫулхи мартӑн 29-мӗшӗнче Шупашкар районӗнчи Туликкассинче, чухӑн хресчен килйышӗнче ҫуралнӑ. Иккассинчи вӑтам шкултан вӗренсе тухсан, 1943 ҫулта, фронта кайнӑ, ҫар службинче 1948 ҫулччен тӑнӑ. Партин аслӑ шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ.

Комсомол райкомӗнче, ҫар училищинче, Чӑваш кӗнеке издательствинче, «Ялав» журнал редакторӗнче ӗҫленӗ. Халӗ литература ӗҫӗпе пурӑнать.

Поэмӑсен тӗп шухӑшне вӗсен ячӗсемех аван уҫса параҫҫӗ. «Экзамен» поэмӑра вӑтам шкултан вӗренсе тухас ҫамрӑксем кунӗн-ҫӗрӗн кӗнеке вулаҫҫӗ, «историе те тарӑхаҫҫӗ, логарифмӑна та вӑрҫаҫҫӗ». Вунӑ ҫул хушшинче мӗн вӗреннине паян-ыран ҫӗршыв умӗнче кӑтартасскерсем, вӗсем кашниех ҫитӗнсе ҫитни ҫинчен аттестат илнӗ хыҫҫӑн хӑйсен ҫутӑ ӗмӗчӗсем туласси пирки шухӑшлаҫҫӗ. Пӗри агронома вӗренсе тӑван ҫӗр пуянлӑхне ӳстересшӗн, тепри заводра хӑватлӑ станок умне тӑрасшӑн, виҫҫӗмӗшӗ сӗм тайгара алмаз тупасса шанать. Анчах ҫак ырӑ ӗмӗтсене «вӑрҫӑ!» тенӗ усал хыпар татать, ҫамрӑксен вара ҫӗршыв умӗнче алри хӗҫпӑшалпа экзамен тытма тивет.

«Вилӗмрен те вӑйлӑрах» поэма идейине те тӳрех тавҫӑрса илме пулать: совет салтакӗ тӑван ҫӗршывшӑн хӑйӗн пурнӑҫне шеллемесӗр ҫапӑҫнӑ, тан мар тытӑҫура паттӑрсен вилӗмӗпе вилнӗ. Анчах унӑн юратӑвӗ хӑрушӑ вилӗмрен вӑйлӑрах: вӑл — халӑхӑн аслӑ ҫӗнтерӗвӗнче, ҫутӑ пуласлӑхра.

«Совет салтакӗ» поэмӑн тӗп шухӑшӗ те ҫавӑн майлах. Ҫуралнӑ еншӗн, аслӑ халӑхшӑн пӑхаттирле хӑюлӑхпа, юлашки юн тумламӗ юлмиччен ҫапӑҫакан салтак ҫинчен сӑмах пырать унта.

Вырӑссен паллӑ поэчӗ Сергей Орлов, Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫинче хӑй танкра ҫуннӑскер, ҫӗнтерӳ уявӗччен пурӑнайман паттӑр салтак пирки ҫапла ҫырать:

Его зарыли в шар земной,
А был он лишь солдат,
Всего, друзья, солдат простой,
Без званий и наград.

Ему как мавзолей
земля —

На миллион веков,
И Млечные Пути пылят
Вокруг него с боков.

Ку йĕркесен авторĕ, урăх пĕр сăвă çырман пулсан та, литературăшăн паллă çын пулса юлатчĕ, мĕншĕн тесен çак сăваплă, пысăк шухăша чăн-чăн поэт кăна çавăрса калама пултарать.

Александр Межировăн «Коммунисты, вперед!» сăвви пĕрремĕш хут пичетленсе тухнăранпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ, пурпĕрех çав хăватлă йĕркесен пĕлтерĕшĕ чакма мар, ÿссех пырать. Гражданлăх, партилĕх, халăхлăх — акă мĕн пĕтĕçтерсе тăрать лирикăлла манифеста. Мĕн тери хĕрÿллĕ публицистика!

Георгий Орловăн «визит карточкисем» — вăрçă темипе çырнă тарăн шухăшлă сăвăсем. Çав сăвăсенче те, поэмăсенче те эпир совет салтакĕн паттăр сăнарне уççăнах куратпăр. Анлă Атăл хĕрринче ÿссе çитĕннĕ Павел Силин радист-разведчик — йăрă, типтерлĕ, мĕн хушнине çиййĕнчех тăвакан хастарлă çын. Этемми анчах йывăр заданирен таврăннă-ха, унта аманнă майора вилĕмрен çăлса хăварнă, халĕ ăна каллех çĕнĕ приказ параççĕ: вăрçă, нимĕн те тăваймăн. Вара пирĕн Силин çав каçах фронт линийĕ урлă каçса каять, тăшман тылĕнчи сăртра окоп чавса пытанать, хамăрăннисемпе çыхăну тытма хатĕрленет, мĕншĕн тесен унăн тăшман мĕн тунине сăнамалла, вĕсене пĕтерме пулăшмалла. Генерал приказĕ çăмăл ĕç мар, анчах салтак тавçăрулăхĕ, чăтăмлăхĕ Силина чи йывăр вăхăтра та вăй-хал парать. Сăмахран, фашистсем вăл вырнаçнă сăртран инçе те мар, Павăла асăрхама та пултараççĕ, анчах разведчик тимлĕ, кун пек лару-тăрура ĕçлеме хăнăхнă. Эфирта «Амура», командир радиостанцине, чылай шырама тивет унăн, анчах приказа темĕнле пулсан та пурпĕрех пурнăçламаллине чунĕпе туйса тăракан салтак мĕн кирлине йăлтах тăвать, хамăрăннисене кирлĕ хыпарсем пĕлтерет.

Георгий Орлов хăйĕн сăввисемпе поэмисенче геройсен шалти кăмăл-туйăмне, шалти тĕнчине ăнăçлă кăтартнă. Эпир Павел Силин пĕвĕн çуллĕшне те, унăн сăнне те пĕлместпĕр, анчах унăн ĕçĕ-хĕлĕ тăрăх вăл мĕнле çын пулнине, вăл хăш çĕршывра çуралса ÿснине, унăн характерĕн психологилле уйрăмлăхĕсене аван курса тăратпăр. Çав уйрăмлăхсене поэт пысăк ăсталăхпа ÿкерсе панă.

Ахальтен мар ĕнтĕ поэт вăрçă çинчен çырнă поэмисемшĕн чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премине илчĕ.

Тăнăç пурнăçшăн кĕрешесси Георгий Ефимов поэтшăн та тĕп тĕллевсенчен пĕри пулса тăчĕ.

Георгий Андреевич Ефимов 1928 çулхи июлĕн 23-мĕшĕнче Канаш районĕнчи Антавăшра çуралнă. Авăспӳрт Кипечри вăтам шкулта, Мускаври А. М. Горький ячĕпе хисепленекен Литература институтĕнче вĕреннĕ.

Чăваш кĕнеке издательствинче, Чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕнче, «Ялав» журнал редакторĕнче ĕçленĕ.

Г. Ефимовăн лирикăлла геройĕ — çутă тĕллевлĕ, пысăк ĕмĕтлĕ çамрăк. Вăл çав ĕмĕт-тĕллеве пурнăçлассишĕн çине тăрса вĕренет, тăрăшса ĕçлет. Унăн шăпи тăван çĕршыв кунçулĕпе тӳрремĕнех çыхăннă. Пурнăç аталанăвне çав аслă çыхăнура кăтартни — поэтăн лайăх енĕ. «Мир декречĕ», «Тав аслă вырăс халăхне», «Туссемпеле çӳретпĕр Берлинта», «Çĕршывăмçăм, ытарайми кĕтесĕм» тата ытти нумай сăвăсенче эпир совет çыннисен арканми пĕрлĕхне, тăванлăхне, гуманизмне, вĕсем миршĕн кĕрешнине лайăх куратпăр. «Вилĕме çĕнтернĕ çын», «Çĕнтерӳ кунĕ. 1945 çул», «Çырусем», «Эп илтетĕп, утсем вирхĕнеççĕ...» сăвăсенче поэт совет çамрăкĕсен паттăрлăхне кăтартать. Çав паттăрлăх вăл темĕнле абстрактлă романтика мар, вăл — çĕнĕ пурнăç, çĕнĕ общество çуратса ӳстернĕ çĕнĕ ăнланулăх, çĕнĕ характер.

Поэт хăйĕн чылай произведенийĕсенче вăрçă тискерлĕхне, хăрушлăхне куç умне кăларать. Ку вăрçă курман ăрусене вут-çулăма хирĕç çирĕп тăма, хĕрӳ ĕçпе мире çирĕплетме хистет. Акă «Чĕре» сăвă. Бухенвальдри музейри спиртланă чĕре çинчен пырать унта сăмах. Ун витĕр пуля тухнă. Фашистсем, тĕл пеме вĕренес тесе, мишень вырăнне çын чĕрине суйласа илнĕ. Чĕре варрине лектерме пултаракансене укçа тӳленĕ. Акă епле хăрушă, тискер йăласем çуратнă фашизм.

Камăн чĕри вăл?
Пĕлме çук ăна
Тен, йĕкĕтĕн,
Тен, хĕрĕн,
Тен, ват çыннăн?
Тен, халь те юратушăн вăл çунать?
Туян вăл вăйлăн çиле хирĕç пынăн.

Тен, хӳтӗленӗ кӑкӑрпа тусне?
Тен, фашиста хӑлха чикки тыттарнӑ?
Ҫук,
Шеллемен вӑл хӑйӗн пурнӑҫне,
Вӑл пурнӑҫшӑн хӗрӳ юнне юхтарнӑ.

Поэт ҫынсене пӗр шелсӗр пӗтерекен вӑрҫа ылханать, миршӗн кӗрешме чӗнет. Этемлӗх ырӑ ӗмӗтсемпе пурӑнать, ҫын ҫӗр ҫине ырӑ курма ҫуралать. Анчах капитал тӗнчи ялан вут тивертесшӗн ӑшталанать. Эппин, пирӗн, ҫутӑ тӗллевпе, ырӑ шухӑш-кӑмӑлпа пурӑнакансен, вут-кӑвар ҫулне пӳлмелле.

Пуля шӑтарнӑ ҫын чӗри нихҫан
Ан пултӑрччӗ музей таврашӗнче.
Илем кӳрсе вӑл хамӑр пурнӑҫа
Тек таптӑр пирӗн вут кӑкӑрсенче,—

тесе пӗтӗмлетет поэт хӑй шухӑшне.

Утмӑлмӗш ҫулсен вӗҫӗнче Чӑваш халӑх поэчӗ П. Хусанкай «Ҫӗрте те ҫӗрместпӗр» поэма ҫырчӗ. Ӑна автор Совет Ҫарӗн 50 ҫулне халалланӑ.

Произведени геройӗсем — ҫамрӑк совет республикине хӳтӗлесе ҫапӑҫӑва кӗрекен салтаксем. Вӗсем — тӗрлӗ халӑх ывӑлӗсем: Прахвур Ивановпа Аристарх Антонов — Элӗк тӑрӑхӗнчи чӑвашсем, Ахметпа Гилемзят — тутарсем, Владимир Юрин — вырӑс, Тарасенко — украинец... Ҫук пурнӑҫпа ӳснӗ ҫамрӑксене пӗр тӗллев хавхалантарать: революцие хӳтӗлемелле, пусмӑр тӗнчине аркатмалла, ирӗклӗхе ҫӑлса хӑвармалла. Чухӑнсене совет влаҫӗ кӑна ӑнланать, вӗсене ҫын шутне хурать, вӗренсе куҫа уҫма пулӑшать. Прахвур ҫарта комсомола кӗрет, унӑн тавракурӑмӗ ӳсет, шухӑш-кӑмӑлӗ пиҫӗхсе ҫирӗпленет. П. Хусанкай Прахвурпа Владимир Юрин хушшинчи кӗске калаҫӑва питӗ витӗмлӗ ҫырса кӑтартнӑ. Ҫав диалог ҫамрӑксен ӗмӗт-тӗллевне лайӑх уҫса парать. Килти ҫинчен асилкелесе калаҫса ларнӑ май вырӑспа чӑваш ҫӗршыври ҫӗнӗлӗхсем ҫине ҫитсе каяҫҫӗ. Прахвур юлташне Чӑваш автономийӗ йӗркеленни, чӑвашсем те малашне ытти мӗнпур халӑхсемпе пур енчен те пӗр тан праваллӑ халӑх пуласси ҫинчен хӗпӗртесе пӗлтерет. Ҫак йӗркене салтаксем чунтанах ырлаҫҫӗ. Акӑ мӗнле пӗтӗмлетет калаҫӑва Владимир Юрин:

«Саламлатӑп,— тет Владимир,—
Ленин... вӑл — аташ-ха ман.

Буржуйсем памастчĕç ĕмĕр
Автономи никама!

Пĕтĕм пролетариатшăн,
Ирĕк халăхушăн та
Арăслан пек çапăçмашкăн
Тивĕçӳ сан пур кунта».

Чăнах та, арăслан пекех çапăçаççĕ вара Кăнтăр фрончĕн салтакĕсем революцин виççĕмĕш çулĕнче. Фрунзе ертсе пынипе, вырăнти çынсем пулăшнипе вĕсем Сиваш пырĕ урлă паттăррăн каçса Перекопа ярса илеççĕ. Анчах... тăшмана çĕнтерсе тăван яла таврăнасси çинчен ĕмĕтленекен Прахвур Иванов купăсçă шыврах выртса юлать, çĕнĕ пурнăçшăн çапăçса пуçне хурать. Çапла паттăр чăваш тăварлă шывра вунпилĕк çул выртать, чиперех упранать. Кĕсйинчи хут тăрăх ун ятне-шывне те пĕлеççĕ. Çапла, тет автор, эпир, çĕр çинчи чи пархатарлă шухăшпа хавхаланнă çынсем, вутра та çунмастпăр, шывра та путмастпăр, çĕрте те çĕрместпĕр. «Поэма — телей çĕршывĕшĕн çапăçса вăхăтсăр пуç хунă салтаксен ячĕпе лартнă хисеплĕ палăк, чĕррисемшĕн тесен, вăл хамăр кĕрешсе çирĕплетнĕ социализмла çĕршыва куç шăрçи пек упрама вĕрентет, уншăн таса кăмăлпа тăрса, кирлĕ чух кĕрешмелле пулсан, хастарлăн кĕрешме чĕнет» [1],— тесе çырчĕç ку поэма пирки Н. Дедушкинпа Илпек Микулайĕ.

П. Хусанкайăн ытти мĕнпур произведенийĕсенчи пекех, ку поэмăра та эпир унăн чĕлхин пиçĕлĕхне куратпăр. Автор хăй çырса кăтартакан кашни пулăма сăнласа пама, «Таня» поэмăри евĕрлех, уйрăм виçе тупать. Умĕн каланинче вăл, сăмахран, мăнаçлăн илтĕнекен анапестпа усă курнă, ялти пăтравлă вăхăта лайăхрах кăтартма пĕр пусăм анапестлă, икĕ пусăм ямблă виçе суйласа илнĕ, хаваслă тапхăра сăнланă чух сăвва тăватă пусăмлă хорейпа калăпланă. Шухăша тивĕçлĕ форма суйласа илни произведени пахалăхне тата çӳлерех çĕклет.

1975 çулта совет халăхĕ хăй Тăван çĕршыв Аслă вăрçинче фашистла Германие çĕнтернине анлăн паллă турĕ. Чаплă Çĕнтерӳ юбилейне ĕççыннисем производствăри çитĕнӳсемпе, планпа пăхнинчен ытларах ырлăх-пурлăх

---

[1] *Н. Дедушкин.* Кунçул уттипе. Шупашкар, 1975 çул, 136 стр.

тунипе кётсе илчёç. Паллах, пётём совет çыннисемпе пёрле чăваш поэчёсем те уяв ячёпе çёнё произведенисем çырса пичетлерёç. Чăваш халăх поэчё А. Алка «Вăтăр çултан» ятлă поэма кăларчё.



А. Алкан «Вăтăр çултан» поэмин пёр строфин фотокопийё.

Ку поэма — иртнё вăрçă çинчен. Автор хăй шухăшне уçса пама лайăх мел тупнă: унăн лирикăлла геройё хăй çапăçнă вырăнсене çитсе курма шут тытнă. Пёр илемлё кун вёсем ывăлёпе иккёшё йăлтăркка самолет çине ларса инçе çула тухаççё. Хăй вăтăр çул каялла çӳренё сукмаксене, хăй чавнă окопсемпе траншейăсене, хăй юн юхтарса выртнă вырăнсене ветеран, паллах, тупаймасть, халь çёрё-шывё пур çёрте те сад пахчи пек ешерет. Анчах хăрушă çапăçусен йёрё халăх асёнче, унта та кунта чёрё çын пек ларакан палăксенче. Лирикăлла герой тăшманпа малтанхи кунран пуçласа юлашки сехетченех çапăçнă, Мускава хӳтёленё, Сталинградшăн тытăçна,

Киева ирĕке кăларнă çĕре хутшăннă, чикĕ урлă каçсан, ют çĕршыв çыннисене Гитлер пусмăрĕнчен хăтарнă, рейхстага штурмланă çĕре хутшăннă. Çавăнпа та ветеран асаилĕвĕсем интереслĕ, куç умне вăл мĕн калани вăрçă вăхăтĕнчи пекех сăнарлăн тухса тăрать.

Фашистсем кайран мĕн пуласса шутламасăр алхасаççĕ. Çынĕ те çын мар вĕсемшĕн, хули те хула мар. Пурне те аркатаççĕ, çунтараççĕ, çаратаççĕ. Совет салтакĕ Роман Игнатов анăçалла утнă май хăйсен ялĕ витĕр тухать. Анчах... кунта халĕ кăмрăк, кĕл кăна. Çурт-йĕр-сĕр, килйышсăр тăрса юлнă салтак малтан хурлăхлăн пуçне усать, унтан ирсĕр чуниллисене пуриншĕн те тавăрма тепĕр хут тупа тăвать. Вăл пăхаттир пек çапăçать, Днепр урлă каçнă чухне хăйĕн паттăрлăхĕпе чапа тухать.

Лирикăлла герой Хĕвеланăç Украинăри пĕр ялта вăрçăччен çар службинче тăнă, хаяр çапăçусем вăхăтĕнче вăл ăнсăртран унти палланă ватăпа курнăçнă. Акă мĕнле калаçу пулса иртет вĕсем хушшинче:

— Аçта карчăку сан, Михайло? —
Эп ыйтрăм унтан хальхинче.
— Ăна та çулма вилĕм хăйнă,
Тăпри ишлĕк çурт айĕнче.
— Ыйтнишĕн каçар. Астăватăп,
Маттур ывăлу пурччĕ сан.
(Лăнк сĕнкрĕ пуçне аслă ватă):
— Вĕлерчĕç çакса. Партизан.
— Чипер çеç кинӳ пурччĕ санăн.
— Кунта ĕç тытас вăхăтра,
Чура шăпине ман Оксана
Тӳсет-тĕр ылханлă ютра.
— Ик пĕчĕк ача пурччĕ сирĕн,
Сиксе вылякан мăнуксем?
— Каймаççĕ куçран каçăн-ирĕн.
Йĕретĕп аса килнĕçем:
Пĕрне çăл тĕпне пăрахайрĕç,
Пăрахрĕç вута тепĕрне...—
Пит тăрăх куççуль юхса кайрĕ,—
Шăлмарĕ ват çын ун йĕрне.

Çапла, мĕн чухлĕ инкек-нуша кӳмен пулĕ фашизм ĕç тĕнчине? Çĕр çинче чи çынлăхлă, чи пархатарлă ĕмĕтшухăшпа пурăнакан халăх кăна çав хура вилĕме хирĕç тăрать, ăна пăвса пăрахать.

Поэма тарăн шухăша ярать. Геройпа пĕрле эпир совет халăхĕн вăрçăри çĕнтерӳ çулне йĕрлесе тухатпăр,

хамăра çапăçури çынсемпе юнашар тăратса пăхатпăр, малашлăх çинчен ĕмĕтленетпĕр.

«Вăтăр çултан» поэма — миршĕн кĕрешме, çав хушăрах çĕршывăмăр хăватне тĕреклетме, çирĕплетсе пыма чĕнекен произведени. Самолет çинче ларса пыракан ывăл ача ашшĕ асаилĕвне ним сиктермесĕр итлесе пырать. Çук, ăна çапăçу романтики çеç интереслентермест. Вăл Тăван çĕршыв çинчен шухăшлать, аслă ăрусен паттăрлăхне ăша хывать.

Тутар республикинче çуралса ӳснĕ Михаил Захаров вунсаккăртах вута кĕнĕ, тăватă хутчен йывăр аманнă, çичĕ хутчен правительство наградине илме тивĕç пулнă. Çĕнтерӳ çулĕпе паттăррăн утнă поэт Вена патĕнчи пĕр хаяр тытăçура каллех аманать, хальхинче унăн икĕ куçĕ те ĕмĕрлĕхех курми пулса ларасçĕ. Анчах Захаров пуçа усса хурланса лармасть, сăвăсем çырма тытăнать. 1948-мĕш çулта унăн «Вăрçăра вилнĕ тусăма» балладии çапăнать. Унтанпа Михаил Захаров литературăра тăрăшсах ĕçлет, 1971-мĕш çулта вăл Чăваш кĕнеке издательствинче хăй сăввисен «Юрла, чĕрем» ятлă пĕрремĕш пуххине пичетлесе кăларчĕ. «Салтак», «Ылхан вăрçа, ылхан!», «Вунсаккăрти çулла», «Çунат усмарăм» сăвăсене лăпкăн вулама çук: вĕсенче — вăрçă хăрушлăхĕ, инкек-синкекĕ. Ирĕклĕхшĕн вăрçа çĕкленнĕ халăх пурне те тӳсет, анчах пуçа усмасть, выçă куçлă тăшмана хĕснĕçем хĕсет. Оптимизм — Захаров сăввисен паллă уйрăмлăхĕ.

Кунçулăма тĕтре ан хупăрлатăр,
Инкек-синкек ан хуçтăр кăмăла.
Юрла, чĕрем, юрла, пул чăрсăр, паттăр,
Ан парăн эс нимле çил-тăвăла!—

тесе палăртать поэт хăйĕн пурнăç тĕллевне.

Александр Галкин пултарулăхĕ, тĕпрен илсен, сатирăпа юмор тата юрă жанрĕпе çыхăннă. Поэт гражданла лирикăра та ăнăçлă ĕçлет.

Александр Алексеевич Галкин 1928 çулхи февралĕн 12-мĕшĕнче Элĕк районĕнчи Чулкаç ялĕнче çуралнă. Калининăри педагогика училищинче, Чăваш педагогика институтĕнче вĕреннĕ.

КПСС Чăваш обкомĕн инструкторĕ, Чăваш кĕнеке издательствин главнăй редакторĕ пулнă. Халĕ — «Тăван Атăл» журналăн главнăй редакторĕ.

Эпир çул уçнă,
Заводсем çĕкленĕ,
Çут çăлтăр çутнă ĕмĕр-ĕмĕре.
Вута кĕрсе,
Вут-тăвăла çĕнтернĕ,
Хăварнă сыхласа тăван çĕре,—

тет поэт. Эпир чура пулман, пулас та çук, эпир тăшман умне чĕркуçленме çуралман. Çак шухăш унăн чылай сăввисенче, «Атте шинелĕ» поэмăра та палăрать.

«Утнăçемĕн уçăлать çул-йĕр» поэмăра А. Галкин вăрçă совет çыннисемшĕн пысăк тĕрĕслев пулни çинчен калать. Халăхăмăр вăрçăра шухăш-кăмăл енчен çирĕпленсе, пиçĕхсе, аслă партиййĕмĕр тавра тата анлăрах пĕтĕçрĕ,— акă мĕнле шухăша тĕпе хунă сăвăç.

Юрий Петров ачасене валли «Комсомол билечĕ» поэма çырчĕ, унта çамрăк комсомолецăн паттăрлăхĕ çинчен каласа пачĕ. Ку поэма вăтам çулхи шкул ачисене тăван çĕршыва юратма вĕрентес ĕçре усăллă, пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Юрий Петрович Петров 1936 çулхи августăн 18-мĕшĕнче Красноармейски районĕнчи Еншик Чуллăра çуралнă. Красноармейскинчи вăтам шкулта, Шупашкарти И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен педагогика институтĕнче, А. М. Горький ячĕпе хисепленекен Литература институтĕнче вĕреннĕ.

Райхаçат редакцийĕнче, республикăри А. М. Горький ячĕпе хисепленекен тĕп библиотекăра, Чăваш кĕнеке издательствинче, «Пионер сасси» хаçат редакцийĕнче, Чăваш АССР Культура министерствинче ĕçленĕ. Халĕ— «Тăван Атăл» журнал сотрудникĕ.

Юрий Петров пейзажлă ÿкерчĕксем тума ăста. Çав сăнлăхсене вăл çынсен ăшри кăмăл-туйăмĕпе лайăх çыхăнтарать, произведенисене гражданла витĕм парать. Акă «Хурăн» легенда. Çапăçу хирĕнче йывăр аманнă совет офицерĕ выртать. Унпа юнашарах шурă хурăн, вырăс çĕрĕн илемĕ. Хурăн та аманнă: унăн снаряд тивнĕ тураттинчен шăпăртатсах сĕткен юхать. Фашистсем çывхарсан, хурăн хăй айĕнчи салтака ешĕл тураттипе хуплать, сиплĕ шыв ĕçтерет.

Çупăрлать ăна пĕр хушă
Çамрăк çын. Тухать куççуль.
Вырăс хурăнĕ халь уншăн
Хăйĕн амăшĕ пек пуль.

Тутăрпа çыхать вăр-варрăн
Вăл шур хурăн суранне,
Арăслан пекех хастаррăн
Ыткăнать тăшман çине.

«Çăлтăрсем шыва кĕреççĕ» тĕрленчĕкре поэт пирĕн паттăр та мухтавлă ентешĕн Совет Союзĕн космонавт-летчикĕн, авиаци генерал-майорĕн, икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕн А. Г. Николаевăн ялти çамрăклăхĕ çинчен, тăван тавралăх çынна кирек ăçта çитсен те чĕрĕ вăй-хал пани, умри тĕллев патне сулмаклăрах утма хавхалантарни çинчен çырать.

Павел Васильев сăвăç (1931 çулта çуралнă) икĕ кĕнеке кăларчĕ. Пĕрремĕшĕ — «Салтак чĕри», иккĕмĕшĕ — «Çул пуçламăшĕ». Ячĕсенченех паллă — ку кĕнекесем иккĕшĕ те çарти пурнăç çинчен. Анчах Васильевăн хăйĕн уйрăмлăхĕ пур: вăл паянхи кун, мирлĕ вăхăтра çĕршыв чиккинче тăракансен пурнăçне, çарпа политика вĕренĕвне сăнлать. Акă мĕнле курать вăл хуралта тăракан совет салтакне:

Бронзăран шăратнă палăк пек
Хускалмасăр вăл постра тăрать.
Каска айĕн çивчĕ куçĕпе
Таврари уй-хирсене сăнать.

Аллинче ун йывăр автомат,
Хыçĕнче — çĕршывăмăр-анне.
Тухтăр кутсăр-пуçсăр çил-тăман —
Хураллать вăл халăх пурнăçне.

Çамрăк-ха вăл. Вăрçăра пулман.
Вăл çитмен таçти ют çĕрсене.
Анчах ирсĕр тăшмансем тухсан,
Хăй вăйне кăтартĕ тĕнчене.

Хальхи совет салтакĕ вăрçă вăхăтĕнчи салтакран чылай уйрăлса тăрать. Унăн аллинче — пачах урăхла, кăткăс та çĕнĕ техникăпа хĕçпăшал, тата салтакĕ хăй те çичĕ класс çеç пĕтернĕ çын мар, ятарлă вăтам е аслă пĕлӳ илнĕ çамрăк. Вăрçăра тăшмана хĕçпăшал хăвачĕпе кăна çĕнтерме пулать. Апла-тăк çав хĕçпăшала салтакăн пилĕк пӳрнене пĕлнĕ пекех пĕлмелле. Çак чăнлăха паянхи салтак аван ăнланать, кăткăс хĕçпăшала çине тăрса вĕренет. Вĕренӳре йывăр килсен, çапăçура çăмăл пулĕ.

П. Васильев сăввисенче эпир çĕнĕ сăрăсем, çĕнĕ сăнлăхсем куратпăр. Пурте вĕсем Совет çарĕн иксĕлми хăвачĕ çинчен калаççĕ.

Тăрать салтак çыр хĕрринче,
Ракета щичĕ çумĕнче,—

тет вăл. Паллах, çакна вăтăрмĕш çулсенчи сăвăçсем çырайман пулĕччĕç, мĕншĕн тесен вĕсен вăхăтĕнче унашкал хĕçпăшал пулман.

Совет салтакĕн шухăш-кăмăлĕ пысăк ăнланулла, мораль тĕлĕшĕнчен çирĕп, политика енчен — пиçĕхнĕ. Вăл кирек епле лару-тăрура та çухалса каяс çук. Çакна эпир Васильевăн «Хуралта», «Поход хыççăн», «Тревога», «Командир» тата ытти сăввисенче те уççăнах куратпăр.

Павел Васильевăн лирика сулăмĕ вăйлă. Шухăша уçса панă чухне вăл интереслĕ детальсемпе усă курать. Акă «Ленин сăнĕ» сăвă. Механик-водитель танк ăшне Ильич сăнĕ вырнаçтарнă.

Эп ун сăнне таçта та курнă,
Халь куртăм башня ăшĕнче.
Тăрать Ильич — вăл пирĕн пурнăç —
Мухтавлă броневик çинче.

Вăл сылтăм аллине çĕкленĕ,
Механике çул кăтартса.
Вут-тăвăлра çӳренĕ Ленин
Экипажа вăй-хал парса.

Çĕнĕ шухăш, ăна автор çĕнĕлле уçса панă.

Совет салтакĕсем çĕршыва чунтан параннине, вăл чĕннипе кирек хăш самантра та вут-çулăма кĕме хатĕррине Павел Васильев чылай сăвăра тата «Çуралнă çĕршывăма» поэмăра тулли кăтартнă.

Иртнĕ вăрçă, аслă ăрусен паттăрлăхĕн пĕлтерĕшĕ çинчен анлăн, пысăк масштаблăн шухăшланине эпир литературăна нумаях пулмасть кĕнĕ Юрий Айдаш, Мария Волкова, Михаил Сениэль, Владимир Харитонов, Вениамин Тимаков, Анатолий Юман, Порфирий Афанасьев, Николай Теветкел, Энтип Ваççи, Петр Эйзин тата ыттисен пултарулăхĕнче уççăн куратпăр. Асăннă авторсем пурте вăрçă çулĕсенче е вăл пуçланиччен кăшт маларах çуралнă, вĕсен ачалăхĕ пĕтĕм совет халăхĕ хаяр тăшманпа кĕрешнĕ вăхăтпа, чăваш ялĕсенчи хĕрарăмсемпе ачасем те хăйсем çинчен шутламасăр, фронта ытларах пулăшас тесе тăрăшнă тапхăрпа пĕр килнĕ. Чылайăшĕсен ашшĕсем, пиччĕшĕсем, çывăх тăванĕсем киле таврăнайман, çапăçу хирĕнчех пуçĕсене хунă. Çавăнпа та ашшĕсемпе ывăлĕсем хушшинчи çыхăну, аслисем пуçланă

çула малалла уçса пырасси, тăван çĕршыв умĕнчи таса тивĕçе яланах чыслăн пурнăçласси çинчен çак ăрури поэтсем витĕмлĕрех те курăмлăрах çырчĕç. Юрий Айдашăн лирикăлла геройĕ, сăмахран, («Çĕрлехи тĕлпулу» поэма) шухăшра вăрçăран таврăнман ашшĕпе тĕл пулса этемĕн пурнăçри вырăнĕ, тивĕçĕ, тĕллевĕ çинчен калаçать. Çак аслă диалогра эпир ăрусем хушшинчи çыхăнăва, пурнăç аталанăвне куратпăр.

Г. Чаржов сăввинче çамрăк рабочи хăй ĕçне-хĕлне ашшĕ киле хăварнă сехет тĕрĕслĕхĕпе виçсе пахалать, В. Тимаков сăввинче ашшĕсĕр юлнă çемье кашни апат çимессеренех ашшĕ ларнă вырăн тĕлне унăн тĕрĕллĕ кашăкне хурать... Çухатусем, чăнах та, калама çук йывăр, анчах çĕнтерӳшĕн пуç хунă паттăрсен çутă сăнарĕ, ырă ячĕ пире вĕсем пуçарнă ĕçшĕн кĕрешме чĕнет.

Çамрăксен поэзийĕнче эпир совет çыннисем вăрçа татăклăн сивленине, çĕршыва аталантарассишĕн, мире çирĕплетессишĕн хастар ĕçленине куратпăр.

Хĕрарăмсем пире çуратнă самантра
Мĕн-мĕн çинчен шутлаççĕ-ши сисмен хутран?
Пĕр шухăшне пĕлме пулать пĕр йăнăшми:
**Ан пултăр, теççĕ, вăрçăра çын йынăшни.**

Хĕрарăмсем пире ӳстернĕ вăхăтра
Мĕн-мĕн çинчен шутлаççĕ-ши сисмен хутран?
Пĕр шухăшне туйма пулать яр-уççăнах:
Çĕре ан кĕччĕр, теççĕ-çке яш пуççăнах.
(А. Дмитриев, «Хĕрарăмсемпе салтаксем».)

Асран кайми кĕтес! Ыр кăмăлна-и манăп,
Ылханĕ-и мана асаттесен тăпри?
Çук, çук! Чĕрçӳ çинчех юп курăп, асапланăп,—
Эс пулăн яланах пурнăçăмра тĕпри.
(Ю. Айдаш, «Тăван çĕршывăма».)

Çак ăрури поэтсем хăйсен шухăшне витĕмлĕрех уçса пама çĕнĕ сăрăсем, çĕнĕ формăсем шыраççĕ. Çав шырав ăнăçлă пырать. Асăннă сăвăçсен кĕнекисене вулакансем те, литература критики те кăмăллăн йышăнчĕç, лайăх хак пачĕç. «Юлашки тапхăрта пирĕн поэзие çамрăк вăй, хастар та шанчăклă хунав хутшăнчĕ, кашнин хăйĕн сăнĕ, чĕлхи, илемлĕх эрешĕ, манерĕ-евĕрĕ, кĕвви, ритмĕ палăрчĕ»,— тенĕччĕ Чăваш халăх поэчĕ Стихван Шавли.

Салтак теми поэзире малтанхи утăмсем тăвакансен пултарулăхĕнче те аталансах, вăй илсех пырать. Васи-

лий Эктел, Александр Ильин, Нина Артемьева тата ытти çамрăк сăвăçсем çĕршыв хуралĕнче тăракансем, вĕсен тимлĕхĕ, шухăш-кăмăлĕ çинчен чылай çырчĕç, хăйсен тантăшĕсен сăнарĕсене ӳкерчĕç.

Çапла вара, юлашки çулсенче чăваш совет поэзийĕн сасси палăрмаллах çирĕпленчĕ, çĕнĕ ятсем хутшăннă май унăн ăсталăхпа илемлĕх мелĕсемпе меслечĕсем те çĕнелсе, пуянланса пычĕç.

## ПĔТĔМЛЕТСЕ КАЛАНИ

Октябрьти Социализмлă Аслă революци хыççăн чăваш литератури те тăванла совет халăхĕсен нумай чĕлхеллĕ, пĕр тĕллевлĕ литературисем хушшинче хăйне тивĕçлĕ вырăн тупрĕ, нумай нациллĕ социализмла реализм литературин уйрăлми пайĕ пулса тăчĕ. Хăйĕн ӳсĕмĕнче вăл халăх кунçулĕнчи историлле пысăк улшăнусемпе çĕнĕлĕхсене туллин те витĕмлĕн кăтартса пычĕ.

«Чăваш совет литературин чи палăрса тăракан енĕсенчен пĕри — халăх тата патшалăх интересĕсемпе тачă çыхăнса тăни, совет обществин вĕресе тăракан, нумай енлĕ пурнăçне, пирĕн самана тĕп геройĕн — совет этемĕн ĕçне-хĕлне, кăмăл уйрăмлăхĕсене, шухăш-туйăмне литература ăсталăхĕ çĕкленнĕ хавалпа ĕненмелле те витĕмлĕ сăнаса пама тăрăшни. Çак çĕнĕлĕх — литература халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнса тăни — чăваш халăхĕн çĕнĕ, социализмла пурнăç условийĕсенчен, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ пирĕн пурнăçра ертсе пыракан вăй пулса тăнинчен килет»,— тесе пĕтĕмлетнĕ М. Я. Сироткин литературовед чăваш совет литературин çур ĕмĕрхи аталанăвне.

...Шухăшласа пăхатăн та, куç умне чăваш поэзийĕнчи вуншар, çĕршер патвар сăнар тухса тăрать: унта — Çĕн Кун аки тăвакансем, И. Ахахăн часовойĕ, С. Элкерĕн Иссипе Левенĕ, Иван Смирновĕ, Хусанкайăн харсăр Тани, Прахвур Ивановĕ, «Аптраман таврашĕнчи» паттăрсен йышĕ, Я. Ухсай, А. Алка, И. Тукташ, В. Бараев, Уйăп Мишши салтакĕсем, А. Ĕçхĕлĕн вут-кăварлă ăмăрткайăкĕ, Г. Орловăн парта хушшинчен тухса тӳрех вăрçа ыткăнакан комсомолецĕсем, паянхи кăткăс приборсем умĕнче ларакан вичкĕн куçлă ракетчиксем... Çĕршывăн хастар ачисем, тесе калас килет вĕсем çинчен Çеçпĕл сăмахĕпе.

10 пус.